К 81 Чув-3
С 42
Ч-39491

М. И. СКВОРЦОВ

# ЧӐВАШ ЛЕКСИКОГРАФИЙӖ

Вӗренӳ пособийӗ

Шупашкар — 1985

ациональная библиотека ЧР
4-039491

# ТУПМАЛЛИ

Кӳртӗм . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

I СЫПАК. Чӑваш лексикографийӗн кӗске историйӗ . . . . . 5
1 §. XVIII ӗмӗрти тата XIX ӗмӗрӗн пӗрремӗш ҫурринчи словарьсем . . . . . . . . . . . . 5
2 §. XIX ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫуррипе XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнчи словарьсем . . . . . . . . . . . . 14
3 §. Совет влаҫӗн малтанхи вунӑҫуллӑхӗсенчи словарьсем 21
4 §. В. Г. Егоровӑн «Чӑвашла-вырӑсла словарӗ» . . 30

II СЫПАК. Н. И. Ашмаринӑн «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки» . . . 41
1 §. Словаре хатӗрленин историйӗнчен . . . . . 41
2 §. «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки»—тезаурус словарь тӗслӗхӗ 44
3 §. Словарь статйисен тытӑмӗпе содержанийӗ . . 61

*Хушса панисем*

Н. И. Ашмарин. Кое-что о словаре (Кӗскен словарь ҫинчен) . . 72
Н. И. Ашмарин. Чӑваш словарьне пухса хатӗрлемелли программа 75

К 81 чув-3
С 42

РСФСР Аслă тата ятарлă вăтам пĕлÿ министерстви

И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕ

М. И. СКВОРЦОВ

# ЧĂВАШ ЛЕКСИКОГРАФИЙĔ

Вĕренӳ пособийĕ

Ивана Павловича — автортан

26/XI-85

Шупашкар — 1985

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

Скворцов М. И. Чувашская лексикография: Учеб. пособие. Чебоксары: Изд. Чуваш. ун-та, 1985. 76 с.

В пособии, составленном в соответствии с утвержденной программой, излагается краткая история словарного дела в Чувашии, начиная с первых рукописных словарей XVIII в. и кончая фундаментальным 17-томным «Словарем чувашского языка» Н. И. Ашмарина. В связи с этим приводятся необходимые сведения по теории и методике лексикографии, кодификации норм литературного языка и терминологии.

Пособие рассчитано на его использование при изучении курсов «Чувашская лексикография» и «История чувашского литературного языка», при выполнении курсовых и дипломных работ, в научно-исследовательской деятельности студентов и аспирантов.

Предназначено для студентов дневного и заочного обучения отделения родного языка и литературы (специальность 2002), специализирующихся по чувашскому языку, журналистике и библиотечному делу.

Отв. редактор: докт. филол. наук, профессор *Н. П. ПЕТРОВ.*

Рецензенты: кафедра методики начального обучения Чувашского гос. пед. института, зав. кафедрой докт. филол. наук, профессор *Л. П. СЕРГЕЕВ;* канд. филол. наук, ст. научн. сотр. НИИ ЯЛИЭ при Совете Министров Чувашской АССР *М. Ф. ЧЕРНОВ.*

ПРОВЕРЕНО
2010 16 МАР 2017

Ч-33491

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

©Чувашский государственный университет, 1985 г.

# ҪЎРТЕМ

Лексикографи — чĕлхе пĕлĕвĕн словарьсем хатĕрлес ĕҫ теорийĕпе меслечĕсене тишкерекен пайĕ, ҫавăнпа пĕрлех ку пĕлтерĕш картине словарь йышши кĕнекесем, пособисем ҫырса хатĕрлес ĕҫĕ хăй те кĕрет. Терминăн тепĕр пĕлтерĕшĕ — словарьсен пур пек фончĕ, словарьсен пуххи. Ҫавăнпа та «чăваш лексикографийĕ» тенĕ чухне наука ĕҫĕ-хĕлĕн тивĕҫлĕ сферине те, ку таранччен тухнă тĕрлĕрен чăваш словарĕсене те асра тытатпăр.

Чĕлхе пĕлĕвĕн ытти нумай терминĕсем пекех, *лексикография* — грек тымарĕсенчен тăракан сăмах. Халиччен унăн этимологине ҫапла ăнлантарнă: *лексикон* 'словарь' + *графо* 'ҫыратăп'. Анчах юлашки вăхăтра унăн пулăвне урăхларах ăнлантараççĕ: *лексикос* 'сăмах -ĕ/-и' (вырăсла 'словесный') + *графо*[1]. Ҫапла шутлани тĕрĕсрех пулĕ, *лексикология* термин та ҫав модельпех пулнă.

Наукăра йышăннă классификаципе килĕшӳллĕн словарьсене икĕ тĕп ушкăна уйăраççĕ: энциклопеди словарĕсем тата чĕлхе словарĕсем. Энциклопеди словарĕсенче япаласем, ҫынсем ҫинчен, пĕр сăмахпа каласан, пурнăҫри пур тĕрлĕ объектсем ҫинчен каласа-ăнлантарса пăраççĕ. Чĕлхе словарĕсен (вĕсене урăхла лингвистика словарĕсем те теççĕ) объекчĕ — чĕлхе единицисем. Пирĕн кĕнекере сăмах чĕлхе словарĕсем ҫинчен пырать. Энциклопеди словарĕсем хатĕрлесси вара — чĕлхеҫĕсен задачи мар, вăл ĕҫе тивĕҫлĕ наукăсен, производствăпа культура отраслĕсен специалисчĕсем туса пыраççĕ. Чĕлхе словарĕсенчи энциклопедилĕх элеменчĕсем ҫинчен кĕнекен тивĕҫлĕ страницисенче каланă.

Культура аталанăвĕнче словарьсем пысăк вырăн йышăннине ученăйсем, культура деятелĕсем тахҫанах палăртнă. Словарьсем халăх ăстăнĕ сăмахлăхра пухса упранă пĕлӳсене, ҫынсен тĕнчекурăмĕпе идеалĕсене нимрен лайăхрах уҫса параççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ чаплă француз писателĕ Анатоль Франс ҫапла ҫырнă: «Сăмахра — сăнар, словарьте — алфавит йĕркипе вырнаҫтарнă пĕтĕм ҫут тĕнче. Лайăхраххăн шухăшласан, ăнланатăн: словарь вăл чăннипех — кĕнекесен кĕнеки. Ытти йышши кĕнекесем пурте шăнăҫаççĕ словарьте, вĕсене унтан илсе усă курма ҫеç пĕлмелле»[2].

Словарьсем кирек хăш халăхăн чĕлхине, культурипе историне тĕпчесе вĕренме, пĕтĕм халăх чĕлхин литература форми-

---

[1] Морковкин В. В. Учебная лексикография как особая лингвометодическая дисциплина: Актуальные проблемы учебной лексикографии. М.: Русск. язык, 1977, с. 30.

[2] Франс А. Лексикон. — Собр. соч. в восьми томах, т. 8. М., 1960, с. 153.

не аталантарма, унӑн нормисене йӗркелеме, общество пурнӑҫӗнчи нумай тӗрлӗ хутшӑну нушисене тивӗҫтерме, халӑхӑн пӗтӗмӗшле пӗлӳлӗхӗпе культура шайне ӳстерме кирлӗ. Вӑтам тата аслӑ шкултa словарьсем ку чухнехи вӗренӳ-методика комплексӗн кирлӗ пайӗ шутланаҫҫӗ. Тӑван чӗлхепе вырӑс чӗлхине тата ют ҫӗршыв чӗлхисене вӗрентес ӗҫре вӗсем питӗ пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ.

Ҫыравҫӑсен — литераторсен, журналистсен, куҫаруҫӑсен ӗҫӗнче словарьсем алӑран ями хатӗр пулса тӑраҫҫӗ. Информаци хатӗрӗсен кулленхи ӗҫӗнче ҫине-ҫинех тухса тӑракан терминологи, орфографи, орфоэпи ыйтӑвӗсене те словарьсемсӗр татса пама ҫук. Словарьсемпе усӑ курмалли тепӗр паллӑ сфера вӑл — агитаципе пропаганда, наукӑпа культура пӗлӗвӗсем сарас ӗҫӗн нумай тӗрлӗ формисем.

Юлашкинчен ҫакна асӑрхаттарса калас пулать. Чӑваш чӗлхипе литература уйрӑмӗнче вӗренекен студентсемшӗн словарьсем — янтӑ ӗҫ хатӗрӗсем кӑна мар, вӗренмелли, тӗпчев тумалли материал та. Халлӗхе пирӗн нумай-нумай тӗрлӗ словарьсем ҫук-ха, вӗсене хатӗрлес ӗҫ теорийӗпе методикине алла илесси, словарьсем хайлас ӗҫе тӳррӗнех хутшӑнасси — шӑпах пулас чӗлхеҫӗсен, учительсен, ҫыравҫӑсен тивӗҫӗ.

Ҫӳлерех каланисене шута илсе, чӑваш уйрӑмӗнчи ятарлӑ чӗлхе дисциплинисен шутне «Чӑваш лексикографийӗ» курс кӗртнӗ, унӑн программине хатӗрлесе пичетленӗ. Ку кӗнекене, тӗпрен илсен, ҫав программа тӑрӑх ҫырнӑ. Ятарлӑ курса вӗреннӗ май, лекцисемсӗр пуҫне, практика занятийӗсем те пулаҫҫӗ, унта студентсем докладсем тӑваҫҫӗ, тӗрлӗ словарьсенчи материала критикӑлла тишкереҫҫӗ, ҫавӑн пекех сӑнав-тӗпчев ӗҫне хутшӑнаҫҫӗ, словарьсем тумалли материал пухса системӑлаҫҫӗ, картотекӑсемпе пуянлатаҫҫӗ. Вӗренӳри темӑсенчен чылайӑшӗпе каярах курс тата диплом ӗҫӗсем ҫырма пулать.

Словарь ӗҫӗн ыйтӑвӗсене ҫутатакан тӗпчевсем чӑваш чӗлхе пӗлӗвӗнче сахал мар. Анчах ку ыйтупа пӗтӗмӗшле анлӑ тишкерӳ туни пулманччӗ-ха[3]. Кун евӗрлӗ пособисем ытти тӗрӗк чӗлхисемпе те сахал. Ҫавӑнпа та кӗнеке авторӗн нумай ыйтусене харпӑр хӑй тӗллӗн лартма, пуҫласа татса пама тиврӗ. Автор хӑй словарьсем хатӗрлес ӗҫре пухнӑ опытпа тата университетра вуланӑ лекцисен материалӗпе анлӑн усӑ курнӑ.

[3] Чӑваш лексикографийӗ ҫинчен пӗтӗмӗшле кӗскен ҫырса кӑтартнине ҫакӑнта вулама пулать: Андреев Н. А. Чӑваш чӗлхин лексикологийӗ. Шупашкар, 1961, 133—138 с.; Русско-чувашский словарь / Под ред. И. А. Андреева и Н. П. Петрова. М.: Сов. энциклопедия, 1971, с. 5—8; Егоров В. Г. Современный чувашский литературный язык в сравнительно-историческом освещении. 2-е изд., испр. Чебоксары, 1971, с. 122—125; Сергеев Л. П. Чӑваш сӑмахӗ. Шупашкар, 1978, 154—166; Сергеев В. И. Словарь тӑвас ӗҫ: Хальхи чӑваш чӗлхин лексикологийӗ. Шупашкар, 1978, 186—198 с.

# I СЫПАК

## ЧĂВАШ ЛЕКСИКОГРАФИЙĔН КĔСКЕ ИСТОРИЙĔ

### 1 §. XVIII ĕмĕрти тата XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчи словарьсем

Словарьсем тăвас ĕçĕн наука теорийĕ юлашки вăхăтра çеç калăпланса йĕркеленет. Словарьсем çырса хатĕрлесси, вĕсемпе усă курасси вара авалтанах йăлана кĕнĕ. Лексикографи практикин пуçламăш тапхăрĕнче ытларах чухне ют чĕлхесен е тăван чĕлхепе çырнă текстсенчи ăнланма йывăр сăмахсен словарĕсене тăвасси малта тăнă. Çĕнĕ çĕрсем уçнăçемĕн, çĕнĕрен çĕнĕ халăхсемпе тĕл пулса хутшăнма тытăннăçемĕн вĕсен чĕлхине, сăмахĕсене пĕлесси çивĕч ыйту пулса тăнă. Çавнашкалах ют чĕлхесемпе, уйрăмах авалхи «вилĕ» чĕлхесемпе çырнă тĕн кĕнекисене, наука хайлавĕсене е илемлĕ произведенисене тăван чĕлхене куçарнă чухне ют сăмахсене ăнлантаракан словарь йышши пособисемсĕр ĕçлеме май килмен. Каярахпа, тĕрлĕ йышши ăслăлăх аталанса пынă май, чĕлхесене, вĕсен сăмах пуянлăхне наукăн ятарлă меслечĕсемпе тĕпчесе пĕлмешкĕн те словарьсем пухса хатĕрлеме тытăнаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ пирвайхи словарьсем пурте тенĕ пекех икĕ е нумай чĕлхеллĕ пулнă, урăхла каласан, вĕсене танлаштару тума, куçарма çырса хатĕрленĕ.

Хурăнташлă тĕрĕк чĕлхисен словарĕсем пирĕннинчен нумай маларах кун курнă. Ку вăл авалхи тата вăтам ĕмĕрсенчи çыруллă литература традицийĕсемпе тачă çыхăннă. Шел пулин те, авалхи чăваш (пăлхар) чĕлхин материалĕ вăл словарьсенче çукпа пĕрех. Тĕрĕксен XI ĕмĕрти чаплă чĕлхеçи Кашгар Махмучĕ çырса хăварнă питех те пуян танлаштаруллă словарьте (унăн ячĕ — «Диван люгат ит-тюрк», чăвашла «Тĕрĕк чĕлхисен пуххи») «пăлхар сăмахĕ» тесе паллă тунă лексика элеменчĕсем сайра тĕл пулаççĕ, сăм., *кÿпе* 'кольчуга, тимĕр тум', *авус* 'ăвăс (вĕлле хурчĕсен)'.

Чăваш сăмахĕсене тĕллевлĕн, ятарласа пухса çырасси XVIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче пуçланать. Тыткăнри швед офицерĕ Филипп Иоганн (Табберт) Страленберг, Çĕпĕрте чылай хушă пурăннăскер, «Европăпа Азин çурçĕр тата хĕвелтухăç пайĕсем...» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă (вăл 1730 çулта Стокгольмра тухнă). Унта, Российăри ытти халăх чĕлхисен материалĕпе пĕрлех, чăваш сăмахĕсем пулнă (28 япала ячĕ тата 10 хисеп ячĕ).

1791 çулта Герард Фридрих Миллер академикăн «Хусан кĕпĕрнинчи тĕне кĕмен виçĕ халăха — çармăссене, чăвашсене

тата ар-удмуртсене çырса кăтартни...» («Описание трех живущих в Казанской губернии языческих народов, яко то: черемис, чувашей и вотяков...») ятлă тĕпчев ĕçĕ пичетленнĕ. Унăн вырăсла тексчĕ 1756 çултах çапăнса тухнă пулнă, анчах унта словарь материалĕсем кĕмен. 1759 çулта тĕпчевĕн тулли тексчĕ нимĕçле пичетленнĕ. Çак кĕнекере нимĕçле-тутарла-çармăсла-чăвашла-удмуртла-мордвалла-пермякла-зырянла танлаштаруллă словарь та пур. Пурĕ унта 313 чăваш сăмахĕ, вăл шутра 38 хисеп ячĕ[1].

Миллер словарĕпе çыхăннă тепĕр лексикографи палăкĕ — Иоганн-Эбергард Фишер Наука академине тăратнă танлаштаруллă словарь (34 чĕлхе). Ăна Миллер панă сăмахсен спискĕ тăрăх Çĕпĕрти патшалăх кантурĕсен тиекĕсем хатĕрленĕ пулмалла. Списокри 700 яхăн сăмахран чăвашла 280 сăмахне куçарса панă. Словарĕн икĕ экземплярĕ сыхланса юлнă (ФРГри Гĕттинген хулинче тата Ленинградра упранаççĕ), вĕсем хушшинче чылай уйрăмлăх пур[2].

XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнчи çӳлерех асăннă пирвайхи чăваш словарĕсене латин графикипе усă курса çырнă. Çакă хăйне майлă чăваш сассисене тĕрĕс палăртма самаях чăрмантарнă. Кунсăр пуçне, лексика материалне пухса куçарас ĕçе ятарлă пĕлӳ илмен çынсене явăçтарнă пирки, кĕрет йăнăшсем, пăтрашусем те чылай пулнă. Тепĕр уйрăмлăх — ку словарьсенче тури чăвашсен калаçăвĕ уçăмлăн сăнланни[3].

Малаллахи тапхăрта чăваш сăмахĕсене пухса çырасси сарăлсах пырать. Паллă государство деятелĕ тата пултаруллă историк В. Н. Татищев пуçарса ертсе пынипе тĕрлĕ чĕлхесен лексика материалне нумай пухнă. Вăл хушнипе К. А. Кондратович учитель, Самарта, Екатеринбургра (халĕ Свердловск), унтан Питĕрте ĕçленĕскер, чăвашла-вырăсла словарь хатĕрлени паллă, анчах вăл сыхланса юлман. Татищев ертсе пынипе пухнă материалсенчен çаксем пур: 1) вырăсла-тутарла-чăвашла-мордвалла словарь (520 чăваш сăмахĕ); 2) вырăсла-чăвашла-çармăсла-мордвалла словарь (500 чăваш сăмахĕ)[4]. Ку алçырусенче о-латан тури калаçу сăмахĕсемпе пĕрлех у-латан анатри калаçу тĕслĕхĕсем те пур. Чĕлхе историйĕ валли пуян лексика материалĕ сыхласа хăварнипе пĕрлех асăннă словарьсем чăваш сăмахĕсене вырăс саспаллийĕсемпе çырса палăртасси мĕнле пуçланнине тата аталанса пынине

[1] Егоров В. Г. Чувашские словари VIII века. — Зап. ЧНИИ. Чебоксары, 1949, вып. 2, с. 111—115.

[2] Кононов А. Н. История изучения тюркских языков в России: Дооктябрьский период. Изд. 2-е, доп. и испр. Л.: Наука, 1982, с. 66—67.

[3] Петров Н. П. Чăваш литература чĕлхин историйĕ: Яковлевченхи тапхăр: Вĕренӳ пособийĕ / Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1978, 48—52 с.

[4] Димитриев В. Д. Два описания чувашей и чувашские словари второй четверти XVIII века: Вопросы археологии и истории Чувашии. — Учен. зап. ЧНИИ. Чебоксары, 1960, вып. 19, с. 270—298.

тишкерме май параççĕ[5]. Çакна та асăрхаттарса хăвармалла: чăваш лексики чи малтан нумай чĕлхеллĕ (танлаштаруллă) лексикографи жанрĕнче, ытти чĕлхесен материалĕпе пĕрле ӳкерĕнсе юлать. Çавăнпа та пирĕн çĕршыври нумай халăхсен наци лексикографийĕ пĕр тĕшĕрен шăтса тухнă, вырăс лексикографийĕн пĕтĕмĕшле тымарĕнчен хунав ярса аталаннă теме пулать.

Чăваш сăмахлăхĕн материалĕсем Петр-Симон Паллас академик хучĕсенче те упранаççĕ (Ленинград). Вĕсенчен çаксене асăнмалла: «Çармăсла, чăвашла тата мордвалла куçарнă вырăс сăмахĕсен списокĕ» ятлă алçыру (Мендиер Бещерин алă пуснă, 7 листа); унăн кĕскерех тата урăхларах ятлă варианчĕ: «Çармăсла, чăвашла, мордвалла тата ар-удмуртла куçарнă вырăс сăмахĕсен списокĕ» (5 листа); çав вырăс сăмахĕсене куçарсах тунă танлаштаруллă словарь (3 листа). Анчах кунта темиçе чĕлхе сăмахĕсене танлаштарни çук, чăвашла куçарăвăн тĕрлĕ варианчĕсене танлаштарнă. Тата икĕ списокра (3 тата 2 листа) çав сăмахсенех куçарнá, анчах унта чăваш сăмахĕсем чылай ытларах. Ку алçырусем «Мĕнпур чĕлхесемпе наречисен танлаштаруллă словарĕсене...» хатĕрлеме пухнă материалсен пайĕ шутланаççĕ. Списоксенче тĕрлĕ чăваш калаçăвĕн сăмахĕсем тĕл пулаççĕ, çавáнпа та вĕсене чăвашсем пурăнакан тĕрлĕ вырăнсенче пухса çырнă тесе шутлама пулать[6].

Чăваш сăмахĕсен чылай йышлă ушкăнĕсене «Чăваш чĕлхин грамматики çинчен çырнисенче» («Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка») пухса панă. Ку кĕнекене Хусан архиепископĕ Вениамин Пуцек-Григорович ертсе пынипе çырса хатĕрленĕ, 1769 çулта Санкт-Петербургра пичетлесе кăларнă. Лексика материалне кашни грамматика сыпăкĕ хыççăн, пуплев пайĕсем тăрăх парса пынă. Кĕнекере пурĕ 1300 ытла чăваш сăмахĕ, вĕсене малти вырăна (реестра) лартса тухнă, унтан вырăсла куçарăвне çырнă. Çапла ĕнтĕ, чăваш чĕлхин пирвайхи грамматики пулнипе пĕрлех, çак кĕнеке чăвашла-вырăсла словарĕн пĕрремĕш тĕслĕхĕ те пулса тăрать. Тĕпрен илсен, кунта тури чăвашсен калаçăвĕнчи сăмахсене куратпăр, анчах анатри диалект сăмахĕсем те пур. Вĕсем хушшинче халĕ манăçа тухнă авалхи сăмахсем чылай. Сăмахсен фонетика формине вырăс саспаллийĕсемпе самаях ăнăçлă çырса палăртнă. Çур ĕмĕр ытла чăваш чĕлхине вĕренмелли пĕртен-пĕр пособи пулнă май, ку кĕнеке чăваш çырулăхне аталантарас ĕçе пысăк витĕм кӳнĕ.

---

[5] Петров Н. П. Асăннă ĕç, 57 с.

[6] Сергеев Л. П. О памятниках чувашской письменности XVIII века. — Учен. зап. ЧНИИ. Чебоксары, 1970, вып. 46, с. 236—238 (кунта Бещерин хушамата йăнăш — Бекдорин тесе çырнă); Кононов А. Н. Асăннă ĕç, 93—94 с.

В. Г. Егоров шучĕпе, кĕнеке авторĕ хăй чăваш пулман, çавăнпа та чăваш сăмахĕсене пăтраштарнисем, тĕрĕс мар кусарнисем чылай тĕл пулаççĕ. Сăм., *пуятăп* вырăнне *пойанадап* 'богатею', *хытатăп* вырăнне *хытланадап* 'твердею' тесе çырнă. *Ыдаладып* сăмаха вырăсла 'подражаю' тесе куçарнă (тĕрĕс: 'обнимаю'), *сивчирь* 'болячка' (тĕрĕс: 'лихорадка'), *пуй* 'богатство' (тĕрĕс: 'богатей'). Чăваш чĕлхинче çук формăсем хайланин тĕслĕхĕсем: *сиратхон* 'чернильница', *сяварзяхона* 'свод', *мамыклый* 'пуховый', *тиллий* 'лисий'. Қалас пулать, кунашкал çитменлĕхсем унччен хи тата ун хыççăнхи словарьсенче те тĕл пулаççĕ.

Чăвашсен пĕрремĕш грамматики тата унăн словарĕ пирĕн çĕршывра çеç мар, чикĕ леш енче те паллă пулнă, унпа чĕлхеçĕсем наука тĕпчевĕсенче анлăн усă курнă, чăваш чĕлхин тытăмĕпе иртнĕ кунçулĕ пирки тĕрĕсрех выводсем тума пултарнă[7].

XVIII ĕмĕрĕн юлашки чĕрĕкĕнче Российăра лексикографи ĕçĕ уйрăмах вăйлă аталанать. Ку вăл тĕрлĕ халăх чĕлхисен сăмахĕсене пухса словарьсем хатĕрленипе çыхăннă.

II Екатерина патша, тĕнчери мĕнпур чĕлхесен танлаштарулла словарьне пичетлесе кăларма ĕмĕтленсе, çак ĕçе ученăйсене çеç мар, чиркӳ çыннисене те, чиновниксене те хутшăнтарнă. Вăл хушнипе Российăн пур кĕтесĕсенчи епархи архиерейĕсем вырăнти халăхсен лексика материалне пухас ĕçе йĕркеленĕ. Чулхулара ку ĕçе нумай вĕреннĕ çын — Дамаскин епископ ертсе пынă. Халĕ кĕскен «Дамаскин словарĕ» текен алçыру халлĕн упранакан словарь XVIII ĕмĕр вĕçĕнчи лексикографин пысăк палăкĕ пулса тăрать. Словарь ячĕ питĕ вăрăм, унăн пуçламăшĕ чăвашла çапла пулать: «Чулхула епархийĕнчи тĕрлĕ халăх чĕлхисен — вырăс, тутар, чăваш, мордва, тата çармăс чĕлхисен словарĕ...» («Словарь языков разных народов, в Нижегородской епархии обитающих, именно: россиян, татар, чувашей, мордвы и черемис...»). Словарь титулĕнче кăтартнă тăрăх, ăна 1785 çулта Чулхулари тĕн семинарийĕнче çав чĕлхесене пĕлекен священниксемпе вĕренекенсем пулăшнипе пухса хатĕрленĕ-мĕн. Вырăс сăмахĕсене чăвашла куçарас ĕçе чăваш çыннисем Ермей Рожанский, Григорий Рожанский, Иван Русановский хутшăннă[8]. Вĕсенчен чи паллăраххи чăваш ялĕсенче проповедникра чылай хушă ĕçленĕ, вырăсларан чăвашла куçарас ĕçе нумай вăй хунă священник Ермей Иванович Рожанский пулнă. Шăпах вăл ĕнтĕ чăвашла пичетленсе тухнă пĕрремĕш кĕнекене — «Кĕске катехизиса» куçараканĕ (Санкт-Петербург, 1800). В. Г. Ро-

[7] Егоров В. Г. Асăннă ĕç, 115—118 с.

[8] Родионов В. Г. Новое о деятельности Ермея Рожанского: Актуальные проблемы чувашской литературы. Чебоксары, 1983, с. 163—164, 175—178.

дионов шучĕпе, вăлах чăваш чĕлхин пĕрремĕш грамматикине («Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка») çырса хатĕрлес ĕçе те активлă хутшăннă.

Ермей Рожанскин чăваш чĕлхинчи пĕлӳлĕхне тата словарь ĕçĕнчи куçару пултарулăхне Дамаскин словарĕ валли хатĕрленĕ материалсене вăл епле редакцилени лайăх кăтартса парать. Акă «Тутар, чăваш тата мордва чĕлхисен вырăс алфавичĕпе вырнаçтарса вырăсла куçарнă словарĕ» (Словарь татарских, чувашских и мордовских языков с российским переводом и по российскому алфавиту) алçырăвĕн черновикĕнчен илнĕ хăшпĕр тĕслĕхсем.

| Словарьте малтан çырнă пулнă: | | Е. Рожанский юсанă: |
|---|---|---|
| *ад* | — | *тюпь сар* |
| *безумие* | *ухмаг* | *уссарш* |
| *безчеловечный* | — | *эдем зарла* |
| *благий* | — | *лаих* |
| *ближнее свойство* | *сивух хорандаш* | *сивух хорандашлых* |
| *божественно* | — | *торала* |
| *бритовщик* | *хыраган* | *пеге усты* |
| *видение* | — | *корныш* |
| *вопрос* | *хорав* | *идю* |
| *жребий* | — | *телей, валя* |
| *приезжий человек* | *хуна* | *йот син т. ыт. те.* |

Словаре хатĕрлесе çитерсен, унăн пĕр экземплярне (2 том) II Екатерина патшана ярса панă, халĕ вăл Ленинградра упранать. Черновик экземплярĕ (вăл та икĕ томлă, пурĕ 519 листа) Чулхуларах юлнă, халĕ Горький область архивĕнче упранать. Çак икĕ экземпляр пĕр-пĕринчен кăштах уйрăлса тăраççĕ.

Дамаскин словарĕн реестрĕнче пурĕ 11115 вырăс сăмахĕ, вĕсене алфавит йĕркипе вырнаçтарса тухнă. Ку хисепрен чăвашла куçармасăр юлнисем икçĕртен ытла мар. Çапла ĕнтĕ, ку словарь мĕн XX ĕмĕр пуçланиччченех чăваш сăмахĕсен чи пысăк пуххи пулнă. Чулхулара ĕçленĕ чăваш тăлмачĕсем унпа тĕн кĕнекисене куçарнă чухне анлăн усă курнă. Чăн та, В. Г. Егоров Дамаскин словарьне пахалăх тĕлĕшĕнчен пысăках хумасть: «Чулхула словарĕнчи лексика материалĕн çурри ытла — никама кирлĕ мар ăпăр-тапăр»,—тесе çырать[9]. Кунашкал тиркеве акă мĕнле ăнлантарса пама пулать. Конкретлă пĕлтерĕшлĕ куллен тĕл пулакан сăмахсене словарьте вырăсларан чăвашла чиперех куçарнă. Анчах унăн пысăк словникĕнче абстрактлă ăнлавсене палăртакан, кулленхи пуплевшĕн ют, чăвашсемшĕн пачах паллă мар сăмахсем те

[9] Егоров В. Г. Асăннă ĕç, 121 с.

нумай пулнӑ, вӗсене куҫармасӑр хӑварма юраман. Ҫавӑнпа та абстрактлӑ япала ячӗсем, ҫыхӑну паллӑ ячӗсем тата ытти хӑшпӗр формӑсем валли тӑлмачсем хӑйсем ӑнкарнипе пачах ҫӗнӗ сӑмахсем тунӑ, ҫавна май чӑваш сӑмах пулӑвӗн моделӗсене пур чухне те тӗрӗс тытса пыман е пирӗн чӗлхешӗн ют мелсемпе усӑ курнӑ.

Чӑваш чӗлхинчи сӑмах пулӑвӗн мелӗсемпе вырнаҫусӑр усӑ курнӑ тӗслӗхсем: *искусство — услаш (ӑслӑ+-ӑш* аффикс), *хвастовство — сояш, вольность — ирикьш, отрочество — ачалаш, радость — хиберделеш* т. ыт. те. Тӑлмачсем *-ӑш/-ӗш* аффикспа усӑ курса ҫӗнӗ сӑмахсем тунӑ, анчах вӑл пысӑкӑш е талкӑш, уҫлӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем тума ҫеҫ юрӑхлине шута илмен. Чӑннипе кунта *-лӑх/-лӗх* аффикспа тата ытти тивӗҫлӗ мелсемпе сӑмах туни вырӑнлӑрах пулнӑ, сӑм., *искусство — ӑслӑх* е *ӑсталӑх, хвастовство — суялӑх* е *вӗҫкӗнлӗх* т. ыт. те.

Куҫарусенче вырӑс сӑмахӗсен грамматика категори паллисене тӗрӗс кӑтартман чӑвашла сӑмах майлашӑвӗсем, ҫавӑн пекех чӗлхе законӗсене пӑсса хайланӑ формӑсем чылай. Япала ячӗсенче: *бессилие — вый сидийман, бледность — йон сук;* паллӑ ячӗсенче: *безопасный — хораманни, говяжий — иня йутля, неодушевленный — чонлатманы* т. ыт. те.

Анчах словарь пӗлтерӗшӗпе пахалӑхне хак панӑ чухне XVIII ӗмӗр вӗҫӗнче чӑваш чӗлхе пӗлӗвӗ пачах аталанманнине, Российӑра та лексикографи малтанхи утӑмсем ҫеҫ тунине асра тытас пулать. Ҫавӑнпа та хальхи куҫпа пӑхсан ҫитменлӗх пек, йӑнӑш пек курӑнакан пулӑмсенче те наукӑпа лексикографи практикин кирлӗ тапхӑрӗсене, аталану сыпӑкӗсене курни тӗрӗсрех пулӗ. Апла пулсан, вӗсене пур енчен те тимлӗн тишкерес пулать. Дамаскин словарӗнче, вӑл тапхӑрти ытти словарьсенчи пекех, сӑмахсен составӗнче ҫеҫ мар, лексикографи методикипе куҫару ӑслайӗсенче те пахи сахал мар. Тӗслӗхрен, абстрактлӑ япала ячӗсен (терминсен), ҫыхӑну паллӑ ячӗсен, глаголӑн тӗрлӗ вид формисен словарь реестрӗнчи тата контекстри сӑн-сӑпачӗ пирки тӑракан ыйтусем икӗ ӗмӗр каялла ҫеҫ мар, хальхи вӑхӑтра та питӗ ҫивӗч. Кӗнекен малаллахи пайӗсенче эпир ку ыйтусем ҫинче ятарласа чарӑнса тӑрӑпӑр.

Дамаскин словарӗпе ҫыхӑннӑ лексикографи материалӗсенчен тата тепӗр ӗҫе асӑнас пулать. Ку вӑл «Слова, взятые из французских разговоров, российские с чувашскими, расположенные по урокам» ятлӑ алҫыру (84 с., Ленинградра упранать). Вӗҫӗнче Чулхула семинарийӗнче вӗренекенсем Григорий Рожанскипе Иван Русановский алӑ пуснӑ. Кунта вырӑс сӑмахӗсене уроксерен вырнаҫтарса чӑвашла куҫарнӑ. 130 урокра пурӗ 1500 яхӑн чӑваш сӑмахӗ шутланать. Хӑнӑхтарусем е ҫыхӑнуллӑ текст тӗслӗхӗсем паман.

В. Г. Егоров тишкернĕ тăрăх, ку алçыру Дамаскин словарĕнчен хăшпĕр сăмахсен фонетика варианчĕсемпе е куçарнă чухне урăх синонимсем илсе кăтартнипе çеç уйрăлса тăрать. Сăм., Дамаскин словарĕнче: *сено — уда, радуга — сюреть кибери, грязь — пыльчик;* уроксенче: *вуда, сювек кибери, лаппа.* Уроксенче çĕнĕ сăмахсем те курăнкалаççĕ: *борзая собака — иушля йида, переплетать — кнеге сыпас* т. ыт. те[10].

Чулхуларипе пĕр вăхăтрах II Екатерина патшана тепĕр чăваш словарĕ те çитерсе панă. Унăн авторне кăтартман, ячĕ — «Чăваш чĕлхин словарĕ» («Словарь языка чувашского»), калăпăшĕ 68 листа, Ленинградра упранать. Чĕлхе уйрăмлăхĕсене шута илсе, ăна Хусанта е Чĕмпĕрте çырса хатĕрленĕ тесе шутлама пулать. Дамаскин словарĕпе танлаштарсан, кунта нумай вырăс сăмахĕсене урăхларах куçарнă. Сăм., Дамаскин словарĕнче: *бабочка — либешь, вера — юла, жемчуг — инче, мел — пор, отруби — ириш, сосед— поскиль.* «Чăваш чĕлхин словарĕнче»: *шигильчи, шанчик, агак, акшар, сызыл, крюшь* т. ыт. те.

Чăваш сăмахĕсен сасă витĕмне ӳкерес тата пĕлтерĕшĕсене палăртас, сăмах пулăвĕн мелĕсемпе усă курас тĕлĕшпе çак икĕ словарьте çӳлерех асăннă йышши уйрăмлăхсемпе çитменлĕхсемех пурри курăнать.

Мĕнпур чĕлхесен словарьне хатĕрлес ĕçе пĕтĕмĕшпе ертсе пыма Екатерина патша паллă натуралиста П. С. Паллас академика хушнă пулнă. Паллас инструкцийĕ тăрăх нумай çĕртен пухнă материала пĕтĕмлетсе, 1787 çулта Санкт-Петербургра «Мĕнпур чĕлхесемпе наречисен танлаштаруллă словарĕсен...» пĕрремĕш томне пичетлесе кăларнă, унта Европăпа Ази чĕлхисен сăмахĕсене кĕртнĕ. Иккĕмĕш пайĕ (Африкăпа Америка чĕлхисем) 1789 çулта тухнă.

Словарь тытăмĕ çакнашкал: малтан вырăс сăмахĕсене панă (пурĕ 285 сăмах), йĕрки алфавитлă мар, тематика ушкăнĕсем е содержани тăрăх, пуçламăш сăмахсем — *бог, небо, отец, мать, сын* т. ыт. те, унтан кашни сăмаха ытти чĕлхесене хурăнташлă ушкăнсем тăрăх куçарса пынă. Словарĕн пĕрремĕш пайĕнче пурĕ 200 чĕлхе, вăл шутра Европăри 51 чĕлхе тата Азири 149 чĕлхе. Тĕрĕк чĕлхисене уйрăм ушкăн тунă, анчах чăваш чĕлхине унта мар, финн чĕлхисем хушшине вырнаçтарнă, вăл 64-мĕш вырăнта тăрать.

---

[10] Егоров В. Г. Асăннă ĕç, 123—124 с.

Словаре уйрăм чĕлхесен алçыру словарĕсенчен пĕтĕçтерсе тунă, çыравçăсем ют чĕлхесене пĕлменрен, черновиксенче саспаллисене уçăмлă çырман пирки тата ытти сăлтавсемпе йăнăш нумай тунă, сăмахсене пăсса ўкернĕ. Пачах ăрасна сăмахсене пăтратса вырнаçусăр эквивалентсем илсе пани те пур. Пĕр-икĕ тĕслĕх илсе кăтартар. Вырăсла *чудо* сăмаха чăвашла *куминскер* тесе куçарнă. Словарь валли материал пухакан пĕр-пĕр чăваша «чудо» ăнлав пирки ыйту парсан, лешĕ, ăнкарса илеймесĕр, «ку мĕскер-ши?», тенĕ пулмалла. Çыравçă çакна *чудо* сăмахăн чăвашла эквиваленчĕ вырăнне çырса хунă. *Дева* сăмаха — *хирь, иволача; скрыть* сăмаха — *тымарась* (тĕрĕс: *пытарас*); *труд* сăмаха *хер, ис, усес, ув* тесе куçарнă. Юлашки тĕслĕхре икĕ омофона пăтратнă (*труд* 'ĕç' тата *трут* 'ăвă)', ытти икĕ сăмахне вара кунта кĕретех йăнăш панă.

Вырăсла япала ячĕсене куçарма субстантивсем тупайман пирки вĕсене нумай чухне глагол е паллă ячĕ формисемпе куçарса панă: *слух* — *илдинят; зрение* — *карнат, каратып* (тĕрĕс: *курăнать, куратăп*), *быхас; вкус* — *туда, тутла; обоняние* — *шыршлатоп, шыршлас, сюзядуб* (тĕрĕс: *сисетĕп*) т. ыт. те.

Çак словарь материалĕпех, анчах тĕрлĕ чĕлхе сăмахĕсене реестра кăларса тата алфавит йĕркипе вырнаçтарса, Янкович де Мириево ертсе пынипе 4 томлă çĕнĕ словарь хатĕрлесе кăларнă, унăн ячĕ: «Мĕнпур чĕлхесемпе наречисен азбука йĕркипе вырнаçтарнă танлаштаруллă словарĕ» («Сравнительный словарь всех языков и наречий, по азбучному порядку расположенный». Санкт-Петербург, 1790—1791).

Малтанхи чăваш словарĕсене çырса хатĕрлекенсем вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем тĕлĕшпе питĕ асăрхануллă пулни курăнать: чăваш сăмахĕсем шутне вĕсем халăхра анлă сарăлнă, пĕтĕмпех «чăвашланнă» сăмахсене çеç кĕртнĕ. Миллер словарĕнче 300 ытла сăмахран вырăс несĕллисем пурĕ те виççĕ çеç: *стол* — *стель, лавка* — *лавка, бочка* — *бичка*. Пĕрремĕш чăваш грамматикинче 1300 сăмахран вырăсран кĕнисем 25 сăмах таран тупăнаççĕ, «Чăваш чĕлхин словарĕнче» те унран ытла мар. Чи пысăк калăпăшлă Дамаскин словарĕнче те вырăс йышăнăвĕсем çĕре яхăн кăна. Пĕтĕмлетсе каласан, вырăс чĕлхинчен кĕнĕ лексика единицисем вăл словарьсенче 1—2 процент çеç шутланаççĕ. Çапла ĕнтĕ, вырăс чĕлхи вăйлă витĕмĕ, тĕпрен илсен, XVIII ĕмĕр хыççăнхи тапхăрта аталанса пынă пулмалла[11].

Российăра пичетленсе тухнă танлаштаруллă словарьсене Европăри тĕрлĕ çĕршывсенче лайăх пĕлнĕ, унти сăмахсемпе, вăл шутра чăваш чĕлхин лексика материалĕсемпе те, наука

[11] Егоров В. Г. Асăннă ĕç, 130—134, 139—141 с.

тĕпчевĕсенче тухăçлăн усă курнă. Тĕслĕхрен, паллă тĕпчевçĕ Пал Берегсаси хăйĕн венгр чĕлхипе тухăçри чĕлхесем хушшинчи тӳркилӳсем çинчен çырнă кĕнекинче (Лейпциг, 1796) çав словарьсенчи фактсене таянса, чăваш чĕлхине тутар (тĕрĕк) чĕлхисен ушкăнне кĕртет.

XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче чăваш лексикографийĕнче çĕнĕ ĕçсем нумаях курăнмаççĕ. Чи палли — В. П. Вишневский çырнă чăваш чĕлхин учебникĕ çумне хушса панă словарь (Начертание правил чувашского языка и словарь, составленные для духовных училищ Казанской епархии. Хусан, 1836). Словарь кĕнекен пысăкрах пайне йышăнать, унта 3 пине яхăн сăмах. В. Г. Егоров хыççăн ăна пурте чăвашла-вырăсла словарĕн пĕрремĕш опычĕ теççĕ[12]. Анчах сăмахсене чăвашла-вырăсла çырасси пирĕн пĕрремĕш грамматикăрах тĕл пулать. Кунта акă мĕнле уйрăмлăхсене асăрхаттармалла. Пĕрремĕшĕнчен, В. П. Вишневский словарĕнче чăваш сăмахĕсене пĕтĕмпех алфавит йĕркипе вырнаçтарса тухнă. Иккĕмĕшĕнчен, словника чăваш çыннисен пуплевĕнче, чĕрĕ чĕлхере чăннипех çӳрекен активлă лексика единицисем ытларах кĕнĕ. Дамаскин словарĕнче вара, унăн калăпăшĕ нумай пысăкрах пулин те, чĕрĕ чĕлхе çаврăнăшĕшĕн ют материал нумай. Виççĕмĕшĕнчен, пичетленĕ ĕç, кĕнеке алçырăвĕн шутлă копийĕсем пек мар, анлă та хăвăрт сарăлнă, чăваш çырулăхне аталантарас ĕçе нумай пысăкрах витĕм кӳнĕ, чăваш чĕлхине тĕпчекенсемшĕн уйрăмах паха пулнă. Юлашкинчен çакна та палăртмалла. XIX ĕмĕр варринелле чăваш шкулĕсен йышĕ ӳсет, вĕсенче тăван чĕлхене вĕрентес ĕç сарăлать, çавна май Вишневский кĕнеки И. Я. Яковлев реформиччене тĕп учебник шутĕнче пулнă.

Вăл саманаран алçыру халлĕн юлнă чăваш словарĕсем те чĕлхе историйĕшĕн, уйрăмах унăн çырулăхлă тапхăрĕн историйĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсене пурне те тупса палăртнă, тишкерсе тухнă теме çук-ха. Чăваш сăмахĕсен эпир пĕлмен пуххисем хамăр çĕршыври тата урăх çĕршывсенчи, чи малтан Венгрипе Финляндири архивсенче упранма пултараççĕ. Венгр ученăйĕ Антал Регули чăвашра чылай хушă пурăнни, чĕлхепе этнографи материалĕ пухни пирĕншĕн паллă. Унăн нумай материалĕсене Йожеф Буденц тăрăшнипе пичетлесе кăларнă. Нумаях пулмасть Андраш Рона-Таш профессор Венгри Наука академийĕн архивĕнче, Регули хучĕсен фондĕнче, халиччен паллă пулман алçыру словарĕ тупнă, унăн ячĕ «Вырăс, пермяк, зырян, ар-удмурт тата чăваш чĕлхисен хăшпĕр сăмахĕсем» («Свод некоторых слов русских, пермяцких, зырянских, вотяцких и чувашских»). Ăна Ф. А. Волегов

---

[12] Егоров В. Г. Введение в изучение чувашского языка. М., 1930, с. 182; Андреев Н. А. Чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1961, 135—136 с. (автор ăна йăпăшпа вырăсла-чăвашла словарь, тет).

краевед 1835 çулта пухса хатĕрленĕ. Списокра 150 яхăн чăваш сăмахĕ, вĕсенче тури тата анатри чăваш калаçăвĕсен паллисем те пур[13].

Чăвашсем хушшинче ĕçленĕ тепĕр паллă тĕпчевçĕн Август Альквистăн архивĕнче (Хельсинки) самаях пысăк алçыру пурри паллă. Вăл икĕ пайран тăрать: вырăсла-чăвашла словарь тата чăвашла-шведла словарь. Унăн материалĕпе М. Рясянен мари чĕлхине кĕнĕ чăваш сăмахĕсене тĕпченĕ чухне усă курнă. Волегов списокĕпе танлаштарсан, ку словарь нумай пуянрах. Словаре пухса йĕркелес ĕçе пысăк пĕлӳллĕ чĕлхеçĕ хутшăнни унăн пахалăхне нумай ӳстернĕ.

XVIII ĕмĕрте тата XIX ĕмĕрĕн малтанхи çурринче пухса хатĕрленĕ чăваш словарĕсенче çитменлĕхсем нумай пулнă пулин те, вĕсен культурăпа çутĕçĕнчи тата чĕлхе наукине аталантарас ĕçри пĕлтерĕшĕ пысăк. Унта упранакан кивелнĕ чăваш сăмахĕсемпе формăсем чăваш чĕлхин иртнĕ историне, тăван сăмахлăх историне тĕпчесе пĕлмелли паха çăлкуç пулса тăраççĕ.

## 2 §. XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррипе XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи словарьсем

Чăваш лексикографийĕн аталанăвĕнчи тепĕр тапхăра Н. И. Золотницкий ячĕ уçать. 1875 çулта Хусанта унăн «Тĕрĕк, финн несĕлĕнчи тата ытти халăхсен чĕлхи-наречийĕсемпе танлаштарнă сăмах тымарĕсен чăвашла-вырăсла словарĕ» (Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен) пичетленсе тухнă.

Н. И. Золотницкий — чăваш чĕлхе пĕлĕвне тата литература чĕлхине аталантарма, çутĕçне сарма нумай вăй хунă паллă ученăй. Хăйĕн словарьне те вăл наука тĕпчевĕн тĕллевĕпе хатĕрленĕ — чăваш чĕлхин, унăн сăмахлăхĕн ытти чĕлхесем хушшинчи вырăнĕпе çыхăнăвĕсене тупса палăртма тăрăшнă. Çакăнпа çыхăннă ĕнтĕ ку словарĕн çĕнĕлĕхĕсем, паллăрах уйрăмлăхĕсем. Кунта пурĕ 1900 яхăн статья. Чĕлхеçĕ тымар сăмахсене пăхса тухассине, вĕсен несĕлне тупассине малти вырăна хурать. Иккĕмĕшле сăмахсене, хăшпĕр анлă номинацисене тĕп сăмах çумĕнче (йăва меслечĕпе) куçарса парать. Сăм., *эрне* ’неделя’ йăвинче çак сăмахсене панă: *сьув-арни* ’масленица’, *эрне-гон* ’пятница’, *вырсарни-гон* ’воскресенье’,

[13] Алексеев А. А. Ф. А. Волегов и его «Свод некоторых слов русских, пермяцких, зырянских, вотяцких и чувашских» 1835 года: Вопросы истории и грамматики чувашского языка. — Труды ЧНИИ. Чебоксары, 1977. вып. 74, с. 133—145.

*кисьнерни-гон* 'младший недельный день, канун недельного дня, четверг'.

Золотницкий словарьне чăваш лексикографийĕнчи пĕрремĕш танлаштару-этимологи словарĕн опычĕ темелле. II Екатерина патша тутарнă словарьсенче тĕрлĕ несĕллĕ чĕлхесен сăмахĕсене шайласа панă, вĕсен пулăвĕнчи çыхăнусене палăртас тĕллев лартман. Хальхи вырăс терминологийĕпе унашкал ĕçсене «сопоставительный словарь» теме пулать. Золотницкий вара несĕлĕ пĕр килекен сăмахсене тупса палăртма тăрăшать. Акă тĕслĕхсем:

*Айып* вина, порок; то, что причиняет стыд (араб. *эиб, аиб,* тат. *гаип,* л.-чер. *аип,* венг. *hiba*).

*Алык* дверь (тат. *ишек,* кирг. *есик,* алт. *ежик*).

Кĕнекен пысăк пайне хушса панисем — чĕлхе, ономастика, фольклор, мифологи, этнографи ыйтăвĕсемпе çырнă статьясем йышăнаççĕ: I. Тĕрлĕ халăхсен шут йĕрки. II. Тăванлăххурăнташлăх сăмахĕсем. III. Турă, пĕлĕт тата çăлтăр тавраш̆ĕ ячĕсем. IV. Çĕпĕр шаманĕсемпе чăваш юмăçĕсем т. ыт. те — пурĕ 22 статья. Вĕсенчен чылайăшĕнче чăваш сăмахĕсен этимологине тĕплĕн пăхса тухнă. Иккĕмĕш статьяра, акă, *авлан* сăмах пирки çапла ăнлантарнă: «Чăвашла *кил* тенине тĕрĕк чĕлхисенче *эв, ӧй, ӳй, джиӓ* сăмахсемпе палăртаççĕ. Вăл тымартан чăваш чĕлхинчи *авлан* 'жениться' глагол пулнă (тут. *ӧйлӓн,* якут. джиӓлӓн), *авлантар* 'женить' (тут. *ӧйлӓндер,* якут. *джиӓлӓ*). Кăркăссен *ӳй* сăмахĕ 'кил' тата 'арăм' пĕлтерĕшлĕ, *ӳй ал* 'авлан'; алтай чĕлхинче *ӳйлӳ* 'авланнă', *ӳй-деге* 'арăм'...»

Лексикографи методики тĕлĕшĕнчен тата çак çĕнĕлĕхсене палăртмалла. Пайăр мар сăмахсене, географи терминĕсене ăнлантарнă май, автор çав компонентлă топонимсене те илсе кăтартать. Словарь çумĕнчи статьясенче вара чылай чăваш топонимĕсене ятарласа тĕплĕн пăхса тухать. Золотницкий сăмахсен çирĕп майлашăвĕсене, пĕлтерĕш çыхăнăвĕсене, урăхла каласан, лексика системăлăхĕн паллисене кăтартма та тăрăшать, çав тĕллевпе синонимсен статйисене е урăх енчен çыхăннă статьясене пăхма кирли çинчен систерет (отсылка парать):

*Кайык* дикий зверь, дикая птица (тат., джаг. *киик,* алт. *кийик,* л.-чер. *каик,* г.-чер. *кэк,* перм. *кай); кайык квагал, кайык хор* дикая утка, дикий гусь (тат. *киик ӳрдӓк, киик каз*); *кайык лаша* осел; *кожак кайык* мышь; *виссе сьӳрэгэнь кайык* дикая летучая птица... См. *хирь* степь. *Кайăксар* в прил. XIX.

Золотницкий словарĕ хăй вăхăтĕнче чăваш чĕлхине тĕпчес ĕçре питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Халиччен чылай кивелнине, хăшпĕр йăнăш ăнлантарусем пуррине пăхмасăр, вăл хăйĕн хакне халĕ те çухатман.

Золотницкий вырăсла-чăвашла словарь хатĕрлес тĕлĕшпе те ĕçленĕ. Чăвашсен пурнăçĕпе йăли-йĕркине тĕпченĕ паллă ученăй В. К. Магницкий патне янă çырăвĕнче вăл 1865—1866 çулсенче вырăсла-чăвашла кĕске словарь хатĕрлени çинчен пĕлтерет. Унăн алçырăвне халлĕхе тупайман-ха. Иртнĕ ĕмĕр варринче чăваш ялĕсенчи пупсем, вырăсла çырнă текстсене куçарас ĕçре усă курма тесе ĕнтĕ, В. П. Вишневский материалне никĕсе хурса, вырăсла-чăвашла словарьсем йĕркелесе хатĕрленĕ, вĕсемпе Золотницкий та усă курнă. Унашкал словарьсенчен пĕри Чăваш наука тĕпчев институчĕн архивĕнче упранать. Литературăра çав саманари тепĕр паллă çын В. П. Громов священник чăвашла-вырăсла тата вырăсла-чăвашла словарьсем хатĕрлени çинчен сведенисем пур. Халлĕхе унăн алçырăвĕсен кунçулĕ пире паллă мар-ха[14].

Золотницкий çутĕçне, куçарăва, чăвашла кĕнекесем кăларас ĕçе хăйĕн вĕренекенĕсемпе пулăшаканĕсене активлăн хутшăнтарнă. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем учебниксем çырнă, çавăнпа пĕрлех вĕренӳ словарĕсем те хатĕрленĕ. 1894 çулта Хусанта «Чăваш чĕлхине вĕренмелли пособи. Н. И. Золотницкий материалĕсем тăрăх Н. Лебедев хатĕрлесе кăларнă» («Пособие к изучению чувашского языка. По материалам Н. И. Золотницкого издал Н. Лебедев») ятлă пысăк мар кĕнеке çапăнса тухнă. В. Г. Егоров шучĕпе, ăна чăваш чĕлхин пичетленнĕ виççĕмĕш грамматики тесе хаклама пулать. 76 страницăллă учебникăн çуррине морфологи ыйтăвĕсем йышăнаççĕ, иккĕмĕш çурринче — словарь. Сăмахсене унта чăвашла-вырăсла йĕркепе вырнаçтарнă. Автор анатри чăвашсен лексика материалĕпе усă курнă, И. Я. Яковлев транскрипцине çирĕп тытса пынă[15].

Пирĕн ĕмĕр пуçламăшĕнче ют çĕршыв ученăйĕсем, чи малтан финн тата венгр чĕлхеçисем, чăваш чĕлхине тĕпчесе вĕренес ĕçе активлă хутшăннă май, чикĕ леш енче те чăваш словарĕсем хатĕрлесе кăлараççĕ. 1906 çулта Будапештра «Чĕлхе пĕлӳ хыпарĕсем» («Nyelvtudományi Közlemények») журналта Золтан Гомбоцăн «Чăваш сăмахĕсен списокĕ» ятлă ĕçĕ пичетленсе тухнă. Тĕрĕссипе ку — чăвашла-вырăсла-венгрла словарь. Автор, тĕпрен илсен, Золотницкий словарĕпе тата Н. И. Ашмаринăн «Материалĕсемпе» усă курнă, анатри тата тури диалектсен формисене палăртнă, сăмаха ăçта çырса илнине кăтартнă, сасăсем епле янранине фонетика транскрипцийĕн мелĕсемпе лайăх ӳкерсе панă. Кунта пурĕ 800 сăмаха яхăн. Нумай сăмахсем çумĕнче тĕрĕк чĕлхисенчен, хăшпĕр

---

[14] Сергеев Л. П. О дояковлевском периоде чувашской письменности: 100 лет новой чувашской письменности. Чебоксары, 1972, с. 68—71.

[15] Егоров В. Г. Библиографический указатель литературы по чувашскому языку. Чебоксары, 1931, с. 48.

чухне монгол чӗлхинчен тивӗçлӗ тӳркилӳсене тупса панӑ, йышӑннӑ сӑмахсен этимологине кӑтартнӑ. Гомбоц словарӗпе ытларах венгр ученӑйӗсем тӗпчев ӗçӗсенче усӑ курнӑ, пирӗн çӗршывра ӑна сайра кам пӗлнӗ.

Паллӑ финн ученӑйӗ Хейкки Паасонен вара пачах урӑхла, Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсен, пуринчен ытла чӑвашсемпе марисен фольклорне, халӑх калаçӑвне тӗпчеме темиçе хут Российӑна килсе кайнӑ. Пухнӑ материалсене пӗтӗмлетсе, вӑл 1908 çулта Будапештра «Чӑваш словарӗ» (нимӗçле ячӗ «Tschuwaschischen Wörterverzeichnis») пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл çӳлерех асӑннӑ «Чӗлхе пӗлӳ хыпарӗсем» журналӑн XXXVII тата XXXVIII томӗсем çумне хушса пани шучӗпе тухнӑ. Словаре 1974 çулта Венгрири Сегед хулинче А. Рона-Таш умсӑмахӗпе тепӗр хут кӑларнӑ. Унтан кӑшт маларах Паасонен словарӗ Турцире туркӑ чӗлхипе те кун курнӑ (Стамбул, 1950). Çакӑ вӑл ученӑйсем ку словаре пысӑка хурса хакланине кӑтартать.

Чӗрӗ калаçӑва тӳррӗн тӗпченин пархатарӗ пысӑк пулнӑ, çакӑн çумне тата ученӑйӑн анлӑ пӗлӳлӗхне, словарь ӗçӗнчи ӑсталӑхне хушмалла. Паасонен словарӗн пӗр пахалӑхӗ — словник туллилӗхӗ (8 пин сӑмаха яхӑн). Тӗслӗхсене вӑл сӑмахсен фонетика сӑн-сӑпатне пӑсмасӑр, пӗчӗк çеç уйрӑмлӑхсене те асӑрхаса, диалект варианчӗсене кӑтартса çырнӑ. Вӗсен пӗлтерӗшӗсене уçса пама, лексика эквиваленчӗсем шыраса тупнипе пӗрлех, кирлӗ пулнӑ май пуплев тӗслӗхӗсемпе, фольклор произведенийӗсенчен илнӗ сӑмах майлашӑвӗсемпе е предложенисемпе вырӑнлӑ усӑ курнӑ. Акӑ, *ӳк* глаголӑн тӗп пӗлтерӗшне ('падать') лексика эквиваленчӗсемпе çеç уçса панӑ. Иккӗмӗш, куçӑмлӑ пӗлтерӗшне вара ('сбавлять цену'), вӑл паллӑ контекстсемпе тачӑ çыхӑннӑ пирки, çакӑн пек тӗслӗхпе çирӗплетнӗ: *Хаклӑ ыйтатӑн, ӳк пӑртак!* Тепӗр чухне чӑваш сӑмахӗн хӑйне евӗрлӗ пӗлтерӗшне ӑнлантарма сӑмахне мар, контекста пӗтӗмӗшпе куçарни пулать, сӑм., *ӳсӗн: паян ӗç ӳсӗнет...; вӑрка: ӑшӑм вӑркать (-ӑшӑм çунать)*... Кунта сӑмахсен синонимиi çыхӑнӑвӗсене, пӗр сӑмах вырӑнне тепӗр сӑмах калама май килнине те кӑтартнӑ.

Кашни тӗп сӑмах хыççӑн унран пулнӑ иккӗмӗшле сӑмахсене, сӑмах майлашӑвӗсене парса пынӑ, тӗсл., *вит I* 'накрывать' глагол хыççӑн *вителӗк, вителӗк хӗрри, витӗнмелли* сӑмахсене, *вит II* 'проникать' хыççӑн *витер, витӗр, вичӗкӗн, вите, витӗмлӗ* дериватсене панӑ.

Паасонен та, Гомбоц пекех, чӑваш сӑмахӗсем çумӗнче тутар чӗлхинчен тата ытти тӗрӗк чӗлхисенчен пӗр несӗллӗ тӳркилӳсем парса пырать, йышӑнусен çӑлкуçне кӑтартать. Словарь авторӗ сӑмахсен тӗрлӗ пӗлтерӗшӗсене уйӑрса цифрӑсемпе паллӑ тӑвать, омонимсене ӑрасна статьясенче пӑхса тухать, вариантсенчен тӗп сӑмах патне е синонимсене çыхӑнтарса кӑтартусем парать. Словарь вӗçӗнчи венгр тата нимӗç сӑма-


НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-39491

хĕсен указателĕсем те çав чĕлхесемпе вулакансемшĕн питĕ усăллă. Пĕтĕмлетсе çапла калас пулать: Паасонен словарĕ— наука шайĕ тата лексикографи культури тĕлĕшĕнчен питĕ паха ĕç.

Çак словарь пахалăхĕсем революциччен чăваш лексикографийĕн тепĕр пысăк палăкĕпе — Н. В. Никольскин «Вырăсла-чăвашла словарĕпе» танлаштарсан уйрăмах лайăх курăнаççĕ. Ку словарь 1909 çулта Хусанта пичетленсе тухнă.

Калăпăшĕпе Никольский словарĕ самаях пысăк, унăн словникĕнче 20 пине яхăн вырăс сăмахĕ шутланать. Словарь пуçламăшĕнче (3—17 с.) чăваш грамматикин кĕске очеркне пичетленĕ. Кĕнеке вĕçĕнче усă курнă литература списокĕ пур (75 ят), вăл шутран ытларахăшĕ — Миссионерсен обществи чăвашла куçарса пичетленĕ тĕн кĕнекисем, темиçе ят — вĕренӳ кĕнекисемпе тĕрлĕ пĕлӳ саракан популярлă брошюрăсем. Автор чĕлхе материалне тĕрлĕ вырăнсенчи чăвашсем патĕнче харпăр хăй тĕллĕн пухни çинчен калать, çавăн пекех ку ĕçре ăна пулăшнă чăваш пупĕсемпе учителĕсен пысăк ушкăнне асăнать. Шел пулин те, мĕнле вырăс словарĕсемпе усă курнине кăтартман.

Автор каланă тăрăх, вăл словаре шкул ачисемпе учительсем валли — вырăсла текстсене чăвашла куçарма пулăшас тĕллевпе хатĕрленĕ. Кĕнеке вĕçĕнче словарьпе вĕренӳ ĕçĕнче мĕнле усă курмалли çинчен пĕчĕк методика кăтартăвĕ те пур. Çапла ĕнтĕ, ку словаре ятарласа чăваш шкулĕсем валли хатĕрленĕ пĕрремĕш вырăсла-чăвашла словарь теме пулать. Унта вырăс чĕлхин кулленхи лексикине самаях туллин кĕртнĕ, ытларах чухне чăвашла тĕрĕс куçарнă. Кĕнеке сăмахлăхĕнчи абстрактлă пĕлтерĕшлĕ лексемăсене куçарнă чухне чăваш сăмахĕсен пĕлтерĕшне сарас, калька тăвас мелсемпе ăнăçлă усă курнă.

Анчах хальхи лексикографи требованийĕсене асра тытас пулсан, ку словарĕн нумай-нумай çитменлĕхĕсене палăртма тивет. Никольский хăй чĕлхеçĕ пулманни тата тӳррĕнех шкулта ĕçлеменни, ун чухнехи словарьсен, уйрăмах Европăри çĕршывсенче кăларнă вĕренӳ словарĕсен лайăх тĕслĕхĕсемпе çывăх паллашайманни, ку ĕçĕн техникипе методикине ятарласа тишкерменни уççăнах курăнать. Словарĕн паллăрах уйрăмлăхĕсемпе кăлтăкĕсене кĕскен çеç пăхса тухăпăр.

Словника йĕркеленĕ чухне автор çыруллă текстсене, кĕнеке-хаçат сăмахлăхне шута илни палăрать. Çавна май кунта вĕренекенсен тавракурăмĕпе пĕлӳлĕхне сарма кирлĕ çĕнĕ сăмахсем, терминсем йышлă. Вăл шутра общество пурнăçĕн, государство тытăмĕн ятарлă сăмахĕсем, гуманитарлă наукăсен шкулта уйрăмах час-час тĕл пулакан терминĕсем (*аванс, администрация, архив, аттестат, баллотировать, бюллетень, вакация, вексель, воспитание, гуманность, инквизитор, льгота*

т. ыт. те). Кунтах çутçанталăк пулăмĕсене, ялхуçалăхĕпе техника ăнлавĕсене, йăлари культура япалисене палăртакан сăмахсем (*агроном, аист, акклиматизировать, амальгама, балласт, батарея, ветеринария, водопровод, градусник, дантист, кабарга, космос* т. ыт. те). Анчах тĕн кĕнекисен витĕмне пула словаре христианство кульчĕпе, чиркӳ йăли-йĕркипе, кĕлĕ мешехисемпе çыхăннă сăмахсем, библи юмахĕсенчи ятсемпе сăмах çаврăнăшĕсем, тĕн тексчĕсенчи чиркӳ-славян элеменчĕсем нумай кĕнĕ (*богоначальнейший, вечеря тайная, водосвятие, илитон, кандия, лития, орарь, трикирий* т. ыт. те).

Автор шкул ачисенĕ кирлĕ сăмах йышне хăйне майлă ăнланнă, шкул дидактики тĕлĕшĕнчен ку ăнланăва ниепле те тĕрĕс теме çук. Чи тăтăш, пĕтĕм халăх чĕлхинче активлă çӳрекен сăмахсемпе юнашарах вăл словаре вырăссем хăйсем те пĕлмен-илтмен кивĕ, сайра тĕл пулакан сăмахсене çĕрĕ-çĕрĕпе кĕртсе тултарнă. Акă, словарĕн виçĕ страницинче кăна (146—148) çакăн пек сăмахсем тĕл пулаççĕ: *кабат* 'кипке', *кабза* 'укçа хутаççи', *каболка* 'сӳс кантăра', *кава* 'шалçа', *кавадья* 'хырăм', *каваш* 'вĕçен кайăк чĕппин ячĕ', *кавник* 'юмăç, тухатмăш', *кага* 'пĕчĕк ача', *кагаль* 'шавлакан, кăшкăракан эрттел', *кагла* 'кăмака трупи', *кагора* 'почта (çырусем) çӳретекен лашасем', *кадомить* 'ĕçсĕр çӳре', *кадук* 'усал ернĕ тар' (?), *казарга* 'ухă', *казить* 'пăс, çĕмĕр, лутăрка, амант', *казулька* 'çĕлен', *кайдал* 'кĕтӳ', *какора* 'хулăн пашалу', *калабан* 'хăпарту'.

Словникăн пысăк çитменлĕхĕ — унта чĕрĕ чĕлхере пачах тĕл пулман иккĕмĕшле сăмахсем, уйрăмах приставкăллă глаголсем нумай кĕртни. Вырăс чĕлхинче приставкăсем глагол тумалли тухăçлă мел шутланаççĕ, анчах кашни глагол тĕпĕ пур приставкăсемпе те пĕрлешеймест. Урăхла каласан, халăх чĕлхи ку йышлă модельсемпе суйлавлăн усă курать. Никольский словарĕнче вара çакăн пек формăсем çине-çинех тĕл пулаççĕ: *нарыжеть, надсосать, назреть, накачнуться, облежать, облысить, обмигать, обночевать, обранить, отзимовать, размириться, разуглиться* т. ыт. те. Ку приставкăсемпе тата глагол тĕпĕсемпе асăннă дериватсене туни вырăс сăмах пулăвĕн системипе килĕшсе тăмасть, кирлĕ мар çĕртен çĕнĕ лексика единицисем шухăшласа кăларни пулать. Танл. *нарыжеть* вырăнне вырăсла *порыжеть* 'хĕрел, хĕрлĕ тĕс çап', *обночевать* вырăнне *переночевать* 'çĕр каç' глаголсемпе усă кураççĕ, ытти формăсем пирки те çавнах каламалла.

Словарь статйисене йĕркелессинче çакăн пек çитменлĕхсем пуррине асăнмалла. Автор сăмахсен семантика çыхăнăвĕсемпе паллисене — нумайпĕлтерĕшлĕхе, омонимие, пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле сăмахсен çыхăнăвĕсене тĕрĕс кăтартайман. Сăмах пулăвĕн деривачĕсене ытларах тĕп сăмахсен статйисенче, хушăран вара уйрăм статьясенче панă. Çавна

2*

май пĕр статьяра пачах ăрасна омонимсем е тĕрлĕ несĕллĕ сăмахсем хутшăнса каяççĕ. Тĕслĕхсем: *линь* 'вĕрен', 'хура карас'; *вар* (ц.-сл.) 'ывăл', 'вĕрекен шыв', 'сухăр'. Икĕ статйинче те, омонимсене уйăрмасăр, пĕр ретре панă. Нумай вырăс сăмахĕсене урăх грамматика категорине кĕрекен сăмахсемпе куçарса панă. Сăмахпа пуплевре усă курнине çирĕплетмелли тĕслĕхсене е цитатăсене пĕрешкел йĕркепе пани çук. Тĕрĕссипе ку словарьте пĕтĕм материала — лексика эквиваленчĕсене те, иллюстраци тĕслĕхĕсене те вырăсла-чăвашла йĕркепе вырнаçтарса тухмалла пулнă. Автор словникпа лексика эквиваленчĕсене çеç çак йĕркене пăхăнтарнă. Акă ку тĕлĕшпе кăтартуллă словарь статйи:

*Забыть* ман, асран яр; *манас çук* нельзя забыть. *Забывчивый* ăнсăр, манакан, час манакан. *Забывать* ман. Эпĕ мĕн каласса мантăм; эпĕ вăл усал тунине мантăм. *Забываться* хăвна ху ман, ху мĕн туманнине пĕлменни. *Забывающий* манакан.

Кунта *манас çук* сăмахсене мар, вырăсла эквивалентне мала тăратмалла пулнă. *Эпĕ* сăмахран пуçланакан пуплевсен вырăсла эквиваленчĕсем пачах çук. *Пĕлменни* сăмах вырăс глаголĕн инфинитив формипе килĕшмест, тĕрĕсрех *ан пĕл* пулать т. ыт. те.

Чăваш ачисемшĕн паллă мар вырăс терминĕсене автор ытларах анлă ăнлантару мелĕпе панă. Акă ăнăçлăрах ăнлантарусен тĕслĕхĕсем, унта автор вулакансен пĕлӳлĕх шайне шута илсе ансатрах определенисем хайлама тăрăшни сисĕнет:

*Бинокль* инçетри япаласене çывăхра кăтартакан кĕленче витĕр пăхмалли юри тунă япала.

*Блокада* тĕреклентернĕ вырăна çарпа çавăрса илни.

*Брандмауер* икĕ çурт хушшине вут тивесрен чултан тунă хӳме.

Анчах тĕрĕс те виçеллĕ, перекетлĕ ăнлантарусемпе пĕрлех ытлашши вăрăм е ăнланмалла мар, наукăпа килĕшсе тăман, чĕлхе стилĕ тĕлĕшĕнчен юрăхсăр тĕслĕхсем чылай:

*Девиз* йĕрке; пĕр-пĕр япала çине кĕскен çырнипе пурăнни.

*Депо* тавар, пăшал тавраш тата ытти япаласем хуракан вырăн; пĕр ĕçпе пурăнакансем пĕр çĕре пухăнни.

*Ионин кит* çын çиекен, çын çăтакан тинĕс кашкăрĕ, чи пысăк акула теекен пулă, тăршшĕ пĕр виç чалăша яхăн. 173 çулта акула пĕр матруса (шыв çинчи салтака) чăмăрла çăтса янă. Çав акула, тупăпа персен, матруса кăларса пăрахнă. Вăл салтака Европа тăрăх кăтартма илсе çӳренĕ.

Вĕренӳ словарĕнче вырăс сăмахĕсен лексика пĕлтерĕшĕпе пĕрлех вĕсен грамматика паллисене, парадигма йĕркисене, форма тăвассинчи уйрăмлăхсене тĕрĕс кăтартасси, вĕсене чăваш чĕлхин мелĕсемпе палăртма е килĕштерме пулăшасси тĕп вырăнта пулмалла. Анчах ку словарьте грамматика кă-

тартӑвӗсем пачах ҫук. Ҫӳлерех асӑннӑ кӗске очеркра та чӑваш чӗлхин грамматикине мар, вырӑс чӗлхин грамматика стройне ӑнлантарса пани кирлӗ пулнӑ.

Никольский словарӗн тепӗр уйрӑмлӑхӗ — пайӑр ятсене, вӑл шутра чӑваш ялӗсен, ҫынсен ячӗсене реестра кӗртни. Анчах кунта та тивӗҫлӗ системӑлӑх ҫук. Сӑм., *Абашево — Апаш, Абызово — Хапӑс* ял ячӗсене кӗртнӗ, *Чебоксары, Цивильск, Ядрин* йышши паллӑрах топонимсем кӗмесӗр юлнӑ. Лексика материалне ӑҫтан илни ҫинчен хушӑран скобкӑра асӑрхаттарусем парса пынӑ, анчах вӗсен йӗркине ҫирӗп тытман, кӗскетнӗ асӑрхаттарусен списокне те паман. Кӗнекере саспаллисене ылмаштарни, сӑмахсен формине пӑсса кӑтартни ҫине-ҫинех тӗл пулаҫҫӗ. Пӗтӗмӗшле хакласан, ку словарь чӑваш лексикографийӗн XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнчи шайне — унӑн ҫитӗнӗвӗсене те, ҫитменлӗхӗсене те лайӑх кӑтартса парать.

Чӑваш лексикографийӗн революцичченхи тапхӑрӗ ҫинчен каланӑ май, ҫак ӗҫре паллӑ этнограф В. К. Магницкий вӑйӑ хунине те палӑртмалла. 1884 ҫулта «Казанские губернские ведомости» хаҫатӑн 126-мӗш номерӗнче Золотницкий словарӗ ҫумне хушни (200 сӑмах ытла) пичетленсе тухнӑ. Ку материала Магницкий, словарь авторӗ унӑн страницисенче хушса-юсаса ҫырнисене пӗтӗмлетсе, пичетлеме хатӗрленӗ пулнӑ.

1905 ҫулта Хусанта Магницкин «Тӗне кӗмен чӑвашсен ячӗсем» («Чувашские языческие имена») ятлӑ кӗнеки пичетленсе тухнӑ. Ку вӑл чӑннипе самаях пысӑк словарь. Унта автор Хусан кӗпӗрнинчи Шупашкар, Етӗрне тата Чикме уесӗсенче пухнӑ 10,5 пин ытла арҫын ятне кӗртнӗ. Унашкал антропоними материалӗн пуххи Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсен мӗн юлашки вӑхӑтченех ҫукчӗ-ха (сӑмахран, тутар ячӗсен ӑнлантаруллӑ словарӗ 1981 ҫулта тин тухрӗ). Магницкий словарӗнчи ятсемпе Н. И. Ашмарин туллин усӑ курнӑ[16].

## 3 §. Совет влаҫӗн малтанхи вунӑҫуллӑхӗсенчи словарьсем

Октябрьти революци пирӗн ҫӗршыври халӑхсене политика, экономика тата культура ӳсӗмӗн анлӑ ҫулӗ ҫине кӑларчӗ, вӗсен чӗлхисене ирӗклӗн аталанма лайӑх майсем туса пачӗ. Чӑваш халӑхӗ те, харпӑр автономине туяннӑскер, тӑван чӗлхе пулӑшнипе ҫӗнӗ пысӑк задачӑсене татса пама тытӑнчӗ. Унӑн функцийӗсем государство тытӑмӗпе хуҫалӑх строительствинче, общество-политика пурнӑҫӗнче, ҫутӗҫпе культура, вӑл шутра массӑллӑ информаци тата илемлӗ литература сферисенче нумай сарӑлса пуянланчӗҫ. Чӗлхене ҫӗнӗ пурнӑҫ пу-

[16] Егоров В. Г. Асӑннӑ ӗҫ, 49 с.

лăмĕсемпе ăнлавĕсене палăртакан çĕршер те пиншер сăмах, чи малтан терминсем хутшăнчĕç. Революци хыççăнхи çулсенче халăхра хутпĕлменлĕхĕн йывăр еткерĕ сыхланса юлнă-ха, литература чĕлхи нормăланма тин пуçланă, терминологи ĕçĕн опычĕ пухăнайман, специалистсем те çитмен. Çак условисенче чăваш лексикографийĕн аталану кунçулĕ çав тери хăвăрт та çăмăл пулма пултарайман.

Вăрçăченхи тапхăрта (20—30-мĕш çç.) чĕлхеçĕсемпе культура ĕçченĕсен самаях пысăк ушкăнĕ словарь ĕçне хутшăннă. Вĕсем, тĕпрен илсен, çак задачăсене пурнăçлас тĕллевпе ĕçленĕ: терминологи ĕçне йĕркелесе тĕрлĕ отрасльсен словарĕсене хатĕрлесси; шкулсем валли вĕренӳ словарĕсем çырса хатĕрлесси; орфографие нормăлассн, кодификациленĕ словарьсем кăларасси; чăваш чĕлхин сăмах пуянлăхне пухса пĕтĕмлетесси, ăна словарь жанрĕнче çутатса парасси. Нумайăшĕн ĕçĕнче ку задачăсем пĕр-пĕринпе уйрăлми тачă çыхăнса тăнă.

Чăваш алфавитне лайăхлатас, орфографи принципĕсемпе правилисене йĕркелес, нормăллă словарьсем хатĕрлес, чăваш терминологине аталантарас, тĕрлĕ йышши терминологи словарĕсем хатĕрлесе кăларас ĕç мĕнле аталанса пынине пирĕн наука литературинче, уйрăммăн илсен, Н. П. Петров ĕçĕсенче тĕплĕн çутатса панă[17]. Кунсăр пуçне орфографи тата терминологи ыйтăвĕсене чăваш уйрăмĕнчи ятарлă курссенче пăхса тухаççĕ. Çавăнпа та кунта эпир халăхăн анлă массисем усă курма, вăл шутра шкулсем валли хатĕрленĕ тĕп словарьсем çинче çеç кĕскен чарăнса тăрăпăр.

Октябрьти революци хыççăн тухнă паллăрах словарьсенчен малтанхи — Н. В. Никольскин «Чăвашла-вырăсла кĕске словарĕ». Ăна Хусан кĕпĕрнин çутĕç пайĕ 1919 çулта пичетлесе кăларнă. Словарь калăпăшĕ пысăках мар, унта 5 пин сăмаха яхăн. Умсăмахра пĕлтернĕ тăрăх, ку вăл — автор хатĕрленĕ тулли чăвашла-вырăсла словарĕн шкул нушисене асра тытса йĕркеленĕ кĕске варианчĕ. Словарьсене лексикăпа фразеологи, халăх сăмахлăх материалĕпе пуянлатма кирлĕ тесе, автор вулакансене фольклор, мифологи, этнографи, ономастика сведенийĕсем ярса пама ыйтать. Кĕнеке вĕçĕнче материал пухмалли инструкци, кунсăр пуçне ваттисен сăмахĕсен пуххи (55 единица), чăваш чĕлхипе тухнă тĕпчев ĕçĕсемпе словарьсен списокĕ пур.

Ку словаре, пĕтĕмĕшле илсен, лайăх хак пама пулать. Унта чăваш чĕлхинчи сăмах йышĕн чи кирлĕ пайне кĕртнĕ; словникра пĕтĕм халăх усă куракан сăмахсем ытларах. Çав

[17] Петров Н. П. Чувашская терминология: Учебное пособие / Чуваш. ун-т. Чебоксары, 1979; Чувашский язык в советскую эпоху: Развитие социальных функций и литературных норм. Чебоксары, 1980. Ку кĕнекесенче пуян библиографи, словарьсен списокĕсем пуррине палăртмалла.

хушăрах хăшпĕр архаизмсем, диалект сăмахĕсем тĕл пулаççĕ. Анчах словникăн пĕр пысăк çитменлĕх пур: кунта революци умĕн тата Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче пичетре çеç мар, халăх чĕлхинче те çӳреме пуçланă çĕнĕ сăмахсене пачах кĕртмен. Статьясенчи иллюстраци материалĕн содержанийĕ те совет саманин идеологийĕпе сахал çыхăннă. Сăм., *ирĕк* 'воля; свобода; власть' статья пĕр страницăна яхăн йышăнать, анчах *канаш ирĕкĕ* 'советская власть' йышши тĕслĕхсем çук. Çав вăхăтрах унта тĕн-тĕшмĕшлĕх ăнлавĕсемпе çыхăннă, çĕнĕ, социализмлă пурнăç тăвас задачăсемпе килĕшсе тăман тĕслĕхсем чылай. Автор тĕн кĕнекинчен илнĕ пысăк цитата парать: «çӳлти ирĕке, çĕр çинчи ирĕке пурне те мана панă». *Ӳт* 'тело' статьяра *ӳте кĕни* 'разговенье', *ӳтрен тухни* 'заговенье'; *сулу* 'колдовство' статьяра—*турă-сулу* 'бог-дуновение'; *сурăм* 'особый обряд' статьяра — *сурăм чӳкле* 'совершать моление сурăм' йышши тĕслĕхсем панă. *Сик* 'прыгать, скакать' статьяра çапла çырнине вулатпăр: «кĕтессе, никĕс айне вилнĕ çын чĕрнине хурсассăн, çав кĕтес сикет, теççĕ».

Шкул словарĕн дидактика тĕллевлĕхне, воспитани ĕçĕнчи пĕлтерĕшне уяман пирки кивĕ пурнăç йăли-йĕркипе, ăнланăвĕсемпе çыхăннă юрăхсăр тĕслĕхсем те нумай словарьте. Акă, *ӳсĕр* 'пьяный' статьян пĕтĕм содержанийĕ çак пуплевре: «хăнисем ӳсĕр кайсан, хуçи вара: хăнасем пит аван кайрĕç, тесе калать». *Пукрав ĕç* 'пировать на Покров', *юмăç аван пăхатăр* 'хорошо ворожите' йышши тĕслĕхсем шкул словарĕнче вырăнсăрри те кĕретех.

Никольскин çӳлерех пăхса тухнă вырăсла-чăвашла словарĕпе танлаштарсан, ку словарьте лексикографи техникипе методикине чылай çирĕпрех йĕркелесе тытса пынă, анчах çитменлĕхсем кунта та нумай, автор уçăмлă программа тăрăх ĕçлеменни палăрать. Çавна пула пĕрешкел пулăмсенех тĕрлĕ мелпе çырса кăтартнă.

Уйрăм сăмахсемпе юнашах словника пĕрлĕхлĕ пĕлтерĕшпе палăрса тăракан анлă ятсем тата ирĕклĕ сăмах пĕрлешĕвĕсем те кĕртнĕ, сăм., *хура лаша, ӳси-ӳсми хĕрсем, тиха чирĕ, чӳрече питĕркĕчĕ* т. ыт. те. Çавнашкал единицăсенех нумай чухне тĕп (е пĕрремĕш) компонент статйинче парса пынă. Акă, *çырла* 'ягода' статьяра нумай çырла ячĕсене илсе кăтартнă: *чие çырли* 'вишня', *хура çырла* 'черника', 'ежевика', *кăвак çырла* (куçарман). *Хура* компонентлă сăмах пĕрлешĕвĕсене вара пурне те уйрăм статьян панă: *хура курак* 'грач', *хура карас* 'линь', *хура тăпра* 'чернозем', *хура тăхлан* 'свинец' т. ыт. те.

Иккĕмĕшле сăмахсене вырнаçтарассинче те çирĕп йĕрке çук: вĕсене пĕр çĕрте тĕп сăмахăн статйинче, тепĕр çĕрте уйрăмшарăн, реестрта панă. Тĕслĕхсем: *çыр* 'писать' статьяра — *çыра* 'писало', *çыру* 'письмо', *çырни* 'удел, судьба'; *çых*

'вязать' статьяра *çыхă* 'связка', *çыхлан* 'связываться' дериватсене куратпăр, çавăн хыççăнах уйрăм статьяра — *çыхлантар*. *Чĕл* 'щепать' глаголран пулнă *чĕлĕ* 'ломоть', *чĕлкĕм* 'волокно' — уйрăм статьясенче т. ыт. те.

Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен семантика тытăмне уçăмлăн кăтартни ку словарьте те çук-ха: вĕсен пĕлтерĕшĕсене пурне те уçса паман, ятарлă мелсемпе пĕр-пĕринчен уйăрман. Синонимсене, сăмах варианчĕсене ытларах чухне тĕп варианчĕпе пĕр статьяра панă, уйрăмшарăн вырнаçтарнă чухне вĕсене тупмалли кăтартусене сахал сăмах çумĕнче курма пулать. Омоним сăмахсене уйрăммăн панине лексикографи методикинчи çĕнĕлĕх темелле. Акă, словарьте *çу* омонимсем 4, *çул* омонимсем 3 панă. Анчах ку йĕркене тытса пыман тĕслĕхсем те чылай. Сăм., *суха* статьяра 'пахота' тата 'жабры' пĕлтерĕшлĕ омонимсене пĕрлештернĕ. Çав вăхăтрах *си* сăмахăн 'волокно' тата 'слой' пĕлтерĕшĕсене уйрăмшарăн панă. Ку çитменлĕхсем, паллах, вăл вăхăтра чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче семасиологи ыйтăвĕсене питĕ сахал тĕпченипе çыхăннă.

Статьясенчи иллюстраци тĕслĕхĕсене вырнаçтармалли уçăмлă система çук пулин те, вĕсене куçарас енĕпе ку словарьте пĕрешкеллĕх ытларах: малтан чăвашла тĕслĕхне, унтан вырăсла куçарăвне çырнă. Никольскин пĕрремĕш словарĕнчи пек тĕслĕхсене иккĕмĕш чĕлхене куçармасăр хăварни çук.

20—30-мĕш çулсенче чăваш шкулĕсенче вĕренекенсем те, çитĕннисем те А. Т. Быковăн «Вырăспа чăваш сăмахĕсен пĕчĕк словарĕ» (Краткий словарь общеупотребительных русских и чувашских слов) ятлă кĕнекипе анлăн усă курнă. В. Г. Егоров ăнлантарнă тăрăх, ăна Быков революциччен темиçе те тухнă учебник — «Чăвашсене вырăс чĕлхи вĕрентмелли пуçламăш кĕнеке» (Первоначальный учебник русского языка для чуваш) тăрăх йĕркелесе хатĕрленĕ. Унăн авторĕ Хусанти семинари учителĕ Ф. Н. Никифоров пулнă тесе шутлаççĕ, пĕрремĕш кăларăмĕ 1892 çулта тухнă[18].

Быков словарĕн пĕрремĕш кăларăмĕ 1924 çулта тухнă, каярахпа ăна тата икĕ хутчен çĕнетсе пичетленĕ. Словаре калаçу кĕнеки (разговорник) принципĕпе çырса хатĕрленĕ: сăмахсене тематика ушкăнĕсем тăрăх вырнаçтарнă, кашни ушкăн хыççăн, сăмахсене çыхăнтарса пуплев йĕркелеме пулăшас шутпа, темиçе предложени куçарса кăтартнă. Кĕске умсăмахра чăваш текстне, унти сăмахсемпе саспаллисене тĕрĕс вуламалли канашсем пур. Малтанхи кăларăмра пурĕ 59 тематика ушкăнĕ пулнă, виççĕмĕшĕнче (1933 ç.) 54 юлнă, вĕсен йĕрки улшăннă, содержанийĕ те чылай çĕнелнĕ. Малтан ытларах çутçанталăк, йăла пурнăçĕ, ансат ĕç-пуç хатĕрĕсене

---

[18] Егоров В. Г. Асăннă ĕç, 38, 69 с.

ăнлантарнă пулсан, виççĕмĕш кăларăмра социаллă пурнăç, социализм строительстви, çĕнĕ культура ăнлавĕсене каласа ăнлантарма тимлени сисĕнет. Сăмахсен, уйрăмах пуплев тĕслĕхĕ вырăнне панă предложенисен содержанийĕ вулакансен пĕлӳлĕхне ӳстерес, çавăн пекех политикăлла воспитани парас тĕллевсемпе килĕшсе тăрать. Юлашки кăларăмра предложенисене çыхăнтарса панă, вĕсем политпĕлӳ учебникĕн сыпăкĕсем евĕр пулса тухнă.

Лексикографи техники тĕлĕшĕнчен çак уйрăмлăхсене палăртмалла. Ушкăнсенче сăмахсене алфавит йĕркипе е логика сĕмĕпе вырнаçтарса паман, çавăнпа та кирлĕ сăмаха тупасси чăрмавлă. Ушкăнĕсем хăйсем ытла та вакă, вĕсене йĕркеленинче классификаци принципĕ сисĕнмест. Сăмахсемпе пĕрлех анлă ятсене, уйрăмах çĕнĕ пурнăçпа çыхăннă çирĕп пĕрлешӳсене, аббревиатурăсене те реестра кĕртнĕ, сăм.: *колхозное строительство — колхос ĕçĕсене туни, с.-х. коммуна — йалхуçалăх комунĕ, правый оппортунизм — сылтăм оппортунисăм, товарищеский суд — йулташлă сут, Чувашпрофсовет — Чăваш профсойуссен канашĕ* т. ыт. те. Вĕренӳ тĕллевĕсене асра тытса, вырăс сăмахĕсенче ударени палли лартнă, грамматика несĕлне уйăрма кансĕр чухне (сăм., *ь* паллăпа пĕтекен сăмахсенче) тивĕçлĕ кăтартусем панă. Вырăс глаголĕсен инфинитив формине *-ас, -ес* аффикслă пулас причастипе куçарнă. Глаголсен ушкăнĕ хыççăн вĕсене сăпатласа кăтартнă. Кулленхи сăмахсене лексика эквиваленчĕсемпе куçарнă, чылай чухне темиçе синоним илсе кăтартнă. Çĕнĕ терминсене ăнлантарса çеç панă, вĕсем валли чăвашла эквивалент хайлани сайра. Вырăс чĕлхинчен кĕрсе «чăвашланнă» эквивалентсем ытларах тĕл пулаççĕ: *ударник — утарнĕк, аспирин — аçпирин, рецепт — ретсеп, футбол — футпол, гитара — киттар* т. ыт. те. Вĕсенчен хăшне-пĕрне ăнлантарса панă: *барометр — парометр;* çанталăк улшăнассине кăтартакан хатĕр; *партия — парти*; класăн малта пырса, ăна ертсе пыракан паттăр чăмăрĕ т. ыт. те.

Словарĕн виçĕ кăларăмĕнчи материала танлаштарса тишкерни питех те усăллă: çакă вăл чăваш литература чĕлхи мĕнле аталанса нормăланнине, графикăпа орфографи улшăнăвĕсене, терминологи пуянланса пынине, çавăн пекех чăваш лексикографийĕнче ăнăçлăрах мелсемпе меслетсем çирĕпленнине асăрхама май парать.

1924 çулта Шупашкарта Н. И. Ванеркке çырнă «Ют чĕлхесенчен хутшăннă сăмахсен пĕчĕк словарĕ» пичетленсе тухнă. Ку вăл чăваш лексикографийĕнче хăйне евĕрлĕ çĕнĕлĕх пулнă, мĕншĕн тесен унта сăмахсене несĕлне кура суйласа кĕртнĕ. Авторĕ словаре хатĕрленин историйĕ çинчен умсăмахра кĕскен каласа парать: «Ют чĕлхесенчен хутшăннă сăмахсен словарĕ кунран-кунах кирлĕрех пулса пынине курса,

«Канаш» хаçат çинче те ют сăмахсем нумайланса пынине кура, эпĕ.. словарь çырма тытăнтăм.

Хам ĕçре эпĕ пуринчен ытла икĕ словарьпе усă куртăм: Волин, Кривцов т. ыт. çырнă «Популярный политический словарь», тепри — Майдановпа Рыбаков çырнă «Новый карманный словарь иностранных слов»...

Малтан эпĕ словарь çине политика сăмахĕсене анчах мар, **авалтанпах халăх хушшинче çӳрекен сăмахсене** те кĕртме шутланăччĕ, кайран вĕсене, ЧУС хушнипе, кăларса пăрахмалла пулчĕ.

Ман шутпа, çак словарь — ялти шкултан вĕренсе тухнă çынна хаçатсем, кĕнекесем вуланă чух питĕ кирлĕ япала».

Европăри хальхи чĕлхесенчен тата хăшпĕр тухăçри чĕлхесенчен кĕнĕ, çавăн пекех авалхи грек тата латин тымарĕсенчен пулнă сăмахсем словарьте 1100 яхăн. Вĕсем хушшинче хăшпĕр вырăс сăмахĕсем те пур. Ку шутра — политика, наука, культура, техника терминĕсен тăтăшрах тĕл пулакан ушкăнĕсем. Сăмахсене хăйне майлă алфавит йĕркипе вырнаçтарнă: а, у, ы, ă, е, ӳ, и, ĕ, к, х, п, т, ть, ч, ш, с, ç, л, ль, м, н, нь, р, в, й, ю. Уйрăм сăмахсемсĕр пуçне словника анлă терминсене (сăм., *актсионерлă комппани, Верссаль килĕшĕвĕ, кустарла промышленнăç, наукăлла сотсиалисăм* т. ыт. те), абрревиатурăсене *(ÇЕП — çĕнĕ еккономи политтĕкĕ; С.К.Р.С. — Сотсиалисăмла Канаш Респупликĕсен Сойусĕ)*, çĕршывсемпе континентсен, хăшпĕр паллă çынсен ячĕсене *(Росă Льюкçемпурк, Карл Липкнĕхт, Ленин)*, организацисемпе пĕрлешӳсен ячĕсене *(интернационал, Антанта)* кĕртнĕ. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене цифрăсемпе уйăрнă, ку меле автор хăй усă курнă словарьсенчен илнĕ. Терминсен дефиницийĕсене самаях ăнăçлă, ăнланмалла куçарнă. Тĕслĕхсем:

*Актă* лат. 1) ĕç пулни; 2) пĕр-пĕр ĕç çинчен, куракансем чăнах та çапла пулчĕ, тесе çырнă хут; 3) сут таврашĕнче — саккунсем, ĕçе кăтартакан хутсем; 4) театтăрта — пйессăн пысăк татăклă пайĕ, сыпăкĕ.

*Тинаçти* крек. патша йăхĕ.

*Мираш* хран. таçти инçетри йапаласем умри пек курăнакан йавлени; çутă пĕр пек ăшă мар сывлăш витĕр тухса хуçăлнăран пулать.

Çапла ĕнтĕ, ку кĕнеке чĕлхе (филологи) словарĕпе энциклопеди словарĕн уйрăмлăхĕсене пĕрлештерсе тăракан хутăш йышши пособи пулнă. Культура революцийĕ, активлă чĕлхе строительстви условийĕсенче вăл халăхăн политикăлла тавракурăмне сарас, чăваш чĕлхинче çĕнĕ терминологие тымарлантарас ĕçре пысăк усă панă.

Анчах çӳлерех пăхса тухнă словарьсем чăваш шкулĕн, куçаруçăсен, çавăн пекех анлă массăсен пур ыйтăвĕсене те

тивĕçтереймен. Чăвашсем хушшинче ĕçлекен вырăс чĕлхиллĕ работниксем валли те пособи кирлĕ пулнă. Çавăнпа та Чăваш АССР Çутĕç комиссариачĕ вырăсла-чăвашла вĕренӳ словарĕ хатĕрлеме ятарласа ушкăн уйăрнă. 1931 çулта словарь пичетленсе тухнă. Авторсен коллективĕнче — вăл вăхăтри çутĕçпе культурăн паллă деятелĕсем Н. И. Ванеркке, А. И. Ярлыкин, Ф. К. Кузьмин, А. П. Петров, А. Т. Варфоломеев, К. М. Никишев, Г. Т. Тимофеев, М. Д. Данилов, В. П. Катрамов, Н. А. Андреев. Вĕсен материалне чăвашсен пултаруллă чĕлхеçи Т. М. Матвеев редакциленĕ. Редактор умсăмахĕнче кăтартнă тăрăх, вăл çак ĕçе чĕлхе наукипе дидактика принципĕсене асра тытса тунă. Тĕрĕссипе Т. М. Матвеев словаре пачах çĕнĕлле юсаса лайăхлатнă. Чăваш вĕренекенĕсене вырăс чĕлхин хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхĕсене ăса хывма пулăшас тесе, вырăс сăмахĕсенче ударени лартнă, глагол вичĕсене кăтартнă, яланхи парадигмăран пăрăнакан формăсем пирки асăрхаттарнă. Анчах вăхăт çитмен пирки ку ĕçе вĕçне çитереймен.

Словарĕн паллă принципĕ — суйлавлăх. Вырăс сăмахĕсенчен шкул нушисене тата социаллă пурнăçпа культура ыйтăвĕсене тивĕçтерме кирлисене суйласа илнĕ. Словникра пурĕ 7 пин сăмаха яхăн шутланать, çак йыша тĕп сăмахсен статйисенче пăхса тухнă иккĕмĕшле сăмахсем те кĕреççĕ. Чăваш сăмахĕсенчен литература чĕлхин нормисене (ун чухнехи виçепе, паллах) тивĕçтерекеннисемпе усă курнă, диалект элеменчĕсене суйласа кĕртмесĕр хăварма тăрăшнă.

Пысăк квалификациллĕ ученăй пулнă май, Матвеев сăмахсен грамматика паллисене лексикографи мелĕсемпе кăтартса парасси пирки тимленĕ. Умсăмахра вăл чăваш чĕлхинчи паллă ячĕсемпе причастисен ахаль формипе (сăм., *усал, вĕренекен, вĕренмелле*) палăрту формисенчен *(усалли, усалскер; вĕренекенни, вĕренекенскер; вĕренмелли, вĕренмеллескер)* малтанхине кăна илнин сăлтавĕсене уçса парать. Чăваш лексикографийĕнче, ытти чĕлхесенчи пекех, вырăс глаголĕсен инфинитив формине (вăл словарьсенче тĕп форма шутланать) тӳр килекен форма тупасси йывăр ыйту. Сăмахсене вырăсла-чăвашла йĕркепе вырнаçтарнă чухне, урăхла каласан, контекст тулашĕнче вырăсларан куçарнă чухне кивĕ алçыру словарĕсенче те, А. Т. Быков словарĕнче те *-ас, -ес* аффикслă причасти формипе усă курнă. Н. В. Никольский словарĕнче çеç хушу наклоненийĕн 2-мĕш сăпат формине панă. Матвеев каланă тăрăх, вырăс инфинитивне, сăм., *писать* глагола тĕрлĕ контекстра чăвашла тăватă формăпа куçарма пулать: *çырас, çырма, çырасшăн, çырмашкăн.* Анчах сăмах тĕпĕпе тӳр килекен хушу наклоненийĕн форми, семантика уйрăмлăхне пăхмасăр, словарьшĕн вĕсенчен меллĕрех, мĕншĕн тесен пур формăсем те унран пулаççĕ. Словарьте лексика эквиваленчĕ шучĕпе

*ҫырас, ҫырма, ҫырасшăн* е *ҫырмашкăн* тăрас пулсан вара чăваш чĕлхине пĕлмен ҫыншăн глагол тĕпне тупасси питĕ йывăр пулĕччĕ. Қалăпăр, словарь *явас* форма парсан, ун тĕпне тупма *-ас* сыпăка уйăрса илмелле. *Вулас* сăмахран *-ас* уйăрса илсен вара *вул* юлать, вăл глагол тĕпĕ пулмасть. Ҫавнашкалах *ҫырма* формăран *-ма* уйăрса илсен, сăмах тĕпĕ тĕрĕсех тупăнать, *пама* формăпа ун пек тума ҫук, мĕншĕн тесен унта сăмах тĕпĕнче *р* сасă тухса ӳкнĕ, вăл *па* мар, *пар* пулмалла.

Словарĕн грамматика аппарачĕ самаях пуян. Қашни сăмах ҫумĕнче вăл мĕнле пуплев пайĕ пулнине кăтартнă. Ку вăл уйрăмах пĕрешкел ҫырăнакан причастисемпе паллă ячĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма кирлĕ. Япала ячĕсен грамматика несĕлĕпе камăнлăх падежĕн (родительный падеж) суффиксĕсене панă. Глаголсенне, видсăр пуҫне, сăпатлану тĕсне (1 тата 2 сăпатлану), ăраснаlăх, сăм. сасă ылмашăвĕ пур чухне сăпат формисене те илсе кăтартнă. Наречисемпе пĕр пек калаhакан, анчах урăхла ҫырăнакан предлоглă формăсене танлаштарса ăнлантарнă, сăм., *оттого* — *от того*. Вырăс вулакансене пулăшас шутпа чăваш чĕлхинчи сасăсем ҫинчен, вĕсене ҫырура палăртмалли мелсен уйрăмлăхĕ ҫинчен кĕскен ăнлантарса панă.

Словника шкул ĕҫĕнче кирлĕ хăшпĕр пайăр ятсене кĕртнĕ. Сăмахсен тĕрлĕ пĕлтерĕшĕсене ятарлă паллăпа (||) уйăрнă, омонимсене тĕрлĕ статьясенче пăхнă. Куҫару мелĕсенчен, сăмах уйрăмлăхне кура, лексика эквиваленчĕпе е синонимсемпе усă курнă, кирлĕ чухне куҫару ҫумне ăнлантару хушса панă е куҫармасăрах ăнлантарнă. Реестрти вырăс сăмахĕсен варианчĕсене пĕр статьяра парса, пĕр ҫĕрлĕн ăнлантарнă. Иллюстраци тĕслĕхĕсене виҫеллĕ, кирлĕҫемĕн парса пынă, ку вăл кĕнеке калăпăшне чакарма май панă. Тĕслĕх компоненчĕсем факультативлă пулсан, вĕсене скобкăна илнĕ. Хушма ăнлантару сăмахĕсене те ҫавăн пек панă. Ҫакă вăл лексикографин перекетлĕ, информаци тĕлĕшĕнчен тухăҫлă мелĕ пулса тăрать. *Плотный* сăмахăн *питĕ* эквиваленчĕ хыҫҫăн *(пир)* тесе кăтартнă, ҫапла майпа унăн пĕлтерĕшне тĕрĕсрех ăнланма пулăшнă, *питĕ* 'очень' омонимĕпе пăтраштарасран асăрхаттарнă. *Плашмя* наречие *лапкипе* тесе куҫарнă, пĕлтерĕшĕ уҫăмлă пултăр тесе *(вырт)* хушса хунă.

Словарь статйисен тытăмĕпе лайăхрах паллашма темиҫе статья илсе пани вырăнлă пулĕ:

*карта,* ы, *ж.* тусен, шывсен, тинĕссен, хуласен, йалсен тата ытти вырăнсен те ӳкерчĕкĕ, планĕ; || выльамалли карт; || апат ҫитернĕ ҫĕрте апат-ҫимĕҫсене ҫырнă хут; || фотографическая карточка, ҫутăпа ӳкернĕ сăн.

*комсомол* (коммунистический союз молодежи), а, *м.* ҫамрăксен коммунисла сойусĕ.

*плести* (-ту, -тешь), 1, *нес.* ав (çатан), *хуç* (çăпата), *çых* (чĕнтĕр, шăтăкла), çивĕтле (çӳç); || суйеçтер, тем те пĕр кала.

*затем, нар.* вара, унтан вара, унтан, çавăн хыççăн, кайран; *за тем,* лешин хыççăн.

*один, чис. к.* пĕрре: один нож, пĕр çĕçĕ; одна корова, пĕр ĕне; одно окно, пĕр чӳрече; один из них, вĕсенчен пĕри; по одному, пĕререн; *одинокий, прл.* пĕччен, мăшăрлă мар (йапала); *одиночество,* а, *ср.* пĕччен пурăнăç; *однажды, нар.* пĕрре, пĕр хут; *однобортный, прл.* хăрах аркăллă, хăрах айаклă; *одновременно, нар.* пĕр вăхăтра; *одновременный, прл.* пĕр вăхăтри; *одногодок,* дка, *м., однолеток,* тка, *м.* тантăш, пĕр çулти; *однодворец,* рца, *м.* улпутсен йăхĕнчен тухнă хресчен; *однодневный, прл.* пĕр кунхи, пĕр кунлă; *односторонний, прл.* пĕр йенлĕ; || пĕр енчен анчах пăхакан; хăй куçĕпе анчах пăхакан; *одноколка,* и, *ж.* икĕ кусатăранлă (кустăрмаллă, кускăчлă) урапа.

Словарьте çитменлĕхсем пачах çук теме май килмест. Чи малтанах, словника пĕр принциппа калăпламанни сисĕнет: кашни автор ăна хăй пĕлнĕ-чухланă пек йĕркеленĕ. Çавăнпа та шкул валли хатĕрленĕ пособире кирлĕ нумай сăмахсем сиксе юлнă (сăм., *задача, задачник, колхоз, колхозник, нагибаться, одиннадцать, парта, полюс, сонный* т. ыт. те). Чылай сăмахсем вара кунта кĕретех ытлашши е вырăнсăр (*девичник, морфинизм, намедни, пазьмо, разумник, распыл, шаманизм, шинкарь, яроводье* т. ыт. те). Пĕр тематика ушкăнĕнчи сăмахсене е тĕп сăмахсен деривачĕсене тĕрлĕ майпа çырса кăтартни те çавăнтанах килнĕ. Хисеп ячĕсене тата вĕсенчен пулнă сăмахсене, вăл шутра хутлă сăмахсене, ниmĕнле системăсăр парса пынă. Халăх çынни ячĕсенчен *латыш* пур, *грузин, армянин* т. ыт. çук, топонимсенчен *Алатырь* пур — *Чебоксары, Ядрин* çук, *Альпы* пур — *Кавказ, Урал* çук, çĕршыв ячĕсенчен *Англи* пур — *Франци* çук т. ыт. те.

Хăшпĕр чухне вырăс сăмахĕсен статйинче лексика эквиваленчĕ паман, унăн пĕлтерĕшне ăнлантарнă çеç. Ытти статьясенче вара тивĕçлĕ лексика эквиваленчĕпе чăваш текстĕнче усă курнă. Сăм., *заговор, республика* сăмахсене куçарман, ăнлантарнă çеç, урăх статьясенче вара *сакăвăр, респуплĕк* сăмахсемпе усă курнă. Çавнашкалах лексика эквиваленчĕ шутĕнче пулман *анархисăм, итеал, науккă, пйессă, органисăм, орккестăр, тсирк* т. ыт. сăмахсене словарĕн ăнлантару текстне кĕртни те лексикографи методики тĕлĕшĕнчен пысăк çитменлĕх пулать.

Уйрăм сăмахсен ăнлантарăвĕ филологи словарĕн картĕнчен тухать, энциклопедилĕх енне туртăнать (сăм., *амфибия, газ, интернационал, Ленин, материализм* т. ыт. те). Тĕслĕхшĕн икĕ статья илсе кăтартар:

*Америка,* и, *ж.* Америк; Атлант оккеанěпе Аслă (Лăпкă) оккеан хушшинче выртакан маттерик. XV-мěш ěмěрте Христофор Колумп Америке тěл пулаччен Америк ҫинчен Йевроппăри ҫынсем нимěн те пěлмен. Америк ҫěрě Панам мăйěпе икě пайа уйăрлса тăрать: Ҫурҫěр Америк, Кăнтăр Америк; час-часах Америк тесе кěскен Ҫурҫěр Америкри штатсен респуплěкне калаҫҫě.

*интернационал,* а, *м.* пěтěм тěнчери рапоччисем пуршуаҫипе кěрешме орканисатсиленě пěрлешӳ. Чи малтан ăна пěтěм тěнчери рапоччисене вěрентекен К. Маркс 1864-мěш ҫулта орканисатсиленě. Ҫав интернатсионал 1873-мěш ҫулта саланса, 1889-мěш ҫулта II-мěш интернатсионал орканисатсиленнě, анчах унта пуршуйсен лаккейěсем сотсиал-темократ-меньшевиксем йышшисем чылайăн кěрсе, пуршуйсен ěҫне тунă пирки ку интернатсионал та 1914-мěш ҫулта пěтсе ларнă. 1919-мěш ҫулта вара мартăн 4—7-мěшěсенче Влатимěр Илйич Ленин тăрăшнипе III-мěш интернатсионал орканисатсиленнě. Вăл халě пěтěм тěнчери рапоччисене пуршуаҫипе кěрешес тěлěшěнчен хăватлăн йертсе пырать.

## 4 §. В. Г. Егоровăн «Чăвашла-вырăсла словарě»

Чăваш лексикографийěнче паллă чěлхеҫě ученăй Василий Георгиевич Егоров палăрмалла йěр хăварнă. Унăн пěрремěш лексикографи ěҫě—«Чăвашла-вырăсла словарь»—1935 ҫулта пичетленсе тухнă, ăна С. Ф. Фомин (Хумма Ҫеменě) писатель редакциленě. Титулта: «ЧАССР Халăх ҫутěҫ комиссариачě шкулсенче усă курма йышăннă», тесе палăртнă, анчах тěрěссипе ку вăл анлă тěллевлě, вулакансен тěрлě ушкăнěсен ыйтăвěсене тивěҫтерме пултаракан самаях тулли словарь пулнă. Автор кăтартнă тăрăх, унăн словникěнче 25 пин сăмаха яхăн.

Умсăмахра автор, словарь тěллевěсене палăртса, чăваш лексикин совет саманинчи аталанăвě, унти тарăн улшăнусемпе ҫěнěлěхсем ҫинчен калать. Словарьте пěтěм чăваш лексики туллин сăнланманнине асăрхаттарса, вăл малалла ҫапла ҫырать: «Автор хăй умне ҫакăн пек задача лартнă: тěпрен илсен, чăваш ěҫҫыннисен — активлă рабочисемпе колхозниксен кулленхи калаҫăвěнче, ку чухнехи илемлě литературăпа вěренӳ кěнекисенче, хаҫат-журналсенче тăтăшах тěл пулакан сăмахсене пухса кăтартасси».

Ҫěнě вăхăтри калаҫу тата ҫырулăх чěлхине тишкернипе пěрлех чěлхеҫě чăваш лексикографийěн палăкěсемпе — алҫыру халлěн упранакан е пичетленнě словарьсемпе, вăл шутра Дамаскин, Золотницкий, Паасонен, Никольский словарěсемпе, Ашмарин словарěн малтанхи пилěк кăларăмěпе усă курнă. Ҫав словарьсенче, тесе палăртнă умсăмахра, кивě лексика ҫеҫ

пур, вĕсене ҫырнăранпа чăваш чĕлхи нумай сăмахсемпе, чи малтан пачах ҫĕнĕ содержаниллĕ общество-политика тата наука-техника терминĕсемпе пуянланнă, кивĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсем те чылай чухне аталанса ҫĕнелнĕ. «Питĕ ансăр ятарлă пĕлтерĕше палăртакан сăмахсене, чиркӳпе миссионерсен сăмахĕсене словаре кĕртмен. Хăшпĕр кивелнĕ сăмахсене — пачах манăҫ пулнисене е диалектсенче вată ҫынсен калаҫăвĕнче тĕл пулаканнисене — словаре наука тĕллевĕсене асра тытса кĕртнĕ. Вĕсене тишкерсе тата урăх чĕлхесенчи тивĕҫлĕ сăмахсемпе танлаштарса, тĕпчевҫĕсем наука вывочĕсем тума пултарĕҫ».

Шел пулин те, словарь тытăмĕпе лексикографи принципĕсем, унта усă курма пăхнă методика мелĕсем ҫинчен умсăмахра нимĕн те каламан. Кĕскетӳсен списокĕнче грамматика уйрăмлăхĕсене кăтартмалли паллăсем, ҫавăн пекех сăмахсен чĕлхе системинчи вырăнне, функцийĕсене кăтартакан хăшпĕр паллăсем пур: *уст.* (кивелнĕ сăмах), *диал.* (диалект сăмахĕ), *неол.* (ҫĕнĕ сăмах). Ҫакă вăл автор словарьте литература чĕлхин норма чиккисене палăртма тăрăшни ҫинчен калать. Сайра-хутра, хăшпĕр йышăннă сăмахсем ҫумĕнче этимологи асăрхаттарăвĕсем пур. Чăваш саспаллийĕсене мĕнле вуламалли правилăсем панă, унта *б, г, д, ж, з* саспаллисене йышăннă сăмахсенче ҫеҫ ҫырнине палăртнă. Словарь вĕҫĕнче чăваш чĕлхе грамматикин кĕске очеркне хушса панă.

Ҫирĕм ҫула яхăн иртсен, 1954 ҫулта, ҫак словарĕн иккĕмĕш кăларăмĕ тухнă. Ҫав хушăра чăваш лексикинче пысăк улшăнусем пулса иртнĕ, нормăлав ыйтăвĕсене нумай енчен ҫĕнĕлле татса панă, авторăн лексикографи ăнланăвĕсем те аталаннă. Ҫавна пула словарĕн пĕрремĕшпе иккĕмĕш кăларăмĕсем хушшинче пысăк уйрăмлăхсем курăнаҫҫĕ. Танлаштарма меллĕрех пултăр тесе, малтан пĕрремĕш кăларăмне тĕплĕн пăхса тухăпăр.

Словарь реестрĕнче пĕтĕм халăх усă куракан, литература чĕлхине кĕрсе вырнаҫнă нейтраллă лексика тĕп вырăн йышăнса тăрать. Анчах, автор литература чĕлхин нормисене уяма тĕллев тытнă пулин те, вăл вăхăтри чĕлхе аталанăвĕ, орфографипе терминологири кодификаци шайĕ ку тĕллеве пĕтĕмпех пурнăҫламалăх майсем туса паман-ха. Ахальтен мар словникра диалект сăмахĕсем, тӳрккес пуплев тата калаҫу формисем нумай. Чылай чухне вырăнти е пуплеври тĕрлĕ вариантсене норма тĕлĕшĕнчен уйăрса хак памасăр, пĕр статьяра парса пынă, сăм.: *кăвайтă, кăвайт, кăвать* 'щепки'; *кук, кукă, куккук* 'кукушка'; *куршанак, кушанак, куршанка, куршанкă* 'репей, репейник'; *макаш, макăш, макаҫ* 'снегирь'; *ҫулҫă, ҫулчă (шулчă)* 'лист (древесный)'; *тирӳҫĕ, тирĕҫĕ, тиреҫе* 'овчинник, кожевник, скорняк'. Норма уҫăмсăрлăхĕ тин ҫеҫ вырăс чĕлхинчен кĕнĕ терминсене ҫырнинче те палăрать: *нот, нут,*

*нотă* 'ноты (в музыке)'; *округ, окрăк* 'округ'; *пери, перо* 'перо; *талон, талун* 'талон' т. ыт. те. Реестрта иккĕмĕш е виççĕмĕш вырăнта тăракан сăмахсене нумайăшне уйрăммăн, хăйсен алфавит вырăнне кĕртсе те панă, тĕп сăмахне пăхма кирлине асăрхаттарнă, анчах çак йĕркене çирĕп тытса пыман. Алфавит тăрăх вариантсем çывăх лекеççĕ пулсан, тĕп мар формăсене реестра кĕртмен, сăм.: *тăмпай, тăмсай* 'глуповатый, тупой человек'; *хăмпă, хăмпу* 'пузырь' т. ыт. те.

Пĕр тĕпрен е тĕрлĕ тĕпсенчен пулнă, пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ дериватсене те нумай чухне пĕр статьяна пухса панă: *нӳрет, нӳрлет* 'сделать влажным, увлажнять'; *каштăртат, каштăртаттар* 'шуметь, возиться'; *тирпейле (типтерле),* 'приводить в порядок'; *хĕлхем, хĕм, вут-хĕм* 'искра, блеск'; *хăйхаклăх, хăйхакĕ* 'себестоимость'; *обшĕчĕствăла, обчăла* 'общественный' т. ыт. те.

Тепĕр чухне икĕ варианта икĕ статьяра, йĕркине ылмаштарса, реестра кĕртнĕ, иккĕшĕнче те куçару панă, куçарăвĕсем пĕр килмеççĕ. Танл.: *ăнпуç, тăнпуç* 'разум, сознание, сообразительность' — *тăнпуç, ăнпуç* 'ум, рассудок, сознание, сообразительность, понимание, понятие, умонастроение'.

Словника тимлĕрех тишкерсен, вăл вăхăтра словарь единицин ыйтăвне — реестра мĕн-мĕн кĕртес ыйтăва татса парайманни курăнать. В. Г. Егоров çакна питех те анлă ăнланнă темелле. Реестра сăмахсен варианчĕсене, тĕрлĕ стиль элеменчĕсене нумай кĕртни çинчен каларăмăр ĕнтĕ. Сăмахсен тĕп формисемпе пĕрлех автор (куçарнă чух йывăрлăхсем пулма пултараççĕ тесе пулĕ) инвариант шайĕнче тăман нумай формăсене те куçарса ăнлантарнă. Кунашкал статьясем питĕ йышлă, нумай тĕрлĕ, çавăнпа та шутлă тĕслĕхсем çеç илĕпĕр. Япала ячĕсем: *кӳршĕри* 'соседний'; *тинĕсри* 'находящийся на море, в море; морской'; *çавăрăнăçри* 'находящийся в обороте; оборотный'; *халатлăх* 'предназначенный на халат'; *курпăльлĕ* 'имеющий горбыль', *куркан, курканăн-курканăн* 'ковшами, целыми ковшами'; *шкулалла* 'по направлению к школе'; паллă ячĕсем, наречисем, местоименисем: *тăнсăртарах* 'более глуповатый'; *паянхи* 'сегодняшний'; *нумайран* 'от того, что их много, по причине их многочисленности'; *нихăшăмăр* 'никоторый из нас'. Глаголăн причасти формисем уйрăмах йышлă: *пухасси* 'предстоящий созыв; уборка'; *хăпарнă* поднявшийся; *сăнамалли* 'с целью испытания; необходимо испытывать, наблюдать'; *тимлесе, тимлĕн* 'упорно, настойчиво'. Нумай чухне причастисем вырăс чĕлхинчи ĕç ячĕсене тӳр килекен япала ячĕсемпе юнашар тăраççĕ: *шырав, ширани* 'искание, поиски'; *кӳлешӳ, кӳлешни* 'ревность'; *лайăхланни, лайăхлану* 'улучшение' т. ыт. те.

Ку пулăм, пĕр енчен, вăл вăхăтра сăмах тата форма пулăвĕсен хушшинчи чикке хальхинчен ăраснарах ăнланнипе çы-

ҫăнна пулмалла. Асăнна грамматика очеркĕнче автор, сăмахран, *-ри, -ти, -чи, -хи, -лă, -сăр* аффикссене ҫĕнĕ сăмах тăвакан формантсен шутне ҫеҫ кĕртет. Тепĕр енчен, словаре чăвашлавырăсла йĕркепе ҫырнă пулин те, унта, куҫару ĕҫĕн нушисене шута илсе, вырăс сăмахĕсен чăваш чĕлхинчи эквиваленчĕсене тупса кăтартма тăрăшни сисĕнет.

Словник йĕркелес ĕҫри тепĕр ыйту — унта пайăр ятсене тата анлă номинацисемпе глагол формисене, ҫавăн пекех ирĕклĕ е тачă ҫыхăннă сăмах пĕрлешĕвĕсене кĕртесси. Кунта та автор анлă принциппа усă курнă. Словникра эпир географи ячĕсене *(Ази, Вавилон, Пăрачкав, Ҫавал* т. ыт. те), ҫын ячĕсене — чăвашланнă вырăс ячĕсен тĕрлĕ варианчĕсене *(Алтакки, Алтатйе, Алтатти, Альтиҫ, Альтук* 'Авдотья, Евдокия'; *Трапхин, Трахвин, Траха* 'Трофим' т. ыт. те), пичетре тĕл пулакан ытти тĕрлĕ пайăр ятсенчен хăшĕ-пĕрисене *(Антанта, Аристотĕл* т. ыт. те) куратпăр.

Словникри сăмах пĕрлешĕвĕсен тĕслĕхĕсем: *йал йытти, йал каскăнĕ* 'бранное слово'; *кара ҫăвар* 'разиня, ротозей'; *курнă ҫын* 'знакомый человек'; *шарт сик* 'сильно испугаться'; *чушкăла выльа* 'играть в чушки, в городки'; *курайми пул* 'возненавидеть'; *кăларас тăвăм* 'действие вычитания'; *иртен те ир акасси* 'сверхранний сев'; *неслĕксĕр ача-пăча* 'беспризорные дети'; *Ерфурт программи* 'эрфуртская программа'; *Стахановла йухăм* 'стахановское движение'; *Целҫи термометрĕ* 'термометр Цельсия'; *машинпа трактăр стантсийĕ* 'машинно-тракторная станция'.

Егоров словарĕнче пирĕн лексикографире пуҫласа ку чухнехи терминологи тивĕҫлĕ вырăн йышăнать. Кунта литература чĕлхине кĕрсе ҫирĕпленнĕ е тин кĕрсе вырнаҫакан нумай отрасльсен терминологийĕ пур. Интернацилле терминсене, тĕпрен илсен, вырăс чĕлхинчен ҫав халлĕнех йышăннă, сасă (саспалли) формине кăна чăваш орфографи правилисемпе килĕшӳллĕн улăштарнă, сăм.: *лагĕр* 'лагерь', *парти* 'партия', *цензурă* 'цензура', *шахмăт* 'шахматы'; *фабзавком, ЦИК* т. ыт. *те.* Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем пирĕн чĕлхере ҫирĕпленмен, вăхăт иртнĕҫем чăваш сăмахĕсемпе ылмашнă, сăм.: *влийани* (танл. *витĕм), обрăз,* унран пулнă *обрăзла, обрăзлă, обрăзлăх* (танл.: *сăнар, сăнарла, сăнарлă, сăнарлăх); обложкă* (танл.: *хуплашка), оборот* (танл.: *ҫаврăнăш); фальшивый* (танл.: *суя*) т. ыт. те. Тепĕр енчен, чăваш чĕлхин майĕсемпе усă курса хайланă хăшпĕр терминсем те чĕлхене кĕмесĕр юлнă, сăм. *хăпарнăш* 'выпуклость', *тăнлав* 'понятие', *мулхуҫи* 'капиталист', *ведăмлăх* 'ведомство', *пĕтĕҫтерӳ* 'соединение, смычка', 'союз (в граммат.)'.

Словаре вырăс чĕлхинчи терминсене евĕрлесе йĕркеленĕ калькăсемпе ҫурма калькăсем нумай кĕртнĕ: *айăплакан* 'обвинитель', *алăсталăх* 'кустарное производство', *ăстăнлăх* 'соз-

нательность', *ĕçтăваслăх* 'делопроизводство', *ĕçтăвком* 'исполком', *классăрлăх* 'бесклассовость', *пилĕкçуллăх* 'пятилетка', *тĕштура* 'зернодробилка', *партвĕренӳ* 'партучение', *авточупу, авточупă* 'автопробег', *культçут* 'культпросвет' т. ыт. те. Автор вырăс чĕлхинчи çыхăну паллă ячĕсене куçарса калама кирлĕ чăваш формисене словника кĕртсе хăварма тимленĕ. Сăмах тĕпĕ чăваш чĕлхинче хăй халлĕн те çӳрет пулсан, вырăс суффиксĕсене *-ла, -ле* тата *-лă, -лĕ* аффикссемпе ылмаштарнă, пĕлтерĕш сĕмне уянисĕр пуçне кунта урăх критери пулни курăнмасть. Тĕслĕхсем: *техникăла* 'технический', *политикăла* 'политический', *сотсиалисăмла* 'социалистический' — çав хушăрах *сотсиалисăмлă* 'социалистический' (уйрăм статьян панă), *потребителлĕ* 'потребительский', *практикăла, практикăлă* 'практический', *сойузла, сойузлă* 'союзный' т. ыт. те. Сăмах тĕпĕ ирĕклĕ çӳремест пулсан, *-лă, -лĕ* аффикспа усă курнă: *дедуктивлă* 'дедуктивный', *конкретлă* 'конкретный', *опорлă* 'опорный', *солидарлă* 'солидарный', *стабиллĕ* 'стабильный'. Ку мелсемпе паян кун та тухăçлă усă кураççĕ. Чăваш япала ячĕсем, изафет конструкцийĕн пĕрремĕш компоненчĕсем пулса, вырăс çыхăну паллă ячĕсене тӳр килнине вара сайра-хутра çеç палăртнă, ăна та ытларах лексика эквиваленчĕ шучĕпе мар, иллюстраци тĕслĕхĕпе кăтартнă, сăм. *азот* 'азот', *азот йӳçекĕ* 'азотная кислота'; *тимĕр* 'железо', 'железный'. Çак компонент функцийĕнче вырăс паллă ячĕн аффиксне уйăрса пăрахса тунă тĕпсем те тĕл пулаççĕ, сăм. *польар* (*полярный* паллă ятĕнчен): *польар тилли* 'песец'.

Словарь статйисен тытăмĕпе содержанийĕ сăмах уйрăмлăхĕнчен — унăн семантикин анлăшĕнчен, ытти сăмахсемпе çыхăннинчен, иккĕмĕшле сăмахсем йышлă пулнинчен т. ыт. те килет. Сăмахсен пĕлтерĕшне, тĕпрен илсен, куçару, синонимлă куçару тата ăнлантару мелĕсемпе уçса панă. Ăнлантару (дефиниции) лексика эквиваленчĕ хыççăн тăма е унсăрах та пулма пултарать. Ăнлантару мелĕпе ытларах чăваш этнографизмĕсене, тӳррĕн куçарăнман (эквивалентсăр) формăсене е еверлев сăмахĕсене семантизацилеме усă курнă. Тĕслĕхсем:

*йан* — подражание далеко раздающемуся звону или гулу; звонко, гулко...

*йантав (диал.)* — пивная посуда в роде подойника из красной меди с продолговатым рыльцем, на коротких трех ножках; жбан; в некоторых районах эта же самая посуда называется *чăм,* ср. русск. ендова.

*çинçе* — ...2) по древнему верованию чуваш, время зачатия земли, после весенней вспашки до семика.

*йакатмăш* — человек, который льстит и выманивает деньги.

Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен семантикине уйăра-уйăра ăнлантарас меслетпе словарьте усă курман-ха. Тĕрлĕ пĕлтерĕшсене тӳр килекен вырăс эквиваленчĕсене пĕр ретĕн черет-

лесе тухнӑ, вӗсен йӗркинче мӗнле те пулин принцип, пӗр евӗрлӗ стандарт асӑрхама ҫук. Пӗлтерӗшсем кӗретех уйрӑлса тӑнӑ чухне точкӑпа запятой, ытти чухне запятой лартнӑ. Н. А. Андреев ку словарь статйисен куҫару пайӗнче вырӑс синонимӗсем нумай пулнине унӑн ҫитменлӗхӗсенчен пӗри тесе шутлать[19]. Ку сӑмахсенче тӗрӗсси пур: чӑнах та, эквивалентсенчен хӑшӗ-пӗрисем синоним речӗн доминантинчен чылай аякра тӑраҫҫӗ. Анчах юрӑхлӑ лексика эквиваленчӗсене туллин пухса кӑтартнине икӗ чӗлхеллӗ словарӗн ҫитменлӗхӗ теме ҫук. Кӑлтӑкӗ кунта урӑххинче: пӗлтерӗшсене уйӑрман пирки вырӑс тӳркилӗвӗсем чӑваш сӑмахӗн семантикине уҫӑмлӑн та вӗҫе-вӗҫӗн сӑнласа кӑтартаймаҫҫӗ. Тӗслӗхсем илер:

*тим* — побуждение, влечение, стремление; энергия, активность, решительность, настойчивость, отвага, смелость, усердие, старание, сознательность;

*меслет* — предлог, причина, повод, власть, воля, средство, форма, метод, способ, прием, орудие, возможность, свойство, качество;

*йар (йатӑм)* — пускать, класть, положить (соль, крупу в похлебку), насылать (мор); сбывать с рук (сплавить); допускать, позволять, отправлять (товар), пустить в ход; лить, наливать, насыпать; хватер йар — пускать на квартиру; йарса ил — схватить, захватить; йарса пус — шагнуть, ступить; йарса тыт — схватить, ухватиться; йара пар — выражает быстроту, живость, картинность, наглядность действия; ташша йара пачӗ — и давай плясать.

Точкӑпа тата запятойпа уйӑрнӑ ушкӑнсенче те лексика эквиваленчӗсем семантика тӗлӗшӗнчен пӗрешкел маррине курма пулать. Сӑм., *тим* статьяра юнашар тӑракан *смелость, усердие, старание, сознательность* эквивалентсенчен иккӗмӗшӗпе виҫҫӗмӗшӗ кӑна ҫывӑх. *Йар* статьяра *допускать* тата *позволять,* чӑнах та, ҫывӑх синонимсем, виҫҫӗмӗш эквиваленчӗ *отправлять (товар)* вара вӗсемпе нимле те ҫыхӑнман. *Меслет* статьяри тӗрлӗ содержаниллӗ эквивалентсене вара пачах та ушкӑнламан. Танлаштарма 1982 ҫулта тухнӑ «Чӑвашла-вырӑсла словаре» пӑхар: унта *тим* сӑмахӑнне 3 пӗлтерӗш, *меслет* сӑмахӑнне — 4, *яр* глаголӑнне вара 19 пӗлтерӗш уйӑрса ӑнлантарнӑ.

Дефиницисене словарьте, пӗтӗмӗшпе илсен, тӗрӗс те ӑнланмалла, вӑрӑмӑшӗпе виҫеллӗ йӗркеленӗ. Анчах пӗр ушкӑнри сӑмахсенех тӗрлӗ мелпе куҫарни час-часах тӗл пулать. Сӑмахран, *азот, суперфосфат* терминсене куҫарнӑ хыҫҫӑн ӑнлантару паман, *аммиак* термина ӑнлантарнӑ Хӑшпӗр терминсене куҫарнӑ чухне, чӑвашла-вырӑсла словарь принципӗнчен пӑрӑнса, ӑнлантарусене чӑвашла панӑ; ку вӑл пӗр чӗлхеллӗ ӑн-

[19] Андреев Н. А. Асӑннӑ ӗҫ, 144 с.

лантару словарĕн мелĕ шутланать. Сăмахсен семантикине тата лексика ҫыхăнăвĕсене уҫса кăтартма тĕслĕхсемпе анлăн усă курнă, вăл шутра иккĕмĕшле е хутлă сăмахсем, сăмах майлашăвĕсем тата вĕҫленнĕ пуплевсем, сайраран халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем тата тӳрĕ цитатăсем пур. Анчах хăшпĕр вăрăмрах тĕслĕхсене вырăсла куҫармасăр хăварнă (сăм., *йаровизаци, пĕтĕҫни, муташла, нӳшлĕ, обйазательствă* статьясенче). Йышăннă сăмахсен чăваш тӳркилĕвĕсене реестрта (иккĕмĕш вырăнта) пани те — пуҫсăмахсене ăнлантармалли хăйне евĕрлĕ мел. Автор факультативлă компонентсене тата ăнлантару сăмахĕсене скобкăра парас мелпе анлăн усă курать, вĕсене ытларах вырăс текстĕнче, хушăран чăваш тĕслĕхĕсенче те хушса парать (сăм., ҫӳлерех туллин илсе кăтартнă *йар* статьяна пăхăр).

Пĕлтерĕшсене уйăрманнипе словарь статйисен тепĕр уйрăмлăхĕ ҫыхăннă: иллюстраци тĕслĕхĕсене тивĕҫлĕ лексика эквиваленчĕсем ҫумĕнче мар — пурне те пĕр ҫĕрте ҫырса тухнă. Ҫавăнпа та сăмахăн семантика тытăмĕ самаях кăткăс чухне хăш тĕслĕх пайăррăн хăш пĕлтерĕше ăнлантарнине тупса ҫитерме хĕн. Ку вăл словарĕн информаци пахалăхне чакарать, мĕншĕн тесен ăнăҫлă, вырнаҫуллă тĕслĕхсем те хăйсен функцине пурнăҫлаймаҫҫĕ. Хăшпĕр чухне тĕслĕхсенче уҫăлакан пĕлтерĕше лексика эквиваленчĕсем пачах палăртмаҫҫĕ. Ҫапла вара, кун пек чухне тĕрлĕ семантизаци мелĕсемпе хутăш усă курнă теме пулать. Тĕслĕхшĕн *татăл* статьяна илме пулать:

*татăл* — рваться, порваться, разорваться, обрываться, прерываться, прекращаться, приостанавливаться; ĕҫ татăлчĕ — прекратилась работа (перерыв в работе); парăм татăлчĕ — покончено с долгами, расплатился с долгами; укҫаран татăлтăм — перевелись деньги, перестали водиться деньги; хăй панчен вăрă-хурах татăлмасть — от самого не переводятся воры, а сам не расстается (не порывает связи) с ворами; киввипе пĕтĕмпех татăлма унăн хăвачĕ ҫитеймен — чтобы окончательно порвать связь с прошлым, у него не хватило решимости.

Кунти тĕслĕхсен содержанийĕ хăйне уйрăм лексика пĕлтерĕшĕ туса кăтартмалăх пур, унсăр пуҫне сăмахăн семантика калăпăшне статьяра туллин уҫса паман. Танл.: 1982 ҫулхи словарьте ку статьяра 12 пĕлтерĕш тата ҫыхăннă пĕлтерĕшлĕ майлашусем кăтартнă.

Пĕр статьяран тепĕр статьяна пăхма сĕнекен кăтартусем, пĕр сăмах варианчĕсене темиҫе ҫĕрлĕн ăнлантарасран ҫăлнисĕр пуҫне, лексика системинчи ҫыхăнусене палăртма та пулăшаҫҫĕ. Ку мелпе автор чăваш глаголĕсен хăшпĕр залог е аспект формисене (сăм.: *сыптар* — пон. ф. от сып, анчах танл.: *йурттар* — *пон. ф.* ехать рысью; *йусаттар* — заставить при-

вести в порядок; *таткала — учащ. ф.* от тат, анчах танл.: *çикеле* — позакусывать), ят сăмахсен çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ е формипе чылай уйрăлса тăракан варианчĕсемпе деривачĕсене (сăм.: *çийĕ* см. çи 1; *савни* см. сав; *ретсĕр* см. ĕретсĕр; *çилçуна* см. çил; *пăравус* см. паровоз) т. ыт. парать. Кăтартусем вырăнлă е тĕрĕс пулни пур чухне те ĕнентермест, вĕсемпе пĕр пек усă курманни вара çак абзацри тĕслĕхсенчен те лайăх курăнать. Акă пĕр статья: *обчă, обчăлă см. общĕствă, общчĕствăлă*. Кунта уйрăм сăмах пирки мар (логика тăрăх çапла пулмалла ĕнтĕ), пĕр çĕрлĕн икĕ сăмах пирки кăтарту панă. Тепĕр статья: *йантă, йантăла* см. йамăт. Пăхма сĕннĕ статйинче вара *йантăла* глагол тӳркилĕвĕ çук та, ăна уйрăм статьяра панă: *йамăтла, йантăла* — готовить, приготовлять. Реестрти *йарăс, йаркăч* сăмахсенчен *йар* 1 статьяна пăхмаллине кăтартнă, унта вара (çӳлерех пăхăр) 1 цифрăпа палăртнă пайĕ те, ку деривачĕсем те çук. Автор юнашар тăракан *йар, йаркăч* — 'притужина, слега' статьяна асра тытнă пулмалла, анчах *йарăс* сăмах унта та çук. *Йалма, йалман* пуçсăмахсене хăйсен пĕрлехи статйинче куçарман, «см. çĕр мулкачĕ» тесе палăртнă, анчах словарь реестрĕнче ун пек статья çук, *çĕр мулкачĕ* тĕслĕхе *çĕр* статьян 2-мĕш пайĕнче панă.

Лексика-грамматика паллисем пĕр килекен сăмахсене пĕрешкел сăнласа парасси хальхи лексикографин тĕп требованийĕсенчен пĕри шутланать. 30-мĕш çулсенче кунашкал ăнлану пулман. Çакна словарьте хисеп ячĕсене тата вĕсен тĕрлĕ деривачĕсене, формисене мĕнле панинчен лайăх курма пулать. Кунта лексикографи мелĕсемпе системăллă усă курни çук. Пĕр пек формăсене тĕрлĕ майпа сăнласа панă, пĕр ушкăнра панă сăмахсен аналогĕсене тепĕр ушкăнĕнче курма çук, сăм., *икçĕр, виççĕр* хисепсене кĕртнĕ, *тăватçĕр, пилĕкçĕр* хисепсене кĕртмен т. ыт. те.

Егоров словарĕн уйрăмлăхĕ — пуçсăмахсен пуплеври формисенче тĕл пулакан стандартлă мар фономорфологи пулăмĕсене кăтартма тăрăшни. Ку шута паллă ячĕсен *-и* аффикслă палăрту формисенче (*вăйсăр — вăйсăрри, йӳнĕ — йӳнни*), япала ячĕсен сăпат тата падеж формисенче хупă сасăсем вăрăмланнине (*йурă — йуррăн, йурра, йурри*), *у* ~ *ăв* йышши ылмашусене (*çу — çăвăн, çăва*) т. ыт. те кĕртме пулать.

Лексика омонимĕсене словарьте пĕр статьяра араб цифрисемпе уйăрса панă. *Çĕр* статьяра 'ночь', 'земля', 'сто', 'гнить' пĕлтерĕшлĕ омонимсене, *тар* статьяра 'пот', 'порох', 'осокорь', 'убегать', 'плата' пĕлтерĕшлĕ омонимсене ăнлантарса панă. Сăмахсен тĕрлĕ лексика-грамматика функцине пурнăçлакан тĕсĕсене словарьте омоними шайĕнче мар, нумайпĕлтерĕшлĕх шайĕнче пăхнă темелле, мĕншĕн тесен вĕсене пĕр статьяра вырнаçтарнă, цифрăсемпе мар, точкăпа тата запятойпа уйăрнă:

*паллă (палли)* — примета, заметка, условный знак, показатель, обозначение; заметный, известный, выдающийся, характерный, замечательный, достопамятный; известно, знаменательно, характерно; сасă палли, саспалли — буква; водородăн хими палли H — химический знак (обозначение) водорода H; турпалли — родимое пятно, родинка; йышăннă паллăсем — условные знаки (принятые знаки); паллă енĕсем — характерные черты; 5-пе паллă туни — отмеченное цифрой 5; паллă ту — метить, отмечать, помечать, обозначать; выльăха паллă туни — мечение животных; чарăну паллисем — знаки препинания; ыйту палли — знак вопроса.

Чарăну паллисемпе çакнашкал усă курни сăмахăн япала ячĕ, паллă ячĕ тата наречи функцийĕсенчи тĕсĕсене пĕр пĕлтерĕшлĕ пек кăтартать. Ку вăл, паллах, апла мар. Акă, 1982 çулхи словарьте *паллă* япала ячĕн 5 пĕлтерĕшне, паллă ячĕн 4 пĕлтерĕшне, наречин 2 пĕлтерĕшне ăнлантарса панă. Ку статьяра словарĕн çӳлерех кăтартнă хăшпĕр уйрăмлăхĕсене те сăнама пулать. Сăмахран, иккĕмĕшле сăмахсене *(турпалли, саспалли)* иллюстраци тĕслĕхĕ вырăнне панă, çав вăхăтрах вĕсене реестра та кĕртнĕ; *паллă ту* анлă глагол формине тĕслĕхĕсенчен кайран вырнаçтарнă т. ыт. те.

Иккĕмĕш кăларăмăн умсăмахĕнче автор словаре тĕпренех çĕнетни çинчен çырать. Унăн калăпăшĕ тата сăмахсен йышĕ нумаях улшăнман, анчах нормăлав шайĕ самаях ӳснĕ, çавна май словник составĕпе статьясен содержанийĕ те çĕнелнĕ. Словникри чи пысăк улшăну — чăваш чĕлхине çав халлĕнех кĕнĕ нумай терминсене унтан кăларни. Акă, малтанхи темиçе страницăрах çакăн пек терминсем катăлнă: *абажур, аббат, аббатство, абзац, абонемент, абонент, аборт, абрикос, абсольутис, абсольутисăм, абсольутла, абсольутлă* (ку икĕ паллă ятне *абсолютнăй* формăпа ылмаштарнă), *абстрактлă (абстрациллĕ* формăпа ылмаштарнă), *абсурд, обсурдла, абсурдлă, абсурдлăх, авантьурă, авантьурис, авантьурискă, авиастрой, авиатор, автомат, автодор, агитбригадă, агитповозкă, агитпроп, агитпункт, аггльутинативлă, аггльутинативлăх, аггльутинаци, агони, аграрлă (аграрнăй* формăпа ылмаштарнă), *агреççивлă (агрессиллĕ* формăпа ылмаштарнă), *агрограмотă, агрокурс, агроном, агрономи* т. ыт. те. Автор «кунашкал сăмахсенчен чи тăтăш тĕл пулаканнисене çеç кĕртнĕ» тет пулин те, *абзац, автомат, агитпункт, агрессивлă, агроном* йышши кирлĕ терминсене словникран кăларнипе килĕшме йывăр.

Словникран çавăн пекех хăшпĕр кивелнĕ сăмахсене, халăх пĕлмен диалектизмсене, сăмахсен варианчĕсене кăларнă. 20—30-мĕш çулсенче хайланă хăшпĕр сăмахсене те, пирĕн чĕлхере тымар ярайман пирки пулĕ ĕнтĕ, словаре тек кĕртмен (сăм.: *авлану, авточупу, агĕнтлăх, айăплав* т. ыт. те). **Пайăр**

ятсенчен пирĕн таврари тĕп топонимсене (*Атăл, Çавал, Шупашкар, Аçтăрхан*) тата республикăри районсен ячĕсене хăварнă, ыттисене кăларнă.

Сăмахсен словарь формисене палăртса реестра кĕртмелли критерисем ку кăларăмра та уçăмлах мар-ха. Акă, çĕнĕ лексика пĕлтерĕшĕсĕр формăсенчен — *авалах, авангардри, аванланасси, акари, авăркала, айлăмри, айăмри, айăпсăрри, виçминесĕр, виççĕмĕшĕнче* йышши, типлă пĕлтерĕш çеç хушăнтаракан формăсенчен нумайăшне — *авариллӗ, авăрлаттар, айванлантар* йышши сăмахсене реестртан кăларнă. Çав вăхăтрах вĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман ытти формăсене хăварнă е çĕнĕрен кĕртнĕ: *айлă, адрессăр, аванланни, аванcланни, Шупашкарти, каçаларах, кĕпелĕх* т. ыт. те.

Темиçе сăмахран тăракан номинаци единицисене те хăшĕпĕрисене çĕнĕ кăларăмра словника кĕртмен (сăм., *авăн уйăхĕ, авăрлакан машина, авар халăхĕ*), анчах нумайăшĕ, уйрăмах реестра тĕп сăмах çумĕнчи туллирех вариант шучĕпе кĕртнисем, сыхланса юлнă. Тĕсл.: *акар йытти; ярнуççи* çумĕнче — *арăм йывăççи; амăшай — амăш айĕнчи пăру; анăс, антăс — анăс курăкĕ; мăн хăяр; мĕн чухлĕлĕх (мĕн чуллăх), куланçи пул, Вăрмар районĕ.* Çĕнĕрен кĕртнисем те пур: *Верховнăй Совет, вĕремелли температура, сахалрахăшĕ* çумĕнче — *сахалрах пайĕ, Пĕрлешнĕ Нацисен Генеральнăй Ассамблейи* (кунта иккĕмĕш сăмахĕ хыççăн *Организацийĕн* кирлĕ пулнă) т. ыт. те.

Пĕрремĕш кăларăмра тĕп сăмах статйисенче иккĕмĕшле сăмахсем, вĕсен формисем нумай пулнă, терĕмĕр çӳлерех. Вĕсенчен чылайăшне, сăмахран хисеп ячĕсен тĕрлĕ формисене реестра уйрăм статьян кĕртнĕ. Анчах ку ĕçе çирĕп системăпа туса çитереймен. Тĕслĕхшĕн уçлăхри ориентаципе çыхăннă сăмах тĕпĕсен йăвисене илме пулать. Ку материал тулли пĕлтерĕшлĕ ят сăмахсен хăшпĕр формисем пулăшу пĕлтерĕшлĕ, грамматика функцийĕ туяннă май вĕсене лексикографилессинче çĕнĕ ыйтусем тухса тăнине лайăх кăтартать. Тĕп сăмахсен статйисене кĕскетмесĕр илнĕ, ыттисенне реестр формисене (курсивпа) тата вĕсен статйисенчи формăсене (скобкăра) çеç кăтартнă:

*ай* I 1. низ, нижняя часть, подножие; алăк айĕ — порог; кăмака айĕ — подпечье; 2. предлог под; айăмра — подо мной, айăнта — под тобой; ун айĕнче — под ним.

*айлă, айне, айри, аял, аяла, аялалла, аялта, аялтан, аялти.*

*çи* I 1. верх, верхняя часть, поверхность; одежда, платье; пӳрт çийĕ — крыша избы; пӳрт çийĕнче — на крыше избы; çийĕм — то, что на мне, наряд; çийĕнче пур — она беременная; çие юлни — зачатие; хам çине илетĕп — беру на свою ответственность, на свой счет, на себя; çине пар — дать в придачу; çиеле (çеле) тух — брать верх над кем-нибудь, выиг-

рать (процесс), всплыть; 2. время, пора; ĕç çийĕ — страда, время (пора) страды, рабочая пора; утçи, утă çийĕ — сенокос, время сенокоса; настойчивость; çине тăр — настаивать, решительно, энергично действовать; çине тăрса — настоятельно, энергично.

*çиел, çиеле (çеле), çиелтен, çиелти, çине, çири.*

Пĕр статья реестрĕнче темиçе пуçсăмах çырас мелпе автор ку кăларăмра та самаях анлăн усă курать, вĕсен шутĕнче фонетика, сăмах пулу варианчĕсем, анлă формăсем, диалект синонимĕсем т. ыт. те. Тĕслĕхсем: *мечĕт, меçĕт, мичĕт, миçĕт; адресат, çыру хуçи, çыру илекенни; ӳкĕнĕç, ӳкĕнни, ӳкĕнӳ; ушах, ушахлăх, ушахлă вырăн.* Диалект сăмахĕсен йышне словарьте чакарнă, вĕсене халь ытларах ăнлантарса мар — литература нормине тивĕçтерекен сăмаха пăхма сĕнсе панă. Апла пулин те, 50-мĕш çулсенчи кодификаци шайне шута илсен, нумай диалект формисем ку нормативлă словарьте вырăнсăрри уççăнах курăнать. Танл.: *ӳçĕм çырли, ĕçĕм çырли — иçĕм çырли; йăланут — юланут; кӳсмен — кĕсмен; кĕтĕвĕç — кĕтӳç, кĕтӳçĕ; ĕстел — сĕтел; сĕвĕт — сӳт; туттăр — тутăр.* Çак хирĕçтăрусен малтанхи элеменчĕсем çĕнĕ лексика пĕлтерĕшĕ кӳмеççĕ, стиль сĕмĕпе палăрса тăмаççĕ, халăхра анлă сарăлман. Апла пулсан, вĕсене словаре кĕртме нимĕнле сăлтав та çук.

Словарь статйисен тытăмĕпе содержанийĕнчи чылай улшăнусене, çĕнĕлĕхсене палăртни тĕрĕсех пулать. Кунта омонимсене уйрăмшар статьян рим цифрисемпе палăртса панă. Статьясенче лексика пĕлтерĕшĕсене араб цифрисемпе уйăрса ăнлантарнă, кашни пĕлтерĕше уçса пама кирлĕ тĕслĕхсене пĕр çĕрлĕн мар, пĕлтерĕшсем тăрăх валеçсе вырнаçтарнă. Куçăмлă пĕлтерĕшсене палăртма *перен.* паллăпа усă курнă. Кĕскетнĕ асăрхаттарусен списокне пысăклатнă. Лексика пĕлтерĕшĕсен картине кĕмен идиомăсемпе анлă номинацисене чи вĕçĕнче □ паллă хыççăн панă.

Лексика пĕлтерĕшĕсене туллин те системăллăн палăртса кăтартас ыйтăва вара ку словарьте те татса паман. Çакă, уйрăммăн илсен, глаголсен статйисенчен лайăх курăнать. Акă, 1982 çулхи словарьте *турт* глаголăнне 12 пĕлтерĕш, *тух* глаголăнне 26 пĕлтерĕш уйăрса ăнлантарнă, кунсăр пуçне статьясен вĕçĕнче идиомăсем нумай панă. Эпир тишкерекен словарьте *турт* сăмах статйинче икĕ пĕлтерĕш, *тух* статйинче вара сăмах семантикине пачах дифференцилемен.

Нумай функциллĕ сăмахсен тĕрлĕ функцийĕсене статьясенче уйрăм пĕлтерĕш шучĕпе ăнлантарса панă, тĕсл.: *авари* 1. авария; 2. аварийный; *аван* 1. хороший; 2. хорошо. Анчах ку йĕркене пур чухне те тытса пыман, сăм. *авкаланчăк* 1. извилистый; нечто изгибающееся, извивающееся... Урăхла каласан, кунта икĕ пĕлтерĕш пулмалла: япала ячĕн тата паллă

ячĕн, танл.: *авмашка диал.* 1. имеющий некоторый изгиб; 2. кривизна. Омоним аффикслă ят сăмахсемпе глаголсене тĕрлĕ статьясенче мар, пĕр статьяра пани те лексикографи методикин требованийĕсене тивĕçтермест, мĕншĕн тесен вĕсем — пĕр сăмахăн тĕрлĕ функциллĕ тĕсĕсем мар. Тĕслĕхсем: *аврăç* 1. покоробиться; 2. покоробившийся, кривой; *тутăх* 1. ржаветь; 2. ржавчина. Вĕсене, паллах, омоними шайĕнче уйăрса хăйсене халлĕн парас пулать.

Çĕнĕ кăларăмра ăнлантарусене чылай çĕнетнĕ, куçарусене лайăхлатнă: синонимла эквивалентсен хисепне чакарнă, вăрăм иллюстрацисене катертнĕ, тĕслĕхсен содержанине вăхăт ыйтнипе килĕшÿллĕн йĕркеленĕ. Словника çĕнĕ сăмахсем, вăл шутра терминсем хушнă. Тĕпрен илсен, автор словаре самаях лайăхлатнă, унăн лексикографи шайĕ хăпарнă. Кунта эпир малашне аталанса вăй илнĕ нумай усăллă çĕнĕлĕхсене куратпăр. Çавăнпа пĕрлех чăваш лексикологийĕ, словарь хатĕрлес ĕçĕн теорийĕпе методики çителĕксĕр шайра тăнипе çыхăннă çитменлĕхсем, татса паман ыйтусем те нумай. Словаре тĕплĕн тишкерни пире çав ыйтусене паянхи лексикографи мĕнле татса панине лайăхрах ăнланма кирлĕ. Анчах вăрçă хыççăнхи чăваш лексикографийĕ çинчен сăмах тапратиччен малтан унăн никĕсне хывнă чаплă ученăй Н. И. Ашмарин ĕçĕ-хĕлĕпе паллашас пулать.

## II СЫПĂК

## Н. И. АШМАРИНĂН «ЧĂВАШ СĂМАХĔСЕН КĔНЕКИ»

### 1 §. Словаре хатĕрленин историйĕнчен

Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕн никĕсне хывнă тĕнчипе паллă ученăй, СССР Наукăсен академийĕн член-корреспонденчĕ Николай Иванович Ашмарин профессор чăваш чĕлхипе, фольклорĕпе, историпе тата этнографипе нумай паха ĕçсем çырса хăварнă. Вĕсем хушшинче 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» уйрăмах чыслă вырăн йышăнса тăрать. Унта чăваш чĕлхин авалтан пухăннă калама çук пысăк пуянлăхĕ упранать.

Ачаранпах чăвашсемпе куллен хутшăнса пурăннăскер, Н. И. Ашмарин гимназист чухнех вĕсен пурнăçне тишкерме тытăннă. Çакă ăна каярах пысăк пĕлтерĕшлĕ вывод тума пулăшнă: «Ку таранччен çырса илнĕ сăмахсен хисепĕпе танлаштарсан, чĕрĕ калаçури сăмах пуянлăхĕ, паллах, нумай хут пысăкрах. Анчах унăн иксĕлми мулне шыраса тупас тесен, чĕлхене тишкернипе пĕрлех халăхăн йăлисене, кулленхи пур-

нăçне тимлĕн сăнас пулать»[1]. Чăнах та, хăйĕн наука ĕçĕнче вăл чĕлхе тĕпчевĕсене историпе этнографи тата фольклор шыравĕсемпе тачă çыхăнтарса пынă.

Чĕрĕ чăваш чĕлхин тулли словарьне хатĕрлес ĕçе Ашмарин 1895 çулта, Хусанти крешĕн-тутар шкулĕнче ĕçленĕ чухне пуçăннă та, ку ĕç унăн пурнăçĕнче мĕн виличчен (1933 ç.) тĕп вырăн йышăнса тăнă. Тĕслĕхе вăл В. И. Даль пухса хатĕрленĕ «Чĕрĕ вырăс чĕлхин ăнлантаруллă словарьне» (Толковый словарь живого великорусского языка) илнĕ. Словарь хатĕрлес ĕçе Ашмарин пĕччен тытăннă, харпăр укçи-тенкипе туса пынă. Малтанах вăл сăмахсене хăй аллинчи чăваш текстсĕсенчен, вăл шутра çырусенчен, чăвашла пичетленсе тухнă мĕнпур кĕнекесенчен çыра-çыра илнĕ. Анчах тĕрлĕ кĕпĕрнесенче, уессенче пурăнакан чăвашсен вырăнти калаçăвĕсенчи сăмахсене туллин кăтартма, вĕсен пĕлтерĕшĕсене уçса пама ку материал çитейлĕксĕр пулнă. Телее, словарь материалĕ пухас ĕçре Ашмарина вăл вăхăтри чăваш интеллигенцийĕ, хутла пĕлекен çынсем питĕ пысăк пулăшу панă. Вăл ыйтнипе 1896 çултах И. Я. Яковлев, çавăн пекех Хусанти учительсен семинарийĕнче вĕрентекен Ф. Н. Никифоров т. ыт. те ăна нумай алçыру ярса панă. Вĕсенче фольклор произведенийĕсем: юрăсем, юмахсем, легендăсемпе преданисем, ваттисен сăмахĕсем, кĕлĕсемпе вĕрӳ-суру сăмахĕсем пулнă. Ученăй уйрăм сăмахсем çеç мар, вĕсен пĕлтерĕшĕсемпе функцийĕсене уçса памалли иллюстраци тĕслĕхĕсем те питĕ нумай çырса илнĕ.

Николай Иванович хăй те пĕрмаях словарь материалĕ пухнă. Чăвашла лайăх пĕлекенскер, вăл пасарсенче, пристаньсенче чăвашсемпе халаплама юратнă, вĕсенчен çĕнĕ сăмахсем çырса илнĕ, хăш сăмах ăçти чăвашсем хушшинче сарăлнине, ăна еплерех каланине тĕрĕсленĕ. Çак тĕллевпех вăхăт-вăхăт тĕрлĕ уессене, унти чăваш ялĕсене кайса çӳренĕ. Хыснаран нимĕнле пулăшу илмесĕр, вăл Ĕпхӳ кĕпĕрнинчи Пелепей уесĕнче, Шупашкар, Чикме, Кăрмăш уесĕсенче материал пухса пурăннă. Çапла майпа унăн картотекинче 1897 çултах 20 пине яхăн сăмах пуçтарăннă.

Словарь валли материал пухас ĕçе хутла пĕлекен чăвашсене анлăрах явăçтарас тĕллевпе Ашмарин «Чăваш словарĕ пухса хатĕрлемелли программа» (Программа для составления чувашского словаря) çырнă, ăна 1900 çулта пичетлесе кăларнă. Умсăмахра автор хăйне словарь валли материалсем пухса ярса пама ыйтнă. Часах Ашмарин патне нумай-нумай ирĕклĕ корреспондентсенчен çырусем, тепĕр чухне самаях пуян сăмахлăх пуххи, гербарисем, тĕрĕ коллекцийĕсем, ӳкерчĕксем т. ыт. те пырса тăма пуçланă.

---

[1] Ашмарин Н. И. Кое-что о словаре (рукопись). — Научн. арх. ЧНИИ, отд. IV, един. хран. 13, л. 23.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн учителĕсемпе вĕренекенĕсем, чи малтан И. Я. Яковлев хăй, словарь валли нумай материал пухса панă кăна мар, унăн авторĕшĕн иккĕлентерекен ыйтусене татса памалли шанчăклă консультантсем те пулнă. Ун чухне Чĕмпĕрти шкулта вĕреннĕ паллă историк Г. И. Комиссаров çапла аса илет: «1899—1900 вĕренӳ çулĕн вĕçĕнче К. С. Сергеев учитель, Иван Яковлевич хушнă тесе, ачасене пурне те пуçтарчĕ, пирĕнпе калаçмалли пысăк ыйту пур, терĕ. Çамрăк ученăй Николай Иванович Ашмарин çинчен-мĕн калаçу: вăл чăваш чĕлхипе питĕ интересленет, «Материалы для исследования чувашского языка» ятлă кĕнеке кăларнă та ĕнтĕ. Халĕ вăл чăваш чĕлхин наука словарьне пухса хатĕрлеме шут тытнă, çакна валли пуян материал кирлĕ. Вăл вĕренекенсене, учительсене, мĕнпур хутла пĕлекен чăвашсене хăйне çак ĕçре пулăшма ыйтать. Мĕнле материалсем пухмалли, вĕсене епле çырса пымалли çинчен ятарлă программăра каласа панă. Каникул вăхăтĕнче сирĕнтен кашниех çав программăпа материал пухма пултарать.

Унтан К. С. Сергеев пире программăсем салатса пачĕ. Эпĕ те илтĕм. Август вĕçĕнче эпир ăна хамăр материал пухса çырнă тетрадьсене патăмăр»[2]. Ашмарин кашни вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче, ачасем каникултан таврăнсан, Чĕмпĕрти шкула пынă, пухăннă материалсене илсе кайнă.

Словарь валли материалсем пухас ĕçе çавăн пекех ытти шкулсенче вĕренекенсем, ялти учительсем, священниксем активлă хутшăннă. Вĕсенчен паллăраххисем: П. В. Васильев, К. С. Сергеев, И. К. Токмаков, П. И. Орлов, В. Н. Орлов, И. Н. Юркин, В. Н. Никифоров, М. П. Петров, И. Е. Ефимов (Тăхти), А. В. Рекеев, М. В. Шевле, Г. Т. Тимофеев, А. П. Прокопьев (Милли) т. ыт. те. Революци хыççăнхи тапхăрта ученăя чăваш писателĕсемпе тĕпчевçĕсем нумай материал панă. Сăмахран, словарь страницисенче час-часах Петĕр Хусанкай, Хумма Çеменĕ, Н. Р. Романов пĕлтернĕ тĕслĕхсене курма пулать. Пулăшакансен пысăк йышĕ словарь валли çирĕп никĕс хывма, тĕрлĕ çĕрти чăвашсен сăмах пуянлăхне туллин сăнласа пама пулăшнă. Материала тишкерсе классификацилес, словарь статйисене çырса хатĕрлес ĕçе вара малтанах Ашмарин пĕччен туса пынă. Унăн çак пысăк та наукăшăн, халăх культуришĕн паха ĕçĕ çинчен нумайăшĕ пĕлнĕ, паллă ученăйсем, вăл шутра Н. Ф. Катанов профессор, Ф. Е. Коршпа В. В. Радлов академиксем ăна пулăшма тăрăшнă. Паллă ученăй тата çутĕç деятелĕ Катанов, Хусан вĕренӳ округĕ çумĕнчи Куçару комиссийĕн председателĕ пулнă май, «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» çак комисси укçипе кăларма ирĕк илнĕ.

[2] Краснов Н. Г. Н. И. Ашмарин и И. Я. Яковлев. — В кн.: Н. И. Ашмарин — основоположник чувашского языкознания. Чебоксары, 1971, с. 227—228.

1910 çулта словарĕн пĕрремĕш кăларăмĕ (А — алăк), тепĕр икĕ çултан 2-мĕш кăларăмĕ (алăк — апăрт) пичетленсе тухнă. Корш академик словарь корректурине вулама кăмăл тунă. Ашмарин каланă тăрăх, вăл чăваш сăмахĕсене ытти тĕрĕк чĕлхисен тӳркилĕвĕсемпе танлаштарнă, чăваш сăмахĕсен пулăвне те кăтартнă[3].

Икĕ кĕнеке кăларнă хыççăн Куçару комиссийĕ тек укçа уйăрса паман, словарь кăларас ĕç чарăнса ларнă. Анчах Ашмарин пурпĕрех ĕçлеме пăрахман: татах материал пухнă, ăна тишкернĕ, словарь статйисем çырнă. Словаре малалла кăларасси тепĕр 15 çултан тин пуçланнă. Чăваш АССР Советсен Ĕçтăвкомĕ 1925 çулхи октябрьте чăваш чĕлхине пурнăçа кĕртесси çинчен постановлени йышăннă, Ашмарин словарьне кăларассине унта «вăраха ямасăр пурнăçламалли кирлĕ ĕç» тесе хакланă[4]. Чăваш республикин правительстви пулăшнипе 1928 çулта Хусанта словарĕн 1-мĕш кăларăмĕ пичетленсе тухнă. Вăл революцичченхи икĕ кăларăм материалĕсене пĕрлештернĕ, кунсăр пуçне автор унта хăшпĕр хушусем те кĕртнĕ. Хусантах 1929 çулта словарĕн 2-мĕш кăларăмĕ тухнă. Çакăн хыççăн ăна пичетлес ĕçе Шупашкара куçарнă. Автора пулăшма ятарласа чĕлхеçĕсен ушкăнне çирĕплетнĕ.

Николай Иванович пурăннă чухне словарĕн пилĕк кăларăмĕ кун курнă, тата икĕ кăларăмĕ валли автор хăй материал хатĕрлесе çитернĕ. 1941 çулччен 16 кăларăм çапса ĕлкĕрнĕ. Вăрçă чăрмантарнă пирки юлашки кăларăмне пичетлесси 1950 çулченех тăсăлса кайнă. Автор вилнĕ хыççăн словаре хатĕрлесе кăларас ĕçе Чăваш наука тĕпчев институчĕ хăй çине илнĕ. Унăн материалĕсене редакцилесе пичете хатĕрлес тĕлĕшпе Т. М. Матвеев, Н. А. Резюков, А. Л. Лукин т. ыт. нумай ĕçленĕ.

## 2 §. «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» — тезаурус словарь тĕслĕхĕ

Н. И. Ашмарин словарĕн латинла ячĕ — «Thesaurus linguae tschuvaschorum». Автор ку ята ахальтен суйласа илмен. Грек сăмахĕ *тезаурос* ’пуянлăх, мул’ тенине пĕлтерет. Лексикографире тезаурус тесе пĕр-пĕр чĕлхери сăмахсене туллин, пĕрне те сиктерсе хăвармасăр çырса кăтартакан словарьсене калаççĕ. Ун пек словарьсем сайра тĕл пулаççĕ.

Чăваш чĕлхин тезаурусĕнче сăмахсен мĕнле ушкăнĕсем сăнланнă-ха? Автор кунта чи малтан пĕтĕм халăх усă куракан, пурнăçра ки кирлĕ япаласемпе ăнлавсене палăртакан

[3] Егоров В. Г. Н. И. Ашмарин как исследователь чувашского языка (К 100-летию со дня рождения). Чебоксары, 1970, с. 16.

[4] Резюков Н. А. Послесловие. — В кн.: Ашмарин Н. И. Словарь чувашского языка. Чебоксары, 1950, вып. 17, с. 396.

сӑмахсене кертнӗ. Наци чӗлхинче, унӑн литература формин тӗрлӗ стилӗсенче вӗсем тӗп вырӑн йышӑнаççӗ. Кунашкал лексика единицисене Ашмарин, чӑнах та, питӗ туллин, пӗр сиктерсе хӑвармасӑр çырса кӑтартнӑ. Çакна курса ӗненмешкӗн Ашмарин словарӗ хыççӑн тухнӑ чӑваш словарӗсен словникӗсене танлаштарса çеç пӑхмалла: унти сӑмахсен тӗп йышӗ — Ашмарин словарӗнче çырса кӑтартнисем.

Хальхи словарьсен тӗп принципӗ — нормативлӑх, сӑмахсене литература чӗлхин нормисемпе килӗшсе тӑнине кура суйлани. Тезаурус словарьте вара нормативлӑх критерийӗ пулма пултараймасть. Çавӑнпа ӗнтӗ Ашмарин словарӗнче вырӑнти калаçусен сӑмахӗсем (лексика диалектизмӗсем), пӗтӗм халӑх чӗлхинчи лексика единицисен диалектсенчи пӗлтерӗшӗсем (семантика диалектизмӗсем), вӗсен тулаш формипе уйрӑлса тӑракан варианчӗсем (фонетика тата морфологи диалектизмӗсем) питӗ нумай тӗл пулаççӗ. Словарь авторӗ çакна икӗ сӑлтавпа тӳрре кӑларать. Пӗрремӗшӗ — литература чӗлхи тин çеç калӑпланма пуçланӑ тапхӑрта вырӑнти калаçусен лексики унӑн майӗсене ӳстерме кирли. «Уйрӑм калаçусен пӗлтерӗшне ниепле те пӗчӗклетме юрамасть, — тесе çырнӑ вӑл словарӗн алçыру вӗççӗн юлнӑ умсӑмахӗнче. — Вӗсем литература чӗлхине, чи малтан унӑн лексикипе фразеологине пуянлатма кирлӗ. Ку тӗлӗшпе вырӑнти калаçусене хакламанни пулмалла мар, мӗншӗн тесен час-часах çапла пулать: пирӗн пата культурӑпа пӗрле килнӗ пӗр-пӗр ӑнлава палӑртма пӗр калаçура питӗ ӑнăçлӑ сӑмах çаврӑнăшӗ пур, теприсенче вӑл çук, çухалнӑ, ун пек чухне пирӗн çав сӑмаха чӗлхене кӗртес пулать... Калаçусем, хӑватлӑ çӑлкуç пекех, литература чӗлхине чӗрӗ вӑй хушаççӗ; калаçусенчен, вӗсен фразеологи материалӗнчен сӗткен илнипе çеç чечекленме пултарать литература чӗлхи»[5].

Иккӗмӗш сӑлтавӗ — диалект сӑмахӗсен чӗлхе историне тата халӑхӑн иртнӗ кунçулне, йăли-йӗркисемпе ӑс-хакӑл пуянлӑхне, кӑмӑл-туйӑм ӗнерӗвне тишкерсе пӗлес ӗçри пысӑк пӗлтерӗшӗ. Ашмарин тӗрӗссипе чӗлхе (филологи) словарӗпе «япала» словарӗн тӗллевӗсене уйӑрман, урӑхла каласан, сӑмахсен семантика, грамматика тата фонетика уйрӑмлӑхӗсемпе пӗрлех çав сӑмахсемпе паллӑ тӑвакан япаласене те çырса кӑтартнӑ. Ку тӗлӗшрен диалект сӑмахӗсемсӗр пуçне чӑваш хресченӗсен тӗрлӗ ӗçӗ-хӗлӗпе, алӑсталӑхӗпе çыхӑннӑ терминологи те пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Хӑйӗн «Программинче» Ашмарин ака-суха, арман, тимӗрçӗ, сӳс-кантӑр, пир-авӑр, тӗрӗ, сунар, пулӑ тытас ӗçӗн ятарлӑ сӑмахӗсене тӗплӗн пухса çырма ыйтать. Словарьте этнографи материалӗ питӗ пысӑк вырӑн йышӑнать. Унӑн 1934 çулта тухнӑ 6-мӗш кӑларӑмӗнче умсӑ-

[5] Ашмарин Н. И. Асӑннӑ ӗç, 41 л.

мах вырăнне пичетленĕ статьяра (авторĕсем Т. М. Матвеев, В. Г. Егоров тата А. С. Львов) çапла каланă: «Туркологи докторĕ Н. И. Ашмарин хатĕрленĕ нумай томлă «Чăваш чĕлхин словарьне» кăларас ĕçе ЧАССР Çутĕç халăх комиссариачĕ 1927 çулта тытăнчĕ. Ăна акă мĕншĕн пичетлеме кирлĕ: асăннă ĕç чăваш чĕлхипе фольклорĕ тата этнографи палăкĕсен калама çук пуян пуххи пулса тăрать. Наука тĕллевĕсене асра тытса, иртнĕ вăхăтран юлнă çак культура еткерне çырулăхра ӳкерсе хăвармалла. Çакă вăл чăваш чĕлхин мăнаçлă палăкĕ, ăна наука мелĕсемпе тĕпчемелли иксĕлми çăлкуç пулать»[6].

Ашмарин тĕрлĕ алăсталăхпа професси лексикине мĕн тери тĕплĕн сăнласа кăтартнине словарĕн кашни томĕнчех туйса илме пулать. Эпир кунта икĕ тĕслĕх кăна илĕпĕр. Пĕрремĕшĕ — çип арлас тата пир тĕртес ĕçрен. Унăн технологи номенклатури питĕ пуян та нумай тĕрлĕ. Словарьте çырса кăтартнă тăрăх, ĕçĕн тĕрлĕ тапхăрĕсенче чĕртаварпа хатĕр пире виçме чăвашсем çакăн пек терминсемпе усă курнă:

сӳс (е çăм, пурçăн) виçмеллисем: *çурăм* 'пучок, связка', *тăпка* 'мочка', *кăнчала, кĕнчеле* 'прядево, сверток', *арман* 'количество поскони, навитое на обруч', *мăскал, сулатник* 'золотник, мера шелка';

çип виçмеллисем: *пĕрчĕ, пĕрчĕк* 'одна нить', *ярăм* 'нить длиной до полутора аршина', *хăрах* 'счет ниток, количество', *сум, сăвăм* 'счет ниток в пряже, 3 или 4 нитки', *вун, вуннă* мера пряжи в 30, 60, 80 ниток', *йĕке* 'пряжа на одно веретено', *ура* 'особый длинный моток ниток', *хутăр* 'моток, мотушка', *шăрчăк* 'вид мотушки ниток', *сӳре* 'пряжа, натянутая на одну сновальню';

пир виçмеллисем: *чике* 'мера в один локоть', *хур* 'мера в два локтя', *хутăрпи, хутăрпӳ* 'мера длины в 2 или 4 хур', *сӳре, сӳрекке* 'мера длины холста приблизительно в 4 хур', *тăрăх* 'цельная холстина, штука холста'.

Куратпăр ĕнтĕ, пĕр ĕç терминологийĕн ятарлă пĕчĕк пайĕнче кăна 20 ытла сăмах. Кунсăр пуçне çак ĕçре пĕтĕмĕшле виçесемпе те усă курнă: *шит* 'пядь', *ал тытти* 'ширина захвата руки, *аршăн* 'аршин', *чалăш* 'сажень', *хăлаç* 'сажень', *туплашка* 'шпулька', *пушкар* 'шпулька, катушка' *çăмха* 'клубок', *кĕренке* 'фунт' т. ыт. те[7].

Тепĕр тĕслĕх — арман ĕçĕнчен. Çил арманĕсемпе шыв арманĕсем ĕлĕкхи чăваш ялĕнче чи кăткăс техника сооруженийĕсем пулнă, унти ĕçĕн професси шайĕ те ыттисенчен çӳлерех хăпарнă. Армансен номенклатурине — вĕсен пайĕсен, хатĕрĕ-

---

[6] Вместо предисловия. — В кн.: Ашмарин Н. И. Словарь чувашского языка. Чебоксары, 1934, вып. 6, с. 1.

[7] Скворцов М. И. Терминология ремесел в словаре Н. И. Ашмарина. — В кн.: Н. И. Ашмарин — основоположник чувашского языкознания. Чебоксары, 1971, с. 135.

сен ячӗсене Ашмарин питӗ тӗплӗн ҫырса кӑтартнӑ. *Арман* статья тата унпа ҫыхӑннӑ статьясем словарӗн 2-мӗш кӑларӑмӗнче 60 страница йышӑнаҫҫӗ (6—66), унта тӗрлӗ армансен 500 ытла пайне ят паракан номенклатура единицисем, унсӑр пуҫне кӗнеке вӗҫӗнче 13 ӳкерчӗк пур. Номенклатурӑн пӗр пайне — *урапа* терминпа ҫыхӑннӑ номинацисене уҫса паракан статьясене илӗпӗр (вӗсене кӗскетсе ансатлатнӑ: латинла текста, транскрипципе ҫырнӑ тӗслӗхсене тата хӑшпӗр иллюстраци ҫаврӑнӑшӗсене паман; скобкӑри цифрӑсем ӳкерчӗк номерне кӑтартаҫҫӗ):

*Урапа, орапа* «Колесо ручной мельницы с ручками на концах вала для приведения его в движение» *Шевле.* ‖ *Якейк.* Орапа шӗштӗрнеке ҫавӑрать. Орапара отмӑл пальтсӑ. Колесо вращает шестерню. На колесе 60 кулаков. ‖ *Тоскаево.* Урапана вал ҫине тӑхӑнтарса хураҫҫӗ. Колесо надевают на вал.

*Айалти орапа* Нижнее колесо (ветрянки) на веретене камня. *Шевле.*

*Арман урапи* Большое колесо ветрянки, прикрепленное к валу. *Асан.*

*Олт-орапа* Большое колесо, приводимое в движение валом. *Сред. Юм. Олт-орапа* — арман вал каскипе ҫаврӑнакан шӑллӑ орапана калаҫҫӗ. ‖ То же, что ултура.

*Пысӑк урапа* Большое колесо под поставом в яме; находится на вале, идущем к конному приводу в сарай. *Шевле.*

*Тип орапа* Сухое колесо, находится на одном вале с водяным колесом, но за перегородкой, под мельничным поставом. *Шевле. Якейк.* Тип орапа шӗштӗрнеке пальццасампа ҫавӑрать. Сухое колесо вращает шестерню при помощи кулаков.

*Тип урапа кучакӗ* Косяки сухого колеса. ‖ Круг сухого колеса.

*Тип урапа пури* или *шалти кавус* (28). *П. И. Орлов.*

*Тулти урапа* Внешнее колесо круподерки (12). *П. И. Орлов.*

*Тулти урапа стойакӗ* или *стойак валь* Стояк внешнего колеса (1).

*Тусан урапи* Тусан урапине йӗке тӗпӗ ҫине тусан ан лартӑр тесе тӑваҫҫӗ; тусан урапи ҫаврӑнса тӑрса тусанне вӗрсе тӑрать. Пыльное колесо устраивается для того, чтобы на подпятник не садилась пыль. Это колесо, вращаясь, сдувает пыль.

*Шалти урапа* Внутреннее колесо обдирки, вращающее шестерню, насаженную на отвесное йӗке (веретено). Веретено упирается нижним концом в стальной подпятник (патпьаткӑ), а подпятник лежит в чугунной или железной коробке (карупка), вставленной в положенное горизонтально бревно (патушка), лежащее на двух поперечных подкладинах (хачӑ): каждая подкладина лежит между четырех столбиков

(хăлха йупасем), обхватывающих хачă с обоих концов. *Ст. Чек.*

Çавнашкалах *йĕке* терминпа çыхăннă пайсен ячĕсем — 16, *вал* терминпа çыхăннисем — 24, *вулак* терминпа çыхăннисем — 13, *чул* терминпа çыхăннисем 27 шутланаççĕ. Юлашки вăхăтра тунă кăткăс армансене лартма чăвашсем вырăссенчен XIX ĕмĕрте тин вĕреннĕ, çавăнпа та арман ĕçĕн номенклатуринче халăхра пачах çӳремен вырăс сăмахĕсем чылай: *калун* 'колонна', *кльавач* 'клевач', *крушал* 'кружало', *ливтта, лихтă* 'лифт', *нассат* 'насад', *нашим* 'нажим', *патпьаткă, путпьаткă* 'подпятка', *пелука, пелнока* 'белонога', *патуска* 'подоски', *плитсă* 'плица', *самаставкка* 'самоставка', *тсевккă, чевккă* 'цевка' т. ыт. те.

Техника номенклатурин механизм пайне тĕп-тĕрĕс, ыттисемпе пăтраштармалла мар палăртас пулать. Çак сăлтава пула арман пайĕсен ячĕсем хушшинче нумай сăмахлă, описаниллĕ номинацисем тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхсем: *кĕрпе сăмсипе хывăх шăтăкĕ, лашасене кӳлмелли-кăкармалли вĕренсем, хыçалти çил валĕ çытарĕ, чул хăпартса тăхмалли винтă, шултăра кĕрпе алакан ала айĕнчи вулак, йĕке куккăри хурами чĕнĕ.* Ку анлă номинацисенче темиçе сыпăклă дифференциаци пулса пыни лайăх курăнать.

Ашмарин словарĕнчи тепĕр интереслĕ лексика ушкăнĕ — фольклор произведенийĕсенчен, мифсемпе преданисенчен, çырулăх палăкĕсенчен пухнă кивĕ сăмахсем. Историшĕн ку материал пахалăхĕ вăхăт иртнĕçем ӳссех пырать, вăл сăмахсенче пирĕн халăхăн иртнĕ кунçулĕ курăмлăн йĕрленсе юлнă. Акă мĕн каланă ун пирки СССР Наукăсен академийĕн член-корреспонденчĕ С. Е. Малов: «Н. И. Ашмарин чăваш сăмахĕсене чĕрĕ калаçуран, кулленхи хутшăну пуплешĕвĕнчен, çавăн пекех халăх сăмахлăхĕнчен, вăл шутра нумай чухне юмăç-тухатмăш халапĕсемпе кĕллисенчен илнĕ; кунашкал сферăсенче чĕлхепе усă курасси халĕ яланлăхах пăрахăç пулнă, пирĕн автор вара вĕсене наука валли сыхласа хăварнă»[8]. Словарьти кивелнĕ сăмахсен ушкăнĕсем йышлă: кунта патшалăх тытăмĕпе, социаллă хутшăнусемпе, тĕн-тĕшмĕшлĕхпе çыхăннă сăмахсем, çавăн пекех ялхуçалăх, тĕрлĕ алăсталăх терминĕсем, тăванлăх-хурăнташлăх ячĕсем, кулленхи йăла сăмахĕсем пур. Хăшпĕр лексика единицисем халăх историйĕн сĕм авалти тапхăрĕсенчен сыхланса юлнă. Çапла, словарь реестрĕнче эпир *тынă, кӳнтелен* 'свидетель', *хунтă* 'покровительство', *тӳре* 'начальство, власть; судья', *пăхан* 'район управления', *кепе* 'название божества', *пирĕшти* 'ангел, *кирелĕ* 'название киремети', *мамале* 'название божества', *алмак* 'семья',

---

[8] Малов С. Е. Памяти Н. И. Ашмарина. — Зап. ЧНИИ. Чебоксары, 1941, вып. I, с. 138.

*кил-вут* 'домашний очаг, семья', *тăхăм* 'родство', *хăрт* 'секира; сабля', *эшкер* 'толпа', *ӳнер, кесĕп* 'ремесло', *мăскал* 'золотник', *пăчăх* 'мера в две пудовки', йышши архаизмсене сахал мар тĕл пулатпăр.

Унашкал сăмахсенчен чылайăшĕ хальхи ăру асĕнче юлман, вĕсене тĕрлĕрен фольклор тескчĕсенче, хытса ларнă традицилле пуплерĕшсенче, топонимсенче çеç тĕл пулма пулать. Сăмахăн пулăвне, пĕлтерĕшне, чĕлхери малтанхи вырăнĕпе функцине, тепĕр чухне чăн тĕрĕс тулаш формине те тупса палăртма халĕ йывăр. Анчах ученăй авалхи лексика пуянлăхĕн пĕр тĕпренчĕкне те айккинелле сирсе хăварман. Вĕсене словника кĕртсе, нумайăшĕ хыççăн ыйту лартнă е «паллă мар сăмах», «пĕлтерĕшĕ паллă мар», «йăнăш пулма пултарать» йышши асăрхаттарусем тунă. Ку вăл автор вĕсен пĕлтерĕшне шыраманнине пĕлтермест. Пачах урăхла, Ашмарин пĕртен-пĕр сăмах пирки тепĕр чухне вуншар çынран ыйта-ыйта пĕлнĕ. Уйрăмах корреспондентсем уçăмлă çырман тĕслĕхсем иккĕлентернĕ. «Хăшпĕр сăмахсем пирки, — тесе çырать автор, — тупсăмне шыраса тупма ниепле те май килмерĕ, вăл шутра сутмалли юмахсенче, юрăсенче тĕл пулакан манăç пулнă сăмахсем т. ыт. те. Вĕсене çапах пурне те словаре кĕртнĕ, сăмахсене чĕрĕ калаçуран мар, алçырусенчен илнĕ пулсан е чăвашсем вĕсене пĕлмеççĕ, ăнлантарса параймаççĕ пулсан, хăш-хăш сăмах пĕлтерĕшне тивĕçлипе уçса памасăрах хăварнă»[9]. Çакнашкал темиçе сăмах статйисене илер:

*Аймăкла* Неизв. сл. *Собран.* 50, 122. Сикĕп-сикĕп шăрпăклăп, аймăклăп (*вар.* аймаклăп) та ташаклăп (Хăй чĕлни). Загадка о щепании лучины. *Ср.* аймик.

*Ырпи* (искаженное слово?) *А. Прокоп.* 61. Ырпи ылттăн, хушпăвĕ кĕмĕл — пирĕн инке пуçĕнче килĕшет.

*Каман,* счастье, удача? *Срв.* камал. Встреч. в произв.:

*Каманлă* «удачливый». *СПВВ. Х.* «Каманлă, камансăр-вăхăтлă, телейлĕ, удачливый».

«Тĕттĕм» сăмахсен хăйне евĕрлĕ ушкăнĕ — ача-пăча вăййăсенче калакан тӳрĕ пĕлтерĕшсĕр, «ăссăр» сăвăсенче, шутларăшсенче, витлерĕшсенче тĕл пулакан лексика единицисем. Вĕсене ытларах ачасем кӳршĕ халăхсенчен йышăнаççĕ. Унашкал сăмахсем пуплевре хăйсен номинаци функцине пурнăçламаççĕ, ача-пăча вăййине, унăн ритуалне йĕркелеме пулăшмалли е ачасен ăсне-тăнне тренировкăламалли мел пулса тăраççĕ. Паллах, ача-пăча сăмахлăхĕн ун пек произведенийĕсем чăваш чĕлхин пĕтĕм территорийĕнче сарăлмаççĕ, пĕр-пĕр халăхпа кӳршĕллĕ ялсен ушкăнĕнче çеç çӳреççĕ. Ашмаринчен унашкал сăмахсене лексикографи ĕçĕнче шута илмен. Тĕпчессе вара вĕсене ку таранччен те тĕпчемен-ха. Тĕслĕхсем:

[9] Ашмарин Н. И. Асăннă ĕç, 5 л.

2. *Йана*, неизв. сл. Отсюда:

*Йана тарай,* неизв. выраж., встреч. в песне без смысла. *Якейк.* Куҫма пыр («п» не озвонч.) пыл таккой («т» не озвонч.) йана тарай йатнай пох, ни таракас снавай пох, охваттьар, опльосни Унтри Петӗр ни нушни ҫекли петли криччи крич чӗрсалами оххини (Сӑвӑ).

*Йапсар,* неизв. сл. в заумной песне. *Собр.* Вӑрман хӗрри йапсари, йапсар утти, семсер утти, хура хӗр ури маттурри.

*Тайут,* неизв. сл. в заумной песне. *Качал.* Шыв сики, шыв сики, шыв сикипе вратила, тайут-тайут ташлама упутнаках пивӑ.

Ашмарин чӑваш лексикографийӗнче ҫеҫ мар, пӗтӗм тӗрӗк лексикографийӗнче те пуҫласа евӗрлев сӑмахӗсене, вӗсен тӗрлӗ варианчӗсене словника кӗртет. Ку ыйтӑва вӑл теори енчен тарӑн тӗпченӗ, темиҫе кӗнеке тата статья ҫырнӑ. Ҫавӑнпа та евӗрлев лексики унӑн словарӗнче питӗ туллин сӑнланнӑ, кашни мимемӑн (евӗрлевӗн) пӗлтерӗш сӗмне автор тӗплӗн уҫса панӑ:

1. *Сӑр,* подр. жужжанию. ‖ Подр. дребезжанию. *СТИК.* Ҫурӑк чан сӑрр, сӑрр! тӑват. ‖ Подр. дрожанию. *Чӑв. к.* Сӑрлӑ юпа сӑр-сӑр чӗтрерӗ. *Нюш-к.* Чӗрере сӑрр! туса карӗ. Сердце задрожало при испуге.

*Панн,* подр. звуку, получающемуся при сгибании и разгибании жести. *Сред. Юм.* Шуҫ таткине кокӑрткаласан, о панн-панн тӑвать. ‖ Подр. звуку, получающемуся при обрывании туго натянутой проволоки. *N.* Хытӑ карнӑ пралук татӑлса кайрӗ те панн! йантраса кайрӗ; ҫинҫереххи тӑнн! йанӑраса кайать.

Ытти словарьсенче шута илмен тата хӑшпӗр лексика ушкӑнӗсем — ача-пӑча сӑмахӗсем, выльӑхсене чӗнсе е хӑваласа каланисем, кӑмӑл-туйӑма палӑртакан междометисемпе татӑксем, юрӑсенчи рефренсем е виҫе тытмалли хушма сӑмахсем т. ыт. те пурте Ашмарин словарӗнче хӑйсен вырӑнне тупнӑ. Тӗслӗхсем:

*Айльур кӑнам иккен ай-ай лим* — слова, не имеющие значения и составляющие припев к песням. *М. П. Петр.* Мӗншӗн шӑппӑн-шӑппӑн, ай, ларатӑр, мӗншӗн шӑппӑн-шӑппӑн ларатӑр? Айльур кӑнам иккен, ай-ай лим! Почему вы сидите так тихо?

1. *Уть-уть,* восклицание, которым манят утку. *КС.* Кӑвакала: уть-уть! тесе йӑхӑраҫҫӗ. *Янтик.* уть-уть — кӑвакалсене йыхӑрмалли. *А. Турх.* Уть-уть-уть-уть — манят уток. *К.-Кушки.* Уть-уть-уть, то же.

2. *Уть-уть,* восклицание в песне. *Атмал-к.* Уть, уть, Утиван, Утиван та Хитиван! Сарӑ хӗрсем кӗрт йытти, хура хӗрсем вут пуҫҫи.

*Уть-уть-уть, утька!* произносят, когда пестуют (тютюшкают) ребенка. *КС.*

*Паппа,* сон (детск. сл.). *В. Олг.* См. а ч а ш. *Якейк.* Паппа папакне, паньтьăксене патакпа, чорпайсене чокмарпа, кошлавшсене косарпа. *Сред. Юм.* Ачан паппи килет пуль, çывăрттар çавна.

*Паппа ту,* спать (так говорят детям). Питушк. Паппа ту, спи! *Сред. Юм.* Паппа турăр-и? Вы спали что-ли? *Хорачка.* Ачам килех, паппа тупăр (-тăвăпăр, спать).

Урăх халăхсемпе куллен хутшăнса пурăнакан чăвашсен вырăнти калаçăвěсенче е уйрăм çынсен пуплевěнче (идиолектра) пěтěм халăх чěлхин лексика системишěн пачах ют, чăвашсен ытларах пайě нихçан илтмен сăмахсем тěл пулаççě. Кусем — ансăр диалектизмсем (пěртен-пěр ялта е ялсен пěчěк ушкăнěнче çÿрекеннисем), варваризмсем тата пуплеври ăнсăрт сăмахсем. Вěсенчен ытларахăшě — вырăс тата тутар сăмахěсем. Ашмарин кунашкал пуплев элеменчěсене те сиктерсе хăварман, ăнлантарнă чухне вара, кашнинче тенě пекех, сăмаха хăш чěлхерен илнине кăтартнă:

*Ăрус,* рост, процент (прирост на капитал). *Чăв. й. пур.* Кěтнěшěн ăрусне çапах илетчě, кивçен панине çапах илетчě. Все-таки он брал за отсрочку проценты, а долг получал само собой.

*Ăрускă,* розга. *Альш., Шорк.* Роскă.

*Йатташ,* этаж. *Альш.*

*Йатташлă,* имеющий этажи. Йатташлă-йатташлă, тет, ку тăрнанăн пÿрчě. См. хутлă-хутлă.

*Йатти* (с удар. на 1-ом слоге), межд. угрозы (от русск. я те). *Ишек.* Унччен пулмарě, пăхатпăр — Сахар мучи патак йăтнă та: йатти сире! (я вас!) тесе, пырать. *КС.* Йатти эп сире! Я вам! (угроза). В с. Иккове иногда: йатти сана (с удар. на «и»).

*Навернă,* наверное; вероятно. *N.* О çыра та пěлмес; çырма пěлес полсан, о, навернă, санран маларах çырса ярěччě.

*Наклиска,* то же, что ÿрече, грядка телеги (от русск. нахлестка). *Ст. Чек.*

*Тайум,* от русск. даем. Встр. в след. выражении:

*Тайум пар,* бить. *Сред. Юм.* Пěчик ачасěне: сана хěнетěп, тессине: тайум парап, теççě.

Кун пек тěслěхсем словарьте питě йышлă. Çакă вăл XIX ěмěрте тата XX ěмěр пуçламăшěнче чăвашсем хушшинче (тěрлě çěрте тěрлě вăйпа) икчěлхелěх самаях хытă аталаннине, вěсем хăйсен пуплевěнче ассимиляциленнě тата ассимиляциленмен вырăс сăмахěсемпе тăтăшах усă курнине кăтартать. Словарь авторě ку пулăм тăтăшлăхне лайăх ăнланнă пулмалла: реестрти сăмахпа унăн вырăсла тÿркилěвě пěр несěллě

пулни кĕретех куранна чухне йышăну çăлкуçне ятарласа кă-тартман (танл.: *ăрускă — розга, йатташ — этаж*).

Лексикографи теорийĕнче халиччен татса паман ыйту — пĕтĕмĕшле (ятарлă мар) словарьте пайăр ятсене сăнласа па-расси. Пирĕн çĕршыври словарьсенче, пĕтĕмĕшпе илсен, çа-кăн пек принцип çирĕпленнĕ: пайăр ятсене словарь реестрне кĕртмелле мар, паллăрах географи ячĕсене уйрăм список ту-са словарь çумне хушса памалла. Сайра-хутра çын ячĕсен списокне хушса пани тĕл пулать. Анчах юлашки вăхăтра ли-тература тексчĕсенче тата кулленхи калаçура час-часах тĕл пулакан пайăр ятсене ытти сăмахсемпе танах пĕтĕмĕшле сло-варь реестрне кĕртес шухăш вăй илсе пырать. Ку вăл чи мал-тан икĕ чĕлхеллĕ словарьсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен тăван чĕлхене, унăн лексикинчи пайăр мар тата пайăр ятсене лайăх пĕлекен çын та ют çĕршыв культурин реалийĕ-сене — хăйне евĕрлĕ пулăмсене, япаласене, йăласене, фольк-лорпа мифологи е литература сăнарĕсене т. ыт. те ят паракан сăмахсене ăнланмасан та пултарать[10].

Ашмарин тезаурусĕн принципĕ ку тĕлĕшпе уçăмлă: вăл пайăр мар ятсемпе пайăр ятсем хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та тумасть, пурне те тĕплĕн çырса кăтартать (паллах, мате-риал пур таран, мĕншĕн тесен, сăмахран, микротопонимсен пĕчĕк пайĕ çеç словаре кĕнĕ). Словарьти пайăр ятсен тĕп уш-кăнĕсем çаксем:

1) антропонимсем, тĕпрен илсен, чăвашсен тĕне кĕриччен-хи тапхăртан сыхланса юлнă авалхи ячĕсем. В. К. Магниц-кий хăйĕн çӳлерех асăннă словарĕнче чăвашсен арçын ячĕсе-не çеç пухса пичетленĕ пулсан, Ашмарин словарĕн реестрĕнче хĕрарăм ячĕсем те йышлă. Несĕлĕ тĕлĕшĕнчен вĕсем пĕреш-кел мар: тĕп тĕрĕк тата чăн чăваш ячĕсемпе пĕрлех кунта араб-перс, тутар ячĕсем нумай. Кунсăр пуçне автор словаре чăвашланнă вырăс ячĕсен тĕрлĕрен варианчĕсене те кĕртнĕ. Ятсене (уйрăмах словарĕн малтанхи кăларăмĕсенче) мате-риал çемĕн ăнлантарса панă. Акă хăшпĕр тĕслĕхсем: *Айук* 'личное имя женщины', *Айука* 'личное имя мужчины, заимст-вовано из монг. (калм.)', *Аймет* 'личное имя мужчины', 'имя татарина, ср. марийск. мужское имя *Аймэт* (Марла кален-дарь, 1909), Айньук 'имя татарина', *Айтулă* 'личное языческое имя мужчины — от араб. Абду-лла или от тат. ай 'луна' и ту-лы 'полный'?, *Айпăлат* 'название рода в с. Б. Карачкине Коз-модемьянского у., ср. в чув. яз. им. мужское имя Айбулат', *Аратай* 'фамилия в Альшееве', *Капрал* 'прозвище в д. Кошки-Шемякине', *Авански* 'прозвище мужчины', *Йатти* 'личное язы-

[10] Берков В. П. Вопросы двуязычной лексикографии. (Словник). Л.: Изд-во ЛГУ, 1973, с. 97—109; Верещагин Е. М., Костомаров В. Г. Линг-вострановедческая теория слова. М.: Русский язык, 1980, с. 170—177.

ческое имя мужчины (ласкат. от Йатман), это имя дается ребенку в том случае, если дети не живут, оно остается на всю жизнь', *Аваççи* 'личное христианское имя Афанасий', *Акунне* 'личное женское христианское имя Агафья';

2) топонимсем — ялсен, шывсен ячĕсем тата микротопонимсем — тĕрлĕрен вак объектсен ячĕсем. Анлантару принципĕ кунта та çавнашкалах: объект ăçта вырнаçнине, унăн ячĕ мĕнле пулса кайнине, унпа çыхăннă легендăсене çырса кăтартнă. Тĕслĕхсем: *Айкăрлă çырми* 'овраг около с. Лесных Кошек, где, по рассказам, некогда жили разбойники', *Авански кĕлли* 'киреметь Аванского', *Анат-йал* 'название селения Вырыстайкино, Сенгилеевской волости и уезда', 'село Нижнее Аверкино Бугурусланского уезда', *Чакăл* 'название леса около с. Чув. Кулатка бывшего Хвалынского уезда', 'название поля', *Чиклĕ шор* 'название оврага около д. Хирбоси (Вурнарск. р.)', *Чул йупа çавраки* 'название луга, там «тутар вилли вырăнĕ»; чулне вырăнтан хăпартсан, пăр çапса кайать пусса, йала тĕрлĕ инкек-синкер пулать, тетчĕç ватă çынсем, çынна тĕрлĕрен чирсем йерет, тетчĕç';

3) пайăр ятсен ытти хăшпĕр пысăк мар ушкăнĕсем. Астронимсем: *Ала çăлтăр* 'Плеяды', *Алтăр çăлтăр* 'созвездие Большой Медведицы', *Ĕлкер* 'Плеяды', *Тимĕр шалçа çăлтăр* 'Полярная звезда'. Мифологи, фольклор сăнарĕсен, уявсен ячĕсем: *Митес, Иван-Митес* 'герой сказки', *Украк-Маçтăр* 'имя героя сказки(-Украсть-Мастер)', *Управçă* 'название божества', *Микул турă, Микол торă* 'название божества', *Мăн ырлăх* 'название духа', *Пукрав* 'название праздника Покров'. Выльăх ячĕсем: *Полкашка* 'кличка собаки', *Кампур* (из кам 'кто' + пур 'есть'), 'кличка собаки', *Карапай* 'кличка лошади (или название породы лошадей)', 'кличка черной собаки (с тат.)'. Ытти тĕрлисем: *Мерккульски* 'пароход бывшего общества «Кавказ и Меркурий»', *Макарав, Макару, Макарйа* т. ыт. те. 'Макарьевская ярмарка', *Капкăн* 'название юмористического журнала', *Касхыр* 'название колхоза в Ибресинском районе', *Коминтерн* (кусем — 1934 çулта тухнă 6-мĕш кăларăмра) т. ыт. те.

Словник йĕркелессипе çыхăннă тепĕр пысăк ыйту — ăна чĕлхе единицисен пĕр-пĕр паллă шайĕнче тытса пырасси. Пĕтĕмĕшпе илсен, словарь реестрĕнче çакăн пек единицăсем пулма пултараççĕ: саспаллисем (фонетика-графика шайĕ), морфемăсем (морфологи шайĕ), сăмахсем (лексика шайĕ), сăмах майлашăвĕсем (синтаксис шайĕ, ку вăл фразеологи тата терминологи словарĕсенче, çавăн пекех сăмах çыхăнаслăхне — валентлăха кăтартакан ятарлă словарьсенче пулма пултарать), уйрăм предложенисем, фразăсем (синтаксис шайĕ, ку вăл афористика е пареми словарĕсенче пулма пултарать, унта ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене, çунатлă сă-

махсене пӑхса тухаҫҫӗ), предложенисен ушкӑнӗсем (текст шайӗ, ку мелпе цитатӑсен словарӗсенче усӑ кураҫҫӗ)[11].

Ашмарин ҫак единицӑсенчен сӑмахсене, вӗсен майлашӑвӗсене тата сӑмах пайӗсене, вӑл шутра аффикс морфемӑсене ҫырса кӑтартнӑ. Ҫапла ӗнтӗ унӑн тезаурусне лексика словарӗ (е сӑмах словарӗ) тесе ҫеҫ хак пани тӗрӗсех мар пулнӑ пулӗччӗ; ку вӑл — лексика-фразеологи тата грамматика словарӗ. Лексика единицисен мӗнле ушкӑнӗсене реестра кӗртни ҫинчен ҫӳлерех каларӑмӑр ӗнтӗ. Сӑмахсен пӗрлешӗвӗсене илес пулсан вара, вӗсене семантика пӗрлӗхне, номинаци функцине тата структурипе компонентсен ҫыхӑнӑвне кура классификацилеме пулать.

Чи малтан кунта ӑнлавсене, япаласене анлӑн ят паракан, пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен пӗр сӑмахпа танлашакан пӗрлешӳсене, вӑл шутра субстантив функциллӗ атрибутивлӑ тата изафет формиллӗ майлашусене, ҫавӑн пекех анлӑ глагол формисене кӗртмелле. Субстантив функциллисем пайӑр мар лексикӑра та, пайӑр ятсен ушкӑнӗнче те пӗр пекех тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсен пӗр пайне — професси номенклатурин арман ӗҫӗнчи пӗчӗк ушкӑнне ҫӳлерех илсе кӑтартнӑччӗ. Халӑх чӗлхинче хӑй халлӗн йӗркеленнӗ терминологире анлӑ ятсемпе усӑ курасси ытти сферӑсенче те сарӑлнӑ. Ҫакна ӗҫ хатӗрӗсен ячӗсенче те, йывӑҫкурӑк, кайӑк-кӗшӗк ячӗсенче те, топонимире те лайӑх курма пулать. Акӑ, *авӑн* ’овин’ терминпа ҫыхӑннӑ анлӑ номинацисенчен словарь реестрне ҫаксене кӗртнӗ: *кашкӑр авӑнӗ* ’волчья яма’ (куҫӑмлӑ пӗлтерӗшпе усӑ курнӑ), *авӑн алтанӗ* ’петух, которого режут по окончании молотьбы’, *авӑн уйӑхӗ* (статьяра *уйӑх* сӑмаха пӑхма кирлине палӑртнӑ), *авӑн йашки* ’похлебка, которую варят по окончании молотьбы’, *авӑн йывӑҫ-ҫи* ’шиш овина’, *авӑн вучахӗ* ’овинная яма’, *авӑн кайӑк* ’мышь’, *авӑн карти* ’то же, что анкарти’, *авӑн кӑшӑлӗ* ’обруч, надеваемый на шиш овина’, *авӑн ҫи* ’время молотьбы’, *авӑн чолӗ* ’камни, которыми обкладывают бока овинной ямы’, *авӑн хупӗ* ’лубки для прикрывания снопов на овине’, *авӑн шӑтӑкӗ* ’лаз овина’. Кунтах *авӑн аштар* ’шишковать хлеб’, *авӑн ил* ’молотить (любым способом)’, *авӑн йӑттарса антар* ’снимать снопы с шиша’ йышши глаголлӑ сӑмах майлашӑвӗсем нумай, вӗсене те терминологи лексики шутне кӗртме пулать. Пӗтӗмӗшле лексика материалӗ хресчен пурнӑҫӗнчи пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫӗн йӗркипе хатӗр-хӗтӗрӗсене туллин сӑнласа парать.

Ҫав вӑхӑтрах автор хӑшпӗр анлӑ ятсене реестра кӑларман, пӗрремӗш компонент е пӗлтерӗшӗпе тӗп вырӑн йышӑнакан компонент статйисене кӗртнӗ. Акӑ, *авӑрлӑ* ’снабженный череном или ручкою’ статьяра *авӑрлӑ курка, авӑрлӑ алтӑр, авӑрлӑ кулаҫ (кулач)* тӗслӗхсем пур; *авӑрлӑ турӑ* ’хоругвь’,

[11] Верещагин Е. М., Костомаров В. Г. Асӑннӑ ӗҫ. 216 с.

*икĕ авăрлă сава* 'скобель' терминсене вара уйрăм статьясенче панă.

Анлă глагол формисен тупсăмĕ пирки, вĕсен словарьти вырăнĕ пирки тюркологире чылайранпа тавлашу пырать. Пĕренчен, вĕсене темиçе лексика единицин çыхăнăвĕ, урăхла каласан, синтаксис пулăмĕ тесе хаклаççĕ, словарь реестрне уйрăмшарăн кĕртмеççĕ, пĕр компоненчĕ çумĕнче иллюстраци материалĕ вырăнне усă кураççĕ. Тепĕр енчен, ун пек формăсене, пĕлтерĕшпе функци пĕрлĕхне шута илсе, хутлă сăмахсем тесе шутлаççĕ, апла пулсан, вĕсене словарьте кашнине уйрăм статьяра пăхма сăлтав пур. Компонентсене пĕрле е уйрăм çырни ку тĕлĕшпе чăрмав пулмалла мар, мĕншĕн тесен вăл ытларах кашни чĕлхере йышăннă орфографи правилисенчен çеç килет, чĕлхе единицисен категори паллисене палăртаймасть[12].

Ашмарин словарьне илес пулсан, кунта анлă глаголсен пур тĕрлĕ формисене те уйрăм статьясенче тĕплĕн çырса кăтартнă. Вăл шутра ят сăмахпа пулăшу глаголĕсенчен тăраканнисем: *пил ту, пехил ту* 'благословлять', *каç ту* 'проводить вечер', *чис ту* 'угостить, почтить'; вырăс инфинитивĕпе *ту* пулăшу глаголĕнчен тăраканнисем: *кулет ту* 'гулять', *парит ту* 'парить, пахать пар', *повет ту* 'исповедываться'; *-са, -се* аффикслă деепричастипе пулăшу глаголĕнчен тăраканнисем: *пырса ӳк* 'налететь', *пырса кай* 'приходить', *пырса кил* 'сходить', *пырса кĕр* 'неожиданно зайти, заехать', 'нападать, попадать', *пырса пар* 'приносить', *пырса перĕн* 'сталкиваться, касаться, подойти, задеть'. Кунсăр пуçне тачă пĕтĕçнĕ, фразеологизм шайĕнче тăракан е вĕсене çывăх ятпа глагол майлашăвĕсене те реестрта уйрăмшарăн парса пынă. *Алă* 'рука' ялала ячĕ хыççăн çакăн пек статьясем пур: *алă пар* 'прощаться за руку', *алă пус* 'подписываться', *алăран кил* 'быть возможным (для кого-либо)', *алă çап* 'ударить по рукам (в знак согласия)', *алă çитер* 'удосуживаться', *алă хур* 'наложить руку, побить', 'подписываться, приложить руку', *алла ил* 'брать в руки', 'благополучно собрать хлеб (с поля)', *алла ӳкер* 'завладеть, овладеть кем' *алла кил* 'быть по руке', *алла пăх* 'быть ко двору или не ко двору' т. ыт. те. Çав вăхăтрах евĕрлев сăмахĕпе пулăшу глаголĕнчен тăракан анлă глагол формисене словаре пачах кĕртменпе пĕрех. Сайра тĕслĕхсенчен пĕри: *какак ту* 'нести ребенка, подняв его за руку выше локтей'.

Анлă ятсен пысăк ушкăнĕ чĕрĕ çутçанталăк объекчĕсене— ӳсентăрансемпе чĕрчунсене палăртать. Определениллĕ, палăртуллă ятсем нумайăшĕ пĕр тăхăмри (вырăсла род) тĕрлĕ тĕссене (вид) уйăрса кăтартма е метафорăлла ятсем тума кирлĕ.

---

[12] Юлдашев А. А. Принципы составления тюркско-русских словарей. М.: Наука, 1972, с. 170—198.

Çакă вăл тĕрĕк чĕлхисенчи парадигматика перекечĕн законĕпе — кирлĕ объекта çĕнĕ сăмах туса мар, халиччен чĕлхере пулнă элементсене пĕрлештерсе калас туртăмпа тӳррĕнех çыхăннă. Словарь реестрĕнчи хăшпĕр тĕслĕхсем. Ӳсентăран ячĕсем: *ана пыйти* 'липучка', *лаптак ана пăйти* 'песий язык, липучка', *ана суханĕ* 'дикий лук', *анис улма* 'анисовые яблоки', *анăра çарăк, анра çарăк* 'название растения', *анăс курăкĕ, антăс курăкĕ* 'девясил', *анчăк корĕк* 'поповник обыкновенный', *аншăрт ути, ăншăрт ути* 'адонис весенний', *лăслă арăм* 'полынек', *кушак хӳри, шур-ути* 'костер', *шакăркка курăк* 'погремок'. Чĕрчун ячĕсем: *лĕпĕш хурчĕ* 'гусеница', *Макçăм таки* 'название насекомого', *кушпаш пулă* 'название рыбы', *кайăк лаша* 'осел', *кайăк хур* 'дикий гусь', *калмăк шăрчăкĕ* 'кузнечик', *кукша кăвакал* 'особая порода уток', Кунта анатоми терминĕсене те илсе кăтартма пулать: *айак пĕрчи* 'ребро', *апат хутаççи* 'желудок', *кайри шăл* 'коренной зуб', *калек шăмми* 'лопатка (название кости)', *кăвапа пырăшĕ* 'пуповина', *кăкăр калакĕ* 'нижний конец грудной кости'.

Реестрта метафорăлла, ытарлă пĕлтерĕш туяннă сăмах майлашăвĕсем, çавăн пекех тĕрлĕ модаллĕх сĕмĕ палăртакан çаврăнăшсем чылай, сăм.: *икĕ питлĕ* 'двуличный', *икĕ питлĕ хĕç* 'человек, который старается угодить и нашим, и вашим', *калăм карчăкĕ* 'колдунья', *лотра йал* 'кладбище', *тӳр пилĕк* 'ленивый', *ылтăн пыр* 'разборчивый в пище', *карăнашшĕ пуçна* 'брань', *тур çырлах* 'боже упаси', *киремет тункати* 'бранное обзывание' т. ыт. те. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем чĕлхери табу (чару) пулăмĕпе çыхăнни курăнать (танл. *лотра йал*). Тачă пĕтĕçнĕ анлă ятсен ытти ушкăнĕсенчен çипуçпа унăн пайĕсен ячĕсене, хĕрарăм юсавĕпе çыхăннă терминсене, чир-чĕр номинацийĕсене, турăсемпе ыр-хаярсен номенклатурине т. ыт. те асăнма пулать. Вĕсем пурте е пĕрлĕхлĕ номинаци функцийĕпе, е метафорăлăхпа, ытарлă сăнарлăхпа палăрса тăраççĕ. Анчах словарьте сăмахсен ирĕклĕ çыхăнăвĕсене те курма пулать. Тĕслĕхсем: *апат йантăла* 'стряпать', *укçалла выльа* 'играть в деньги', *апла çеç те мар* 'не только так', *кантăр вăрри тĕслĕ чăхă* 'пестрая курица', *кăвакарçын йăви* 'гнездо для голубей', *икĕ çутă çăлтăр* 'две светлые звезды'. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем çеç пуплев штампĕ е идиома сĕмĕллĕ пĕрлешӳ шутланма пултараççĕ. Кун пек пуплев сегменчĕсене словаре кĕртме хатĕрленĕ чухне автор ытларах вĕсен чĕлхе системинчи вырăнĕпе рангне мар, контекстсăр ăнланма, куçарма йывăррине шута илнĕ пулмалла.

Словарь реестрĕнчи анлă единицăсен пысăк пайĕ — топонимсем, уйрăмах микротопонимсем. Тĕп структура моделĕ кунта — детерминант (определени) тата географи терминĕ е топоним, сăм.: *Кантăр варĕ* 'название оврага', *Тӳтӳ ялĕ* 'название селения', *Кахăрлă Шăхаль* 'название селения', *Мăкшă*

*Етелекĕ* 'название деревни', *Упрăк тăвайкки* 'название урочища', *Киремет тĕми* 'название бугра', *Уличе çырми* 'название ключа', *Улпут вăрманĕ* 'название леса'. Урăх модельсемпе тунă топонимсем хушшинче метонимиллисем тата метафорăллисем чылай: *Кипек лаçĕ* 'название поля', *Кипет çăварĕ* 'название поля', *Опăш çорч(ĕ)* 'название леса', *Улпут-Хресчен* 'название русского селения' т. ыт. те.

Ашмарин хăвăрт, юхăмлă пуплевре кĕскелсе улшăннă формăсене е сăмах майлашăвĕсене те асăрхамасăр хăварман. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем вăхăт иртнĕçем пĕтĕм халăх чĕлхине кĕрсе çирĕпленнĕ, танл.: *улмуççи* < улма йывăççи, *хăмсар* < хăмса яр. Теприсем вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсем е пуплев пулăмĕсем шутланма тивĕç: *ури* < умăмри, *кассер* < касса яр, *ĕçмехлен* < ĕçме хăтлан, *тетен* < те-и тен, *кассĕм* < каяссăм, *кантăри, кантри* < кантăр вăрри, *пушши* < пысăкăшĕ т. ыт. те.

Сăмахран кĕçĕнрех ранглă единицăсенчен словарь реестрне пĕрешкел мар элементсем кĕреççĕ. Чи малтан кунта сăмах тăвакан тата сăмаха улăштаракан аффикссене палăртмалла:

*-па,* аффикс творительного (совместно-орудийного) падежа. *N.* Пуртăпа касаççĕ. Топором рубят. *N.* Эпĕр юлташпа пыратпăр. Мы идем с товарищем. См. п е, п а л а, п е л е; п а л а н, п е л е н.

*-лăх,* афф. имен, частиц и причастий. *Якейк.* Мана ик сахатлăх (на два часа) ячĕç. *N.* Тăлăх ача салтаклăх, тăлăх путек токмаклăх (обречен на добычу волку). *Якейк.* Еп конта ик конлăх килтĕм. *Ib.* Еп сирн пата виç минутлăх кĕтĕм (у др. виç минутлăха кĕтĕм и т. п.).

*-чен (ччен),* аффикс, показывающий: а) что действие происходит раньше другого действия; соответствует русскому предлогу до. *Дик. леб.* 37. Çавăнпа хĕвел аниччен пирĕн часрах типĕ çĕр çине анса ларма ĕлкĕрмелле. б) Предел счета. *N.* Епĕ виçĕ хутчен ташласа илтĕм. *Баран.* 122. Хăш-хăш йывăç пин çулччен пурăнать. в) Предпочтение. *N.* Ахаль лариччен кĕрĕк аркине те пулин йăвала, теççĕ. Чем сидеть без дела, по крайней мере хоть разомни подол шубы.

Çавăн пекех харпăр халлĕ çӳремен сăмах пайĕсем: еверлев тымарĕсем, хутлă сăмах компоненчĕсем, сăмах форми тăвакан препозици элеменчĕсем, аффикс-хыççăмахсемпе татăксем т. ыт. те реестрта кашни хăйне уйрăм вырăн йышăнаççĕ. Хăшпĕр тĕслĕхсем:

*Йала,* неупотр. сл.; встр. в сложении:

*Йала-пала,* шалобольник, легкомысленный человек. *Икково.* Кам кахал çын канторта, йала-пала йамшăкра. (Служит) ямщиком при волостном правлении.

*Йала-пăла,* шатун (-нья), шатуга. *Хорачка.* Е йала-пăла! йал тăрăк выртса çӧретĕн! (киле килмест, шатушник). || Болтун. Йала-пола — сĕре калаçакан çын (т. е. пустоболт).

*Куп,* встр. в превосх. ст.: *куп-кукӑр,* прекривой. *Вотлак.* Пӗр йӑвӑҫ куп-кукӑр. (Пӗкӗ).

*Йах-та,* вставляется после гласного звука для заполнения стиха в песнях. См. й е х. *М. П. Петр.* Турӑ-йах та паман телейе халӗ-йех те ыйтса илес ҫук.

*сайран,* послелог со знач.: каждый, еже. Его разновидности: с а р а н, с а р е н, с е р е н. В литературном языке употребляется разновидность с е р е н, притом всегда слитно: каҫсерен, каймассерен. *С. Айб.* Ах, аттеҫӗм, аннеҫӗм, килмессайран чунӑм савӑнать. *Ib.* Тупӑлха турта, турӑ лаша, туртмассайран турти авӑнать. *Турх.* Ирсайран. *ЧП.* Сехетсайран. *ЧС.* Епир ҫиҫӗм ҫиҫмессайран хӑраса: ей, турӑ, ан пӑрахсам, тесе сӑх-сӑхатпӑр. *Сред. Юм.* Праҫник сайран ҫӗнӗ кӗпе илсен, кӑҫта окҫа ҫитерес ман сирн валли. *N.* Ес ҫын сайран йанӑ писмӑна исен...

Ашмарин словарӗнчи лексика единицисен чӑн-чӑн хисепне шутласа палӑртма ҫӑмӑл мар. Пӗр енчен, куртӑмӑр ӗнтӗ, кунта лексика шайӗнче тӑман реестр единицисем нумай. Тепӗр енчен, автор пӗр сӑмахӑн (е сӑмах пайӗн, сӑмах майлашӑвӗн) хӑй пӗлнӗ мӗнпур варианчӗсене ҫырса кӑтартма кирлӗ тесе шутланӑ, вӗсене, ялан тенӗ пекех, словника уйрӑммӑн кӗртнӗ. Сӑмахран, *шаркку* ’жаркое’ сӑмахӑн ҫакнашкал калаҫу тата диалект варианчӗсене панӑ: *шарик, шарӑкку, шаркай, шарку, шаркуй, шаркох, шарккуй, шаркков, шаркколь, шарккух, шарккох;* кунсӑр пуҫне пӗр статья текстӗнче реестра кӗмесӗр юлнӑ *шарков* вариант пур. *Пиҫиххи* ’пояс’ сӑмах варианчӗсем тата нумайрах: *пилӗкҫи, пиҫӗкки, пиҫики, пиҫикки, пиҫихи, пиҫҫи, пиҫҫикки, пиҫхи, пичикки, пихxи, пуҫаххи, пуҫи, пуҫҫи, пуҫхи, пыҫаххи, пыҫи, пыҫыхи, пыҫҫи, пыҫхи, пилӗк ҫыххи.* А. И. Иванов шутланӑ тӑрӑх, словарьте 40 пин сӑмах пуҫне 6 пин фонетика варианчӗ (тӗрӗссипе кунта морфологи тата графика варианчӗсем те кӗреҫҫӗ — *М. С.),* 10 пин сӑмах майлашӑвӗ пур. Кусем — реестрти единицӑсем, унсӑр пуҫне словарь статйисенче словника кӗртмен материал та чылай.

Лексикографин тӗп правилисенчен пӗри вӑл — ӑнлантару текстӗнче тата иллюстраци тӗслӗхӗсенче словникра ҫук сӑмахсемпе усӑ курма юраманни. Урӑхла каласан, словарь статйинче пӗр-пӗр лексика элеменчӗ тӗл пулать пулсан, ӑна реестра кӑларса ӑнлантармалла. Словарьте вара ку ӗҫе туса ирттермен. Тӗслӗхсем нумай илсе кӑтартма пулать. Ҫапла, *йанкар* статьяра *кӗйтерет* глагол, *папаҫҫӑ* статьяра *мӑнассип* япала ячӗ тӗл пулать. Реестра кӗртмен сӑмахсем «ӑссӑр» такмаксенче, ача-пӑча вӑййисен сӑмахӗсенче, шутларӑшсенче уйрӑмах нумай. *Урӑн-чарӑн* статьяра — *кикӗр, ҫӳ, шарка-шарка* сӑмахсем, *йана тарай* статьяра — *таракас, пыл таккой, йотнай, пох, снавай* (реестрти *снавай* ’становой’ кунпа пӗр кил-

мест пулмалла), *охваттьар, опльосни, ни нушни* (*нушни* уйрăммăн пур, анчах, ытти тĕслĕхсене кура, реестрта *ни нушни* пулмалла, çитменнине *ни* татăк та словаре кĕмесĕр юлнă), *криччи, крич, чĕрсалами, оххини* пур т. ыт. те.

Чăн та ёнтĕ, кусем пурте пекех — е палламалла марах пăснă ют сăмахсем (*пыл таккой, ни нушни* йышши элементсем пуррине шута илсе, ытти сăмахĕсем те вырăс чĕлхинчен кĕнĕ тесе шутлама пулать), е пĕлтерĕшсĕр сасă пĕрлешĕвĕсем. Урăхла каласан, чăваш чĕлхин номинаци фондĕнче вĕсем валли вырăн пулмалла та мар пек. Анчах ытти çавнашкал сăмахсене реестра тăтăшах кĕртнĕ пирки кун пек сикчĕсем словарь системине пăсни пулаççĕ, тесе калама тивет.

Словник йĕркелессипе çыхăннă кăлтăксем словарьте татах пур. Уйрăммăн илсен, тăхăм ячĕсемпе (вырăсла родовые названия) тĕс ячĕсене (видовые названия) лексикографи мелĕсемпе пĕрешкел çыхăнтарса кăтартни çук. Пайăр, конкретлă тĕс ячĕсене ытларах уйрăм статьясенче çырса кăтартнă, анчах ку йĕркене пур чухне те тытса пыман. Çапла, анис сортлă панулми тĕсĕсен ячĕсем *хĕрлĕ анис* тата *шурă анис* реестрта çук, вĕсене *анис* статьяра панă. Кăмпа тĕсĕсен ячĕсене уйрăмшарăн панă, çав вăхăтрах кăмпа пайĕсен ячĕсене — тĕп сăмах статйинче (*кăмпа аври, кăмпа тăрри, кăмпа шлепки*). Нумай объектсен кĕске тата тулли, анлă ячĕсене пĕр статья реестрĕнче кăтартнă: *анăс, анăс курăкĕ* 'девясил'. Теприсене (вăл шутра çав сăмах вариантнех) урăх тĕрлĕ çырса кăтартнă. Акă, *антăс* тата *антăс курăкĕ* 'девясил' — уйрăм статьясенче. Анлă ятсен варианчĕсене те икĕ тĕрлĕ панă. *Кирпичнăй чей* тата *кирпĕч чейĕ* — пĕр статьяра, *йыт çĕмĕрчĕ, йит çĕмĕрчĕ* — тĕрлĕ статьясенче. Сăмахсен варианчĕсене пĕр çĕрте ушкăнласа пĕр статья реестрне кĕртнĕ, тепĕр çĕрте тĕрлĕ статьясенче çырса кăтартнă, сăмахран, *нумай, номай, нуммай* вариантсем пĕр статьяра, *нуçилке, ноçилккă, ноççилкка* вариантсем — тĕрлĕ статьясенче.

Анлă ятсен икĕ компоненчĕ çумĕнче те пĕр пек сăмах майлашăвĕсене реестра кăларса ăнлантарни кĕретех пысăк çитменлĕх — лексикографи ытлашшилĕхĕ пулать. *Арман* сăмах хыççăн унăн пайĕсен номенклатуринче *тип урапа, шалти урапа* пур, вĕсенех *урапа* статья хыççăн та панă. Çавнашкалах арман пайĕсен ячĕсем: *айалти чул, çÿлти чул, чул ухтармалли, чул йĕки, чул варри, чул кашти, чул кăшăлĕ, чул кăшкарĕ, чул лартмалли, чул пуставĕ, чул пĕкки, чул сакки, чул сакки кашти, чул сакки хăми, чул çулĕ, чул танаштармалли машина, чул тÿрлетекен, чул хăпартмалли, чул хăпартмалли винттă, чул хăпартмаллин патакки, чул хăпартса антармалли, чул хăпартса тăхмалли винттă, чул шапи* словарĕн 2-мĕш кăларăмĕнче *арман* статья хыççăн та, 15-мĕш кăларăмра *чул* хыççăн та реестра кĕнĕ. Анлă ята реестрта та, тепĕр статья

текстĕнче те пани çавнашкал ытлашшилĕхех шутланать. *Орапа сикки* статьяра, Вишневскин «Начертанине» асăнса, 'колесо' куçару панă. *Сикĕ* статьяра, Золотницкие асăнса, *орапа сикки* тĕслĕх панă, ăна 'рессоры' тесе куçарнă (сăмах май, Вишневский куçарăвĕ йăнăш пулмалла).

Словникăн тĕп çитменлĕхĕ — совет саманинче пулса иртнĕ улшăнусене, чăваш лексикинчи çĕнĕ сăмахсене, терминологипе фразеологие питĕ сахал кăтартни. Çакна ăнланма йывăр мар: словарь валли материалсем пухса хатĕрлес ĕçе Ашмарин, тĕпрен илсен, революцичченхи тапхăрта туса ирттернĕ. Çĕнĕ сăмахсенчен вăл чи паллăраххисене çеç кĕртме ĕлкĕрнĕ. Сăмахран, кĕскен кăна пулин те, *колхос, коминтерн, комиссар, комиссариат, комунис, комунисăм, конкрес, конститутси, парти, електритсă (електриччăствă)* терминсене çырса кăтартнă. Çав вăхăтрах унта 20—30-мĕш çулсенчех анлă сарăлнă нумай çĕнĕ терминсем: *комсомол, колхозник, ликбез, марксизм, республика, совет, социализм, халăх комиссарĕ* т. ыт. те çук.

Хальхи лексикографи требованийĕсемпе шайласа пăхсан, Ашмарин словарĕнчи реестр единицисен йĕркине те ăнăçлă теме çук. Ашмарин усă курнă хăйне евĕрлĕ алфавит вулакана (вăл урăх йĕркене хăнăхнă пирки) самаях йывăрлăх кӳрет. Кунта малтан уçă саспаллисем: *а, е, ы, и, у (о* саспаллипе пĕрле), *ӳ, ă, ĕ,* унтан хупă саспаллисем: *й, в, к, л, ль* (хытă уçă сасăсем çумĕнчи çемçе *л* палли), *м, н, нь* (хытă уçă сасăсем çумĕнчи çемçе *н* палли), *п, р, с, ç, т, ть* (хытă уçă сасăсем çумĕнчи çемçе *т* палли), *ч, ф, х, ш* пыраççĕ. Алфавит принципĕпе пĕрлех пĕр тĕпрен пулнă сăмахсене, составĕпе тата пĕлтерĕшĕпе çыхăннă единицăсене ушкăнлас принциппа усă курнă. Çавна пула словник тĕл-тĕл питĕ кăткăс та пăтравлă, кирлĕ сăмаха е майлашăва, анлă номинаци единицине шыраса тупма хĕн. Сăмахран, *ака* статья хыççăн çавнашкал реестр единицисем 50, *арман* хыççăн вара 500 яхăн панă. Ку материала малтан пĕрремĕш компонентсен — тĕп сăмах çумĕнчи определенисен алфавит йĕркипе, унтан тĕп сăмах хыççăн тăракан сăмахсен тата вĕсен аффиксĕсен алфавит йĕркипе вырнаçтарнă. Тĕслĕхшĕн *кайăк* 'дикое животное; дикая птица; дичь; дикий' статья çумĕнчи материала мĕнле панине тишкерсе тухар. Тĕп сăмах статйи хыççăн реестрта кайăкăн тĕрлĕрен пайăр тĕсĕсене палăртакан номинаци единицисем пыраççĕ: *усал кайăк* 'зверь', *вĕçен кайăк* 'птица (говорится только о неприрученных птицах)', *вĕçен кайăк-кĕшĕк* 'дикие птицы', *çунатлă кайăк* 'птица', *тискер кайăк* 'дикий зверь', *хура кайăк* 'черный дятел'?; малалла урăх йышши единицăсем: *кайăка çӳре* 'ходить на охоту', *кайăка çӳрекен* 'охотник', *кайăкăç, кайăкĕç* 'охотник'; унтан татах тепĕр йышши — изафет конструкцийĕсем: *кайăк купăсти* 'название растения',

*кайăк кусси (косси)* 'токование', *кайăк кăвакал (кăвакалĕ, кăвакаль)* 'дикая утка'. Малалла каллех сăмах пулу деривачĕсем: *кайăк-кăш, кайăк-кĕш* 'птицы и звери (вообще)', *кайăк-кĕшĕк* 'звери и птицы', *кайăкла* 'дикий; дико', *кайăклан* 'одичать'... Тепĕр 25 статьяран тин ку сăмах йăви пĕтет те ытти сăмахсем алфавит йĕркипе каяççĕ: *кайăм* 'неизвестное слово', *кайăр* 'круглое долото' т. ыт. те. Пĕр йышши тĕслĕхсене ушкăнламанни, алфавит йĕркине тытса пынă чухне сăмахсене тата сăмах майлашăвĕсене пĕр шая хуни хăйне тӳрре кăлармасть.

## 3 §. Словарь статйисен тытăмĕпе содержанийĕ

Н. И. Ашмарин словарĕ чăваш халăх чĕлхин лексикине туллин те пур енлĕн кăтартнипе çеç мар, сăмахсен семантикипе лексика системинчи вырăнне, çавăн пекех пуплеври çыхăну уйрăмлăхĕсемпе грамматика паллисене тата фонетика сăн-сăпатне тĕплĕн çырса панипе уйрăлса тăрать. Чăваш лексикографийĕнче пуçласа (Егоровăн 1935 çулта тухнă словарьне чылай каярах хатĕрленĕ) Ашмарин сăмахсен нумайпĕлтерĕшлĕхне укçа пама кирлине ăнланнă, çак тĕллеве ăнăçлăн пурнăçланă. Чăн та ĕнтĕ, унчченхи словарьсенче те сайрахутра сăмахсен темиçе пĕлтерĕш пуррине палăртнă. Сăмахран, *пуç* лексемăнне Вишневский кĕнекинче икĕ пĕлтерĕш кăтартнă: 'голова (часть тела)', 'глава, начальник'; Никольский хăйĕн чăвашла-вырăсла словарĕнче унăн ултă пĕлтерĕшне панă: 'голова', 'начало', 'начальник', 'главный', 'колос', 'покорность' (юлашки пĕлтерĕшĕ *аслине пуç* 'старшему покорность' идиомăра çеç уçăлать, çавăнпа та ăна ирĕклĕ пĕлтерĕшсен ретне тăратма çук). Егоров словарĕн пĕрремĕш кăларăмĕнче çак пĕлтерĕшсене куратпăр: 'голова', 'штука', 'верх, вершина, маковка', 'начало, исток, верховье (реки)', 'глава, начальник', 'главный, большой' — пурĕ ултă пĕлтерĕш. Анчах статьяри *тыр пуçĕ* 'колос', *турта пуçĕ* 'конец оглобли', *чăлха пуçĕ* носок, *купăста пуçĕ* 'вилок капусты' тĕслĕхсем т. ыт. сăмахăн семантики анлăрах пулни çинчен калаççĕ. Иккĕмĕш кăларăмра пĕлтерĕшсене шултралатса кăтартнă, цифрăсемпе уйăрса, çакăн пек куçарусем панă: 1. 'голова; верх, вершина, маковка' (çӳлерех илсе кăтартнă *тырă пуçĕ* т. ыт. тĕслĕхсем кунтах кĕнĕ); 2. 'глава, начальник; главный, большой'; 3. 'начало, исток, верховье (реки)'.

Ку статья Ашмарин словарĕнче самаях пысăк, пурĕ пилĕк страница йышăнать, калăпăшĕ ытла пысăк пулнă пирки ăна кĕскетсе, пĕрешкел тĕслĕхсенчен хăшне-пĕрне, чи кăтартуллисене кăна хăварса пичетлеме тивет:

*Пуç, поç,* голова. *N.* Чăхă пуç орлă вĕçсе каçса кайсан, лайăх мар, теççĕ. *СТИК.* Пуç сăрăлтатса кайрĕ... *Ib.* Хур пуç-

не кил хуçи çийет, мĕншĕн тесен вăл кил пуçĕ. (Обычай). *N.* Ах, пуçăм (головушка) ыратать. *Кама* 47. Капла пуçа тăратса ларни те йурамасть. *Ib.* 16. Пуçна пулашшĕ йапала!... *Йерк.* 6. Кам илтмен ун çинчен? Кам курсан пуç таймасть?... *Каша.* Хрантсус йавлăк пĕчĕкçĕ, пĕчĕкçĕ те, пуç тулли... *Альш.* Пуçа сĕлтĕпе ухас. Надо голову мыть щелоком... *Тим.* Ерне-кунпа шăматкун — пуç кăлармн тăман кун. *N.* Поç патне тӳрех кайрĕ. *Сред. Юм.* Пуçран çапнă сорăх пик çӳрен çанта ним пĕлмесĕр, çынсĕм мĕн сăмахланине те пĕлместĕн. *Ib.* Пуçа çĕклемесĕр вырать. Жнет до того торопясь, что голову не поднимает... *Ib.* 52. Аташтармасан сирĕн пуçăр, ман хыçăм, тенĕ. *О сохр. здор.* Ун пек тăвасси те хĕнех мар, пуçра пур çын ăна часах тума пултарать... *Якейк.* Пуçа çырнинчен иртимăн (судьбы не избежишь). Пуçа тем çырнă, штан пĕлес. *Шорк.* Поç çавăрннă сорăх пек (гов. о человеке со слабой памятью)... *Орау.* Курăс касма кайиччен çак пурана каскаласа пĕтересчĕ: ытла пуç çинче тăрать (давно уже надо было сделать, дело не терпит). *Ib.* Пуçа килсен пушмак, тит, пултараймасан та пултарăн. Если надо будет, то сможешь. *Йӳç. такăнт.* 35. Ĕç, кум, хам пуç пур чухне! *Сред. Юм.* Пуç умне çитсен, пуçа кăшăл тăхăнать, тет. (Кил-пуç çынни пулсан, пурне те хăй пĕлет вара, тессине калаççĕ). || Глава... *Ала* 63. Сирĕн çийе çак çынна пуç турăмăр. Мы сделали его над вами главою. *N.* Йĕксĕк пуçĕ! (брань). *N.* Хăш çĕрте халăха пĕр çын пуç пулса пăхса тăрать, хăшинче тата халăх хăйне хăй пуç пулса патшалăха тытса тăрать... *Кармалы.* Арçын пуç хĕрарăм пуç мар. || Индивид, личность. *N.* Пĕр пуçпа укçана çта чикет. Пĕр пуçупа укçана çта чикетĕн. *N.* Те пуç (сам человек) кайалла киле тавăрнать, те тавăрăнаймаст, тесе (дума уходящего на чужбину). *N.* Хăйсенĕн пуçĕсене пит асла хураççĕ... *Пазух.* Ан хапсăнăр тĕнчен мулĕсене, çылăх пулĕ çамрăк пуçсене. || Конец. *Орл.* I, 281. Пĕр пуç çăка, тепĕр пуçĕ юман, варинче мăкăр. (Çапуççи). *Альш.* Чӳречĕре уçса йарăр: алшăлли пуçĕ курăнтăр. *Ib.* Сĕтел пуçне, сак çине лартаççĕ вĕсене... *Б. Олг.* Çанта лапка поçне карьăмăр, колач çисе ларатпăр. *В. Ив.* Хăшĕ тата вăрлăх валли кăшăлăн пуçне уйăрса илеççĕ... *Янш.-Норв.* Варĕнче йалтăркка, икĕ пуçĕнче (по сторонам ее) мерчен шăрçасем (на нитке). *Цив.* Тата пĕр çăмарта илсе, ăна пĕр пуçĕнчен хуратаççĕ... *Регули* 1164. Пĕр вăрман поççĕнчен кĕрсе, тепĕр поçне каç полăрах аран тохса. *Ib.* 1165. Пĕр орам поççĕнчен кĕрсе, тепĕр поçĕнчен тохрăм. *Пшкрт.* Йал поçĕнчен йал поçна, от одного конца до другого... *N.* Маншăн пусан, кăçта кайсан та пĕр пуç (один конец). || Боковые стороны (концы) строения. *Ст. Чек.* Кĕлет пуçĕ, лаçă пуçĕ, ăрамра кĕлет пуçĕнче; алăк айĕнче, кĕлет пуçĕнче; сыснапа пĕтернĕ пуçĕсене, йе вырăна урлă май пуçне калаççĕ — в противоположность к ĕ л е т у м ĕ, к ĕ л е т х ы ç ĕ... *Чига-*

*нар.* Вăсем кĕлеткисене пӳрт поçне çакаççĕ. *Ib.* Пӳрт поçĕнче çор çăкăр çакăнса тăрать (Уйăх). || Перед. *Яргуньк.* Епĕ пуçа çуна пуçне чиксе те, малалла пăхман. || Начало. *N.* Çавăнпа вăл çыру пуçне адрĕсне çырас пулать, тет. *Ст. Чек.* Уйăх пуçĕнче (в начале месяца) чӳк тунă. || Вершина, верховье. *Альш.* Çичĕ çырма пуçĕнче çырла нумай, çĕр сахал. *V. S.* Çырманăн çӳлĕ пуçĕнче курăк аван ӳсет. *ТХКА* 39. Тарăн çырма пуçне вăрманта пирĕн сыснасем хăйсене выртма шăтăк чавнă, тет. || Голова (сахара). *Изамб. Т.* Пĕр пуç сахăр. *Ib.* Сирĕн миçе пуç сахăр? || Голова (о скотине). *N.* Çичĕ пин пуç вак выльăх. || Семья пчел. *ТХКА* 65. Вунă пуç хурт усраттăм. Вуннăшĕ те арчаллă вĕллеччĕ. || Колос. *Менча Ч.* Пӳне Атăл хăмăш пек, пуçне чакан пек, çăмарта хĕрли пек тутлăхне парăсăнччĕ. (Моленье). *Хăр. Паль.* 40. Пуç сăхакан ыраш, тата шавласа выртакан шывсем çинчен камăн илтес килмĕ. *Икково.* Орпа поç прахать-и мĕн, çта кайан васкаса; тепĕртак ларсан, орпа поç прахма поçлать. *ЧП.* Пуç пăрахать (урпа). *Ib.* Шур пуç кăлар (пиçен). *Пазух.* Анкартисем хыçне кантăр акрăм, вăхăт мар-ши пуçне татмашкăн. || Головка сапожная. *Чем люди живы. КС.* Атта пуç сыптарас. || Волосы. *N.* Пуçа кастартăм та çăмăлланах туйăнчĕ. || Жизнь. *ЧС.* Есĕ пирĕн сăмахăмара итлемесĕр ху пуçна ху çухатăн. *Байг.* Пуçă каймĕ, тантăш, мулă кайĕ, вăрласа ил савнă хĕрĕсе. *Лашм.* Пирĕн пуçа çини есĕ мар-мĕн... *N.* Епĕ вунă çула пуçăма йарам. *Баран.* 65. Етемсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе çулăмран тухса тарнă. Хăшĕ пуçне хăтарасшăн пулнă, хăшĕ çавăнтах вилĕме кĕре-кĕре ӳкнĕ... *К.-Кушки.* Чун йуратман ачаран пуç хăтарса пулмарĕ. *N.* Çĕмĕрĕлме кай, çунса кайтăр, ман çамрăк пуç çухалчĕ. *Собр.* Ваттисен сăмахне итлемесен, пуçне çухатать, теççĕ. || Благословение. *Хурамал.* || В чувашизмах. *Орау.* Вулани пĕртте пуçа кĕмест (ничего не идет в голову). *Ст. Ганьк.* Ах, аттеçĕм, аннеçĕм! Шухăшла-ха пуç тавра: манран мĕскĕн ачу çук. *N.* Манăн пуçа касса ан çӳретĕр, килте пурăнтăр... *Альш.* Хĕрĕ каланă: есĕ лаша тесе аслаçăна хăй пуçне вĕрентрĕн, тет... *N.* Çамрăк ача çамрăк пуçĕпе ватă çынсене вĕрентет. *Ск. и. пред.* 93. Пуйан хĕрĕ пуçупа мĕншĕн çапла хăтлантăн?... *ГТТ.* Пуçне ниçта кайса чикеймес... *Н. Карм.* Пит пуçа йывăр киле пуçларĕ (на должности). *N.* Чипер сывă пуçпа кайса килĕ вăл. *N.* Чĕр пуçăмпалах çĕр айне кĕрсе выртасчĕ. *N.* Пуçма йатăм ирĕке сарă хĕрсем суйлама... *Емельк.* Есир те ватă, епĕр çамрăк, сире пуççапмасан, пуç пулмаçт. *N.* Тин пирĕн пуç пĕтмели килет. (Из письма). *Изамб. Т.* Мĕн тăвас тен: ӳстерĕ çав, пуç çине ӳксен (если так пришлось, воспитает). *N.* Вĕсен пуç пурăнăçĕнче ĕмĕрлĕх савăнăç пулĕ... *N.* Пĕтĕм пуçĕпе йĕрсе ячĕ. *Ск. и пред.* 61. Çавăнта никам та ирĕклĕ пуçпах Мăншу çынĕнчен анакансем

çук. *Сред. Юм.* Пуçа йытта хывнă та, чирлĕ тесе вырта парать вит, хăйĕн-ха нимĕн те ыратмас...

Ку сăмах семантикипе валентлăхне туллинрех ăнланма уйрăм статьян панă материала та кĕскен илсе кăтартăпăр: *поç айĕ* 'изголовье', *пуç ывăт* 'гордиться', *пуç уххи* 'жидкость для мытья головы', *поç йанахxи* 'виски', *поç йар* 'сводить с ума; губить; присудить', *поç йопи* 'намогильный столб', *пуç йĕппи* 'род ожерелья', *пуç йĕп йĕппи* 'металлическая зацепка, прикрепляющая п у ç й ĕ п к с у р п а н' у', *поç вими* 'мозг', *пуç вувашки* 'задняя часть черепа', *пуç вĕрен* 'передовка (веревка для гнета спереди)', *пуç вĕçĕ* 'головная сторона, изголовье', *пуç кайнă* 'пропащий, погибший (о человеке), осужденный', *пуç куптаики* 'череп', *пуç копчашки* 'верхняя часть черепной коробки', *пуç курăк* 'одуванчик', *пуç кăлар* 'колоситься', *пуç кăшăлĕ, поç кăшăл* 'венок на голову; повязка вокруг головы в виде обруча', *поç мими (мини)* 'головной мозг', *пуç мими витти* 'оболочка мозга', *пуçна пултăр* 'ответ на проклятья и пр.', *пуç пар* 'подчиняться', *пуç пурне* 'большой палец', *пуç пăяв* 'веревка на телеге спереди для гнета', *пуç пăх* 'искать в голове (в волосах)', *пуç пĕтти çĕр* 'место, откуда нет возврата', *пуç сыптар, пуç тутар* 'устроить головку к сапогам', *пуç сыр* 'одеть невесту во время свадебного церемониала в сурбан и проч.', *пуç çавăр* 'околдовать, приворожить, отворожить', *пуç çавăрмăш, поç çавăрмăш* 'головокружитель' *пуç çавăрнан* 'головокружение', 'название рыбы', *пуç çавăрттар* 'заставить околдовать', *пуç çавракан* 'что-то вроде колдуна', *пуç çавраки, пуç çаврашки* 'макушка головы', *пуç çаврăнакан* 'головокружение', *пуç çийешшĕ* 'брань', *пуç çип кантри* назв. части женского головного украшения', *пуç çиппи* 'то же, что п у ç й ĕ п п и'; 1. *пуç тори* 'гребень'; 2. *поç тори* 'назв. божества', *пуç турт* 'не повиноваться', *пуç тутри* 'головной платок', *пуç тӳпи* 'макушка головы, иногда — темя', *пуç тăри (тăрри)* 'макушка головы', *пуç тăрăх* 'с головы', *пуç тĕлĕшшĕн* 'своим умом', *пуç тĕпĕ* 'маковка', *пуç чаплашки* 'задняя часть черепа', *пуç чашки* 'череп', *пуç чик* 'наклонить голову', *пуç тăрлă, пуç чиккĕн* 'вниз головой', *пуç хыв* 'жертвовать жизнью', *пуç хыç* 'назв. украшения', *пуç хула* 'главный город', *пуç хулли* 'прут, за который прицепляется начало основы при тканье', *пуç хорами* 'вязок на согнутых концах полозьев саней', *пуç хуш* завивать вилок (о капусте; у др. п у ç ç а в ă р), *поç хăвар* 'пощадить, не губить', *пуç хăми* 'часть ткацкой принадлежности', *пуç хăпарт* 'поднять голову', *пуç хĕсни* 'головная боль', *пуç шăмми, пуç шăнни* 'череп'.

Хальхи словарьсенче эпир вĕсемпе мĕнле усă курасси çинчен çырнă статьясем курма хăнăхнă. Шел пулин те, Ашмарин хăй çырнă умсăмах алçыру халлĕнех юлнă. 6-мĕш кăларăм пуçламăшĕнче пичетленнĕ «Умсăмах вырăнне» статьяра Аш-

марин пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен, словарь пĕлтерĕшĕпе унти материалсен составĕ çинчен çеç кĕскен каланă тата автор усă курнă фонетика транскрипцийĕн паллисене ăнлантарса панă. Словарь статйисен тытăмĕ çинчен, унăн хăшпĕр лексикографи принципĕсемпе мелĕсем çинчен Н. А. Резоюковăн 17-мĕш кăларăм çумне хушса панă хыççăмахĕнче çеç каласа панă. Çавăнтах йышăннă кĕскетӳсен списокне пичетленĕ. Çапла ĕнтĕ, словарĕн юлашки кĕнеки тухичченех вулакансен нумай ыйтусене харпăр ăнкарăвĕпе татса пама тивнĕ.

Мĕне шута илмелле-ха Ашмарин словарьне вуланă чухне, уйрăмах унпа наука тишкерĕвĕнче усă курас ĕçре? Чи малтанах словарь типне палăртакан уйрăмлăхсене асра тытас пулать. Малтанах Ашмарин ăнлантаруллă словарь çырса хатĕрлесшĕн пулнă, ку вăл кашни сăмах пĕлтерĕшне е пĕлтерĕшĕсене уçса паракан определени, словарь дефиницийĕ çырмаллине пĕлтерет. Анчах каярахпа ку план улшăннă, автор чăваш сăмахĕсен семантикине уçса пама куçару тата кирлĕ чухне, ăнлантару мелĕпе усă курнă. Çапла вара тип тĕлĕшĕнчен ку словарь куçару-ăнлантару словарĕ пулать.

Автор шухăшĕпе, сăмахсен пĕлтерĕш сĕмĕсем контекстра, фразеологи материалĕнче пуринчен лайăхрах палăраççĕ. Çавăнпа та май пур таран ытларах иллюстраци парасси унăн принципла тĕллевĕ пулса тăнă. Чăн та ĕнтĕ, ку тĕлĕшпе тивĕçлĕ виçе чухлавĕ çитеймен. Çĕнĕ пĕлтерĕш хушман пĕр пек тĕслĕхсем вуншарăн илсе кăтартнин усси сахал, çакă статья калăпăшне ытлашши пысăклатса ярать, семантика анализĕн шăнăрне сулчăлатать. Çӳлерех пичетленĕ *пуç* статьяра та çавнашкал пĕрешкел, дублетла фразăсем чылай. Пĕрремĕш пĕлтерĕш ('голова') пайĕнче «Поç патне тӳрех кайрĕ» тĕслĕх пур (ӳсĕрĕлни çинчен). Кĕскетсе пичетленĕ вариантра урăх унашкал тĕслĕх çук, тĕрĕссипе вара оригиналта тата çакăн пек фразăсем панă: «Пуç патне пыра пуçларĕ (ӳсĕрĕле пуçласан калаççĕ)», «Усемпе ĕçсе ман пуçа тата ытларах кайрĕ», «Пуçĕсене пыра пуçларĕ (стали хмелеть), курнать». Çитменнине вĕсене пĕр çĕре пухса мар, ытти йышлă тĕслĕхсем хушшинче сапаланчăк панă. Темиçе информант пĕр япала çинчен каласа панисене, уйрăмах этнографи описанийĕсене туллин çырса кăтартни пирки те çавнах каламалла.

Революциччен тухнă кĕнекесенчен тата халăх сăмахлăхĕнчен суйланă материалта тĕн-тĕшмĕшлĕх йăли-йĕркине, идеологи енчен пирĕншĕн юрăхсăр шухăшсене палăртакан тĕслĕхсем, намăслăх-чыслăх тĕлĕшĕнчен киревсĕр шутланакан сăмахсем сахал мар тĕл пулнă. Словаре кăларас ĕçе Шупашкара куçарнă хыççăн редакци-издательство ушкăнĕ, автор хирĕçленĕ пулсан та, унашкал материала кăларса пăрахнă, пĕрешкел тĕслĕхсенчен нумайăшне катертнĕ.

Малтанхи кăларăмра лексика эквиваленчĕсемпе ăнлантару текстне вырăсла çеç мар, латинла та парса пынă пулнă. Латинла текст (вăл вырăсли умĕн тăнă) чылай чухне вырăсла текстран ăраснарах, хăшпĕр статьясенче вырăсла текста паман та, теприсенче латинла текст çук. Тĕслĕхсене 2-мĕш кăларăмран, арман пайĕсен номенклатуринчен илĕпĕр.

*Лар,* arca lignea, quo farina sese effundit. Ларь, в который сыплется по течке смолотая мука. ‖ *Вута-б.* Также ларь на крупообдирочной конной мельнице. То же слово в *Череп., Ст. Чек.* и др.

*Алламалли лар,* arca cum cribris. *А. Турх.* (К).

*Лария,* i. q. лар. Ларь, куда сыплется мука. *Мочеи.*

Иллюстраци тĕслĕхĕсене малтанхи икĕ кăларăмра пурне те вырăсла куçарнă, виççĕмĕш кăларăмран пуçласа кунта пĕр йĕрке пурри курăнмасть, анчах куçарусен хисепĕ палăрмаллах чакса пырать. Тĕрлĕ кăларăмсенчен илнĕ статьясене танлаштарни çакна лайăх çирĕплетсе парать. Иллюстраци тĕслĕхĕсен хисепĕ чакнă май статьясен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ те пĕчĕкленсе пырать. Словарĕн 1-мĕш кăларăмĕнче кашни статья вăтамран 7—8 йĕрке йышăннă (страницăра 5 статья), сахал статьяра иллюстраци тĕслĕхĕ çук. Хăшпĕр сăмахсене уйăрса панă вырăн этнографи ыйтăвĕпе çырнă тĕпчеве капашать. Сăмахран, *анатри чăвашсем* статья 10 страница (400 йĕрке), *арçури* статья 8 страница (320 йĕрке) йышăнать. Словарĕн 17-мĕш кăларăмĕнчи статьясен вăтам калăпăшĕ вара 3—4 йĕрке (страницăра 10—12 статья), нумай статьясенче куçару эквиваленчĕпе материал адресĕ çеç пур, çирĕплетӳ тĕслĕхĕсемпе ăнлантарусем сахал. Çапла ĕнтĕ ку тĕлĕшпе пĕр принцип, пĕр виçе çинчен калаçмалли çук. Статья пысăкăшĕ нумай чухне материал пурри-çуккинчен килнĕ пулмалла, мĕншĕн тесен Ашмарин хăй хайланă тĕслĕхсем паман. Анатри чăвашсем çинчен вăраммăн каласа панă пулсан, *тури чăвашсем* статья пачах çук, чăвашсен ку этнографипе диалект ушкăнĕ çинчен *вир-йал* сăмахăн пĕчĕк статйинче темиçе тĕслĕх илсе кăтартнă тата *тури* статьяра асăннă. Словарĕн юлашки кĕнекисенчи статьясен тытăмĕпе содержанийĕ мĕнлине 17-мĕш кăларăмран илнĕ çак тĕслĕхсенчен курма пулать:

*Шыв сап,* поливать.

*Шыв сапа,* помои. *Шăна чир сар.* 11. Йе кирлĕ мар шыв сапа тăкакан шăтăк таврашĕнче те пулаççĕ.

*Шыв сехмечĕ,* назв. божества.

*Шыв сысни,* морская свинья (дельфин). *Сред. Юм.* Шыв сысни тесе тинĕсри сысна пик çухракан пулăсене калаççĕ.

*Шыв сикнĕ çĕр,* водопад. *Икково.* Ачасем шыв сикнĕ çĕрте çӳреççĕ. Дети ходят около водопадика.

*Шыв синкерĕ,* назв. божества.

*Шыв сухан,* назв. водяного растения.

*Шыв сăмси,* залив. *Юрк.*

Сăмахсен семантикине укса парас ĕçре Ашмарин тунă пысăк çитĕнӳ — лексика пĕлтерĕшĕсене тата вĕсен сĕмĕсене кашнине уйрăммăн куçарса ăнлантарни тата çирĕплетӳ тĕслĕхĕсене те пĕлтерĕшсем тăрăх ушкăнласа вырнаçтарни. Икĕ пĕлтерĕш хушшинчи чикке палăртма вăл цифрăсемпе мар, икĕ тӳрĕ йĕрпе (||) усă курнă. Тĕслĕхшĕн илнĕ *пуç* статьяра çакнашкал мелпе уйăрнă сыпăксем пурĕ 17; юлашки сыпăкĕнче пĕр-пĕр паллă пĕлтерĕш картине кĕмен идиомăлла сăмах çаврăнăшĕсене вырнаçтарнă. Ашмарин *пуç* сăмахăн семантика калăпăшне туллин тата тĕрĕс сăнласа панине 1982 çулхи «Чăвашла-вырăсла словарьти» тивĕçлĕ статьяпа танлаштарсан лайăх курма пулать. Ку словарьте *пуç* сăмахăн 12 лексика пĕлтерĕшне кăтартнă. Ашмарин уйрăммăн пăхнă хăшпĕр тĕслĕхсене пĕлтерĕш сĕмĕ (уйрăм палăртмалли пĕлтерĕш мар) е идиоматика шутне кĕртнĕ.

Çак икĕ словарьти *пуç* статья тытăмне танлаштарса пăхсан, чылай уйрăмлăх та асăрхама пулать. Хальхи словарьсенче пĕлтерĕшсене вырнаçтармалли тĕп принцип çакнашкал: малтан чи кирлĕ, пуплевре ытларах палăракан тӳрĕ пĕлтерĕшсене, кайран вара, тивĕçлĕ йĕркепе, сахалрах палăракан, куçăмлă, ытарлă е кивелнĕ, ятарлă пĕлтерĕшсене памалла. Ашмарин словарĕнче кăткăс семантикăллă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене пĕр схемăпа е принциппа йĕркелесе вырнаçтарман. Çавăнпа та пĕрешкел сăмахсене çырса кăтартнă чухнех статья çемĕн уйрăмлăх нумай курăнать. Пĕр тематика ушкăнне кĕрекен сăмахсен статйисене пĕр калăппа йĕркелес ăнлану та пулман-ха ун чухне. Пĕлтерĕш картинчи йышлă тĕслĕхсене системăламанни, кунсăр пуçне тата икĕ-виçĕ сăмахран тăракан реестр единицисем тĕп статьяран чылай инçе сапаланса кайни кирлĕ сăмахăн пĕтĕмĕшле семантикипе валентлăх уйрăмлăхĕсене, фразеологи çыхăнăвĕсене курăмлă тума, пĕр çĕрлĕн тишкерсе тухма чăрмантарать. Çӳлерех *пуç* статья хыççăн унпа çыхăннă çавнашакал статьясем 70 яхăн панă. 1982 çулхи словарьте вĕсемпе пуринпе те тенĕ пек *пуç* статьяна çырса хатĕрленĕ чухне усă курнă, кирлĕ сăмах майлашăвĕсене унăн составне кĕртнĕ.

Ашмарин словарĕнче лексика системинчи семантика çыхăнăвĕсене, тĕпрен илсен, омонимипе синонимие тата вариантлăха тăтăшах палăртса пынă. Омонимсене реестр сăмахĕ умĕн араб цифри лартса паллă тунă. Вĕсен черетленĕвĕнче мĕнле те пулин çирĕп йĕрке тупма хĕн. Икĕ сăмахăн фонетика варианчĕсене реестрта ылмаштарса лартни те пулать, танл.: 1. *Тын,* дыня.., 2. *Тын,* свидетель. Тепĕр страницăра: 1. *Тынă,* свидетель, 2. *Тынă,* дыня... *Тан* омонимсен ярăмĕнче йĕрке çакăн пек: паллă ячĕ ('равный') — япала ячĕ ('наледь') —

япала ячĕ ('слава') — паллă мар сăмах (*танлă пиçен* 'назв. растения' майлашура) — еверлев сăмахĕ ('подр. звону колокола и т. д.'). Танлаштарма *шар* омонимсен ретне илер: еверлев сăмахĕ ('подр. воплю и т. д.') — глагол ('темнеть, лишиться способности видеть') — междомети (вырăсла *жарь* глаголран) — наречи ('жарко'), япала ячĕ ('беда, несчастье') — япала ячĕ ('шар').

Синонимие палăртасси словарьте ытларах диалект сăмахĕсен тата пĕтĕм халăх чĕлхи сăмахĕсен пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăвĕсене кăтартнипе пулса пырать. Тĕслĕх илер:

*Кантти,* коньки (у конькобежцев). *Курм.* См. т ă р к ă ч ă, й а р к а й, у р а й а к и, у р а ç у н и.

*Тăркăчă (тăркăç* формăна та уйрăм статьяна кĕртнĕ, çавăнпа ăна та асăнмалла пулнă), *йаркай* статьясенче синоним сăмахсене кăтартни çук, *ура йаки* тата *ура çуни* статьясенче вара *шумалли* синонима пăхма сĕннĕ. Çапла ĕнтĕ синоним речĕ *кантти* статьяринчен туллирех пулмалла. Ку тĕслĕхрен тата ытти чылай тĕслĕхсенчен синоними кăтартăвĕсенче уçăмлă система çуккине асăрхама пулать. Техника мелĕсем тĕлĕшĕнчен те пĕрешкеллĕх çук. Танлаштарар:

*Урапа, орапа...* || Колесо... *Трхбл.* Урапу тухса ӳкнĕ. Колесо у тебя соскочило. Иначе, там же, куса-тăран.

*Урăм-сурăм, орăм-сорăм...* || Для усиления... *Срв.* акăшмакăш.

*Макçăм таки,* назв. насекомого. *Альш.,* у др. (у других чувашей — *М. С.)* кукамай.

Сăмахсен фонетика тата морфологи варианчĕсене ялан тенĕ пекех çавнашкал кăтартусемпех çыхăнтарнă. Тĕслĕхсем:

*Уксус,* уксус. *Альш.* См. у к с ă с.

*Уксăс,* уксус. См. у к с у с, у к к ă с.

Анчах *уккăс* статьяра кун пек кăтарту паман.

Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем тата йышлă вариантсем хушшинче (сăм., çӳлерех *пиçихи, шаркку* сăмахсен варианчĕсене илсе кăтартнине пăхăр) хире-хирĕç кăтартусем палăрмаллах сахалланаççĕ. *Ура пусмалли, ора пусми, ура пусси* терминсен темиçешер пĕлтерĕш, вĕсенчен пĕри 'стремя', анчах ку статьясене пĕр-пĕринпе те, пĕр пĕлтерĕшлĕ *ора посни* вариантпа та çыхăнтарман. *Шаркку* сăмах варианчĕсенчен пĕрин хыççăн çеç çыхăну кăтартăвĕ пур: *шаркуй* 'то же, что шарку'. Ку тĕлĕшпе *пушăт йывăççи* 'лутошка' термин варианчĕсене мĕнле пани уйрăмах кăтартуллă. Тĕп статьяра йышлă диалект варианчĕсен пулăвĕпе географине усса кăтартма тăрăшнă. Ку статья хыççăн пыракан вариантсенче çакăн пек кăтартусем панă: *пушăтчи* 'то же, что пушуччи', *пушйывăççи* 'то же, что пушăт йывăççи', *пушйыççи* 'то же, что пред. сл.', *пушйушчи* (из пушăт+йывăççи+шăччи) 'лутошка', *пушйĕççи* 'лутошка. См. пушăт йывăççи', *пуштӳççи, пуштйӳççи* 'то же,

что пушăт йывăççи', *пушчи* 'то же, что пушуччи', *пушчучи* 'лутошка. См. пушуччи', *пушчичча* 'то же, что пушуччи', *пошчуш* (пошăт тĕшши, т. е. сердцевина лыка) 'лутошка', *пошчуш патак* 'лутошка', *пушчўччи* 'лутошка. См. пушуччи', *пушшеççи* 'то же, что пушăт йывăççи', *пушшыççи* 'лутошка', *пушшиççи* 'лутошка', *пушшиччи* 'лутошка. См. пушуччи'. Паллах, кунашкал кăткăс ушкăнсене пĕр схемăпа йĕркелеме ун чухне литература чĕлхинче çирĕпленсе нормăланнă формăсем пулманни те кансĕрленĕ, анчах кăтартусен ытларахăшĕ *пушуччи* форма тĕп вырăнта тăнине кăтартать. Апла пулсан, вариантсенчен çав формăна пĕрешкел кăтарту пама май килнĕ.

Реестрти сăмахсем хушшинчи е реестрти сăмахпа статьяри тĕслĕхсем хушшинчи çыхăнусене кăтартнисем тĕрĕс пулманни, пĕлтерĕш килĕшсе тăманни тата ытти йăнăшсем словаре, уйрăмах унăн юлашки кăларăмĕсене критикăлла вулама хистеççĕ. Йăнăшсенчен чылайăшне редакторсем хăйсем те асăрханă, тўрлетўсен списокне кашни кăларăм вĕçĕнче парса пынă (4-мĕш, 15-мĕш тата 16-мĕш кăларăмсемсĕр пуçне). Малтанхи кăларăмсем пичетленнĕ хыççăн Ашмарин вĕсене питĕ тимлĕ вуланă, çĕнĕ тĕслĕхсем, çĕнĕ материал пухса пынă, ăна малаллахи кăларăмсенче хушса пынă. Хушнă материал 2-мĕш кăларăмра — 12 страница, 3-мĕшĕнче — 7 страница, 5-мĕшĕнче вара 27 страница йышăнать.

Çўлерех асăннă йышши çитменлĕхсемпе йăнăшсен тĕслĕхĕсене илсе кăтартар. Реестрта *тăра йул* 'остаться ни с чем' статья пур, анчах çак формăллă тĕслĕхсене *тăрса йул* статьяра панă; унтах тăнă-йулнă формăллă тĕслĕх пур, анчах вăл *тăрса йул* модельпе пĕр килмест, унăн пĕрремĕш компоненчĕ сăпатланать; реестра кĕртес пулсан, ăна *тăр йул* формăпа кĕртмелле. Пĕрлелĕх падеж аффиксĕн *-па* вариантне ăнлантарнă хыççăн *пе, пала, пеле, палан, пелен* статьясене пăхма сĕннĕ, анчах реестрта *пелен* çук. *Пăлтăрччан* 'трясогузка' статьяра: «пăлтăрччан вăрăм хўре (=чакчу)» тесе паллă тунă. *Чакчу* статьяра 'неизв. сл.' тенĕ, тĕрĕссипе вăл пăрчкан кайăка пĕлтерекен диалект сăмахĕ иккен. *Пушăт йывăççи* статьяра панă иллюстраци тĕслĕхĕсем пĕри те реестрти формăпа тўр килмеççĕ (*пушăт йывăçĕ, пушăт йăвăççи, пушăт йывçи*), анчах вĕсене реестрта тупма çук. *Кайăк чĕрелĕ* статьяра ку майлашăва 'жестокий, злой' тесе куçарнă, *апла каласмасан, капла çук* статьяра пачах урăх пĕлтерĕш кăтартнă: *кайăк чĕрелĕ çынсем* 'люди с сердцем птиц (т. е. смелые, бесстрашные)'. *Пўрне сыппи* майлашăва 'щиколка' (тĕрĕсрех щиколотка) тесе куçарни те йăнăш: *пўрне сыппи* вырăсла *сустав пальца* пулать, *щиколотка* вара чăвашла — *ура сыппи*. *Навăс* 'навоз' статьяра çакăн пек тĕслĕх панă: «Хăшĕ навăс айне, хăшĕ вите çине ăлăхса выртаççĕ». Анчах кунта *навăс*

вырăсла *навоз* сăмахпа мар, *навес* сăмахпа тӳр килет (чăвашла *аслăк*).

Словарь проектĕнче малтанах палăртман пирки лексика-грамматика ушкăнĕсенчи сăмахсен парадигмине пĕрешкел парса пыман. Тĕп çитменлĕх кунта — лексикализациленĕ формăсемпе идиомăлла сăмах пĕрлешĕвĕсене (вĕсем реестра кĕме тивĕçлĕ) сăмахсен ахаль йышши, ирĕклĕ çыхăнăва кĕрекен, типлă пĕлтерĕше палăртакан грамматика формисенчен уйăрмалли критерисене пăхса хăварманни. Уйрăмах глаголăн нумай йышлă формисене, вĕсен çыхăну валентлăхне тата пĕлтерĕш уйрăмлăхне пĕр пек уçса паманни куçа тӳрех курăнать. Акă, *пăх* 'смотреть' статья хыççăн реестрта çакăн пек формăсем пыраççĕ (сăмах пулăвĕ шайĕнчи дериватсене ку шута кĕртмен): *пăханçи, пăханчи* 'делающий вид, что смотрит', *пăха тăрах* 'на глазах', *пăха тăркачă* 'на глазах', *пăхуçăн, пăхуçĕм* 'когда смотрели, во время осмотра', *пăхăсăн* 'смотришь, а оказывается...', *пăхкала* учащ. ф. от гл. п ă х', *пăхма çук* 'противно смотреть', *пăхнă çĕрте* 'в сравнении с...', *пăхса ил* 'оглядеть', 'высмотреть' тата ку модельпе тунă 4 анлă глагол форми, *пăхтар* 'понуд. ф. от гл. п ă х', *пăхтарттар* 'понуд. ф. от. пред. гл.'. *Тăр* статья хыççăн вара çаксене панă: *тăра йул* 'остаться ни с чем', *тăран* 'то же, что т ă р а к а н, прич. наст. вр. от гл. т ă р', *тăра пар* 'находиться, обнаруживаться', *тăрарахпа* 'погодя, спустя, со временем', *тăра-тăра* 'со временем, погодя', *тăруçăн, тăруçăм* встреч. в чувашизмах', *тăркала* 'учащ. ф. от гл. т ă р', *тăрса йул* 'оставаться' тата ку моделлĕ 4 глагол форми, *тăрсан-тăрсан* 'немного спустя, через некоторое время'. Ытти глаголсен формисене те çавнашкалах — кашнине хăйне майлă панă.

Ытти пуплев пайĕсем пирки çакна асăрхаттарса хăвармалла. Реестра местоименисен хăшпĕр падеж формисене кĕртнĕ, тĕсл.: *ман, мана, манăн* (тата *манăнни, манăнне, манри*) пур, *мансăр, манпа, маншăн* çук; *сан, санăн, саншăн пур, сана, санпа, сансăр* çук (*сансăрăнах* 'без тебя' пур) т. ыт. те. Хисеп ячĕсен формисенчен чылайăшне реестра кĕртнĕ, анчах сăмахсерен кунта та ăрасналăх пурри курăнать. *Виçĕ, пилĕк, ултă* хисепсен реестрти формисене танлаштарар (тӳр килекен форма çуккине скобкăра палăртнă): *виç* 'три (отдельно не ставится). См. виçĕ, виççĕ' — (*пилĕк* статья çук, ку формăна *пиллĕк* статьяра панă) — *улт, олт* 'шесть. См. ултă, олтă; ултă, олттă'; *виçĕ* 'три (употребляется только с определяемым именем)' — *ултă* 'шесть (употр. в сложении)'; *виçĕм, виçĕн* 'третий; употр. только в некотор. выражениях' — (*пилĕкĕм, ултăм* çук); *виççĕмĕр* 'мы трое'—(*пилĕксĕмĕр, ултсăмăр* çук); *виççĕ* 'три. См. 2. виç, виçĕ' — *пиллĕк, пилĕк* (эта форма ставится только в качестве определения) 'пять' — *ulттă, олттă* 'шесть'; *виççĕлĕ, виççĕллĕ* 'тройной' — (*пиллĕклĕ* çук) — *улт-*

*тăлă, ултăллă, олтăллă* 'имеющий или заключающий в себе шесть'; *виççĕмĕш* 'третий' (тата *виççĕмĕшне* 'в третий раз', *виççĕмĕшĕнче* 'в третий раз, на третий раз') — *пиллĕкмĕш, пиллĕккĕмĕш, пилĕкмĕш, пилĕкĕмĕш* 'пятый' — *улттăмăш, улттăмĕш* 'шестой'; *виççĕн* 'трое, втроем' —*пиллĕкĕн, пилĕкĕн* 'впятером, всего пять' — *улттăн, олттăн* '(род. пад. от улттă, олттă)', 'вшестером'; *виççĕш, виççĕшĕ, виçĕш, виçĕшĕ* 'они три; трое или три из них' — *пилĕкĕшĕ* 'пять из (группы)' — *улттăшĕ* 'шесть из них'; *виçшер* 'по три, по три раза' — *пилĕкшер* 'по пяти' — *улттăшар, улттăшер* (?) 'по шести'.

Словаре кĕртнĕ чĕлхе материалĕсене тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ правилăсене пăхăнса çырнă, çавăнпа та вĕсен орфографи форми нумай тĕрлĕ пулнинчен тĕлĕнмелли çук. Ашмарин вара тĕслĕхсене информантсем каланă е çырнă пек хăварма тăрăшнă. Диалект сăмахĕсем, чи малтан тури калаçусен сăмахĕсем литература нормисенчен чылай аякра тăнă пирки вĕсене автор фонетика транскрипцийĕпе çырнă. Транскрипци форми реестрти сăмах хыççăн тăрать, унсăр пуçне хăшпĕр реестр единицисене тата иллюстраци тĕслĕхĕсене те транскрипципе çырса панă. 1933 çулта чăваш орфографине чылай улăштарнă пулин те, словарь пĕрпĕтĕмлĕхне пăсас мар тесе, ун хыççăн тухнă кĕнекесенче кивĕ орфографипе усă курнă. 1950 çулта кăларнă юлашки кĕнекере çеç, çемçе хупă сасăсен типографи паллисем сыхланса юлман пирки, тивĕçлĕ сăмахсенче *ь, я, ю* саспаллисемпе усă курнă.

* * *

Н. И. Ашмарин тата унăн пулăшаканĕсем хатĕрлесе кăларнă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» чăваш халăхĕн чĕлхе пуянлăхне, илемлĕ сăмахлăхне, этнографийĕпе историне тĕпчес ĕçре, çавăн пекех литература чĕлхине пуянлатас, унăн стилĕсене аталантарас ĕçре паян кунччченех пысăк вырăн йышăнать. Хăй вăхăтĕнче ăна Совет Союзĕнчи паллă ученăйсем те, ют çĕршывсенчи тĕпчевçĕсем те пысăк хак панă. Наукăри пысăк пĕлтерĕшне шута илсе, ăна СШАри Индиана университетĕнче фототипи меслечĕпе пичетлесе кăларма пуçару тунă, пурĕ тăватă кăларăмне пичетленĕ.

Анчах Ашмаринăн лексикографи ĕçне-хĕлне, тезаурус словарь уйрăмлăхĕсене хальхи наука шайĕнче тĕплĕн тишкермелли унăн опычĕпе тухăçлăн усă курма чарать. Çав вăхăтрах унăн словарĕнче палăрнă лексикографи проблемисем, татса паман ыйтусем паян кун та чĕлхеçĕсене шухăшлаттараççĕ. Çакна пирĕн лексикографи опытне пĕтĕçтернĕ чи çĕнĕ словарьсемпе — Мускавра 1971 çулта тухнă «Вырăсла-чă-

вашла словарьпе» тата 1982, 1985 çулсенче тухнă «Чăвашла-вырăсла словарьпе» тĕплĕн паллашни лайăх кăтартса парать.

Ку пособире эпир Ашмарин словарĕ хыççăнхи лексикографи ĕçĕсем çинче чарăнса тăмарăмăр. Пĕр енчен, хальхи словарьсен тĕрлĕ жанрĕсене тата лексикографи ĕçĕнчи задачăсемпе çивĕч ыйтусене пăхса тухма сахалтан та тепĕр çакнашкал кĕнеке кирлĕ пулнă пулĕччĕ. Тепĕр енчен, çĕнĕрех словарьсем пурте — студентсен алли айĕнче, вĕсемпе куллен усă курма, занятисенче тишкерме, килте ĕçлеме пулать.

«Чăваш лексикографийĕ» курс программи çумĕнче (вăл 1984 çулта пичетленсе тухнă) литература спискĕ пур, çавăнпа та кунта ăна тепĕр хут кĕртместпĕр, пособире хускатнă ыйтусене сӳтсе явнă май усă курнă кĕнекесене тата статьясене асăннипе çырлахатпăр.

*Хушса панисем*

*Н. И. АШМАРИН*

## КОЕ-ЧТО О СЛОВАРЕ
### (Кĕскен словарь çинчен)

Много лет прошло с тех пор, как я приступил впервые к собиранию необходимого материала для труда по чувашской лексикографии, второй выпуск которого появляется в настоящее время в свет. Внешние обстоятельства по большей части складывались очень неблагоприятно для усидчивой работы, и проходили долгие годы без заметного успеха. Теперь работа по собиранию слов может считаться оконченной, остаются лишь некоторые частности, и если не случится чего-нибудь непредвиденного, издание словаря, вероятно, будет приведено к желанному концу.

Изучение чувашского языка было начато мною очень давно. Еще в детстве я стал изучать этот язык, не имея под руками никаких пособий, без всякого руководства, останавливаясь подолгу на ничтожных трудностях, которые иному могли бы показаться смешными. Это была для меня совершенно новая область, и я терялся в ней, как теряется одинокий путник в трущобах дремучего леса, где нет ни дорог, ни тропинок, и где ни один шаг вперед не дается без огромных усилий и томительного напряженного труда. Лишь впоследствии я узнал о том, что сравнительно новая область тюркологии уже насчитывает на своем поприще несколько небезызвестных имен, и лишь только тогда, знакомясь с их произведениями, я мог уяснить себе многое в области чувашского языка, что до тех пор рисовалось мне лишь в очень туманных и неопределенных чертах.

Составляя особую ветвь турецкого языка, по мнению г. Мункачи — остаток ныне исчезнувшей западной группы турецких наречий, чувашский язык оставался очень долгое время совершенно темною областью для науки: почти никто у нас не изучал этого языка, и в то время, как отдаленные турецкие наречия Сибири уже были до известной степени исследованы со стороны грамматической и лексической, чувашский язык, территория которого начинается не дальше, как на расстоянии двух дней пути от «сердца России», все еще ждал своих исследователей. Правда, европейские ученые уже имели в своем распоряжении грамматику Буденца, составленную им на мадьярском языке по материалам Регули (сочинение, с которым мне пришлось ознакомиться очень поздно, лишь после того, как я написал свой «Опыт исследования чувашского синтаксиса»), а в нашей отечественной литературе уже имелись грамматика Вишневского и известный словарь Н. И. Золотницкого, но так как во всех этих сочине-

ниях была принята весьма ошибочная и совершенно непоследовательная система изображения чувашских звуков, то значение этих сочинений могло быть лишь весьма условным. Что касается словаря Н. И. Золотницкого, то последний пользовался весьма долгое время большим авторитетом в глазах многих наших этнографов, но для всех были скрыты ничтожные познания его составителя (хотя и нельзя отрицать некоторых заслуг его по сравнению чувашского звукостроя с звукостроем других родственных наречий, в чем он однако уже имел себе предшественника в лице Шотта), и никто даже и не подозревал, насколько был скуден его словарь и насколько было мало научно почти все то, что он написал. За немногим исключением весь лексический материал, внесенный им в свой труд, уже был известен раньше из глоссария, приложенного к названной выше грамматике Вишневского, и Золотницкий лишь переписал его оттуда, почти в том же виде, отнесшись к этому материалу без надлежащей критической оценки.

Лишь сравнительно недавно возродился вновь интерес к чувашскому языку на Западе, у мадьяр, но интерес весьма односторонний: брали отдельные слова чувашского языка с целью сравнения их с другими языками турецкого или угрофинского корня, самый же язык, это великое целое, вековое создание творческой мысли народа не привлекал к себе ученых работников и оставался совершенно в тени. Лицами, не знавшими языка народа, предлагались различные гипотезы о происхождении чувашей (Риттих), указывали на важность изучения чуваш как народа, испокон веков живущего в Поволжье (Куник), но никто не хотел приступить к ближайшему, более подробному изучению их языка. Лишь в самое последнее время был издан чувашский словарь г. Паасоненом, первая — и очень хорошая — работа по чувашскому языку на Западе, и вышло в свет довольно обширное сочинение г. Месароша, заключающее в себе много религиозных и частью обрядовых текстов, записанных с соблюдением точного произношения.

Мысль написать по возможности полный чувашский словарь возникла у меня впервые еще в 1986 г., и в этом же году я приступил к собиранию необходимого для него материала, на первых порах — из рукописных источников. Первыми моими шагами в этой работе была запись в азбучном порядке всех тех чувашских слов, которые я знал или которые приходили мне на память, — работа, имевшая очень мало значения, так как впоследствии оказалась почти излишней. В этом же году мне удалось достать для прочтения несколько томов рукописей, заключавших в себе чувашские песни, сказки и другие произведения народного творчества на чувашском языке. Я тщательно прочитал их, выписывая на отдельные листки все новые для меня слова и обороты и вообще все то, что могло быть полезным для составления словаря. Эти сборники дали мне очень многое для изучения языка. По-видимому, в них были собраны лучшие произведения народной словесности, из которых многие, записанные сравнительно очень давно, лет тридцать тому назад (я говорю давно, имея в виду тот огромный переворот, который совершился в чувашских массах за последние четыре десятка лет), из которых многие, может быть, уже исчезли из народной памяти. Читая эти сборники, я выписал не отдельные слова, а целые отрывки, так, чтобы выписки имели целостный характер и способствовали уяснению значения и употребления того или другого слова. В особенности это было важно при словах песенных или старинных, так как некоторые тексты иногда оказывались уникамн, и я уже не находил никогда более ни одного примера на данное слово. Загадки и пословицы, если они были интересны в том или ином отношении, выписывались целиком, описания обрядов, по большей части, — тоже, хотя, к сожалению, и не всегда; я старался уяснить себе каждое слово в языке и вникнуть в сущность каждого обряда или верования. Как драгоценные реликвии, собирал я все оригинальные мысли народа, иногда скрывавшие в себе глубочайший

смысл. Это я делал всегда, как читая рукописи, так и наблюдая за живым языком чуваш.

За этими рукописными сборниками последовало много других, которые были доставлены мне разными лицами из разных концов чувашского края. Содержание их касалось различных сторон народного быта, религиозных верований и народного творчества; они были внимательно прочитаны мною вместе с множеством религиозных и, частью, светских сочинений, напечатанных в разное время на чувашском языке.

Ко всему этому я прибавил и свои собственные записи, сделанные мною в некоторых частях чувашского края (к сожалению — немногих), которые мне удалось посетить во время моих весьма немногочисленных и очень кратковременных поездок, а также материал, записанный со слов молодых чуваш, живших в Казани, и те особые объяснения по разным предметам, которые я получал письменно от грамотных и образованных чуваш. Благодаря этой продолжительной, многолетней работе у меня накопился громадный запас слов, выписанных мною на отдельных листках, и распределенных в азбучном порядке.

Не буду много говорить о том, какого труда и скольких расспросов стоило мне определение подлинного значения многих чувашских слов; как трудно найти людей, хорошо знающих свой язык, и как мало лиц, близко знающих быт, верования и предания своей родины. Скажу без преувеличения, что иногда десятки лиц бывали опрошены мною по поводу одного лишь чувашского слова. Слова, оказавшиеся в рукописях, нуждались в проверке: надо было определить их верное начертание и самое произношение, требовалось установить, не составляет ли тот или иной оборот варваризма или просто неумелого выражения, — и это при невероятном обилии чувашских говоров, сильно разнящихся между собою произношением, морфологией и даже синтаксическим строем, а в особенности лексическим запасом. Некоторые слова так и остались невыясненными: слова загадок, забытые слова в песнях и т. п. Все это было занесено в словарь, хотя нередко и без достаточного объяснения, если эти загадочные слова были взяты из рукописей, а не из живой речи, или если сами чуваши не понимали и не могли истолковать их значения.

К сожалению, разные обстоятельства, между прочим и самое обилие материала, а также и неимение под руками соответствующих литературных пособий помешали мне обратить должное внимание на сравнение чувашского языка с другими языками турецкого и угрофинского корня, а также с языками иного происхождения, но смежными по территории с языком чуваш. Эта сторона изучения языка представит в будущем обширное и интересное поле для других работников в области тюркологии и финнологии, хотя надо сознаться, что в настоящее время мы пока располагаем очень немногими пособиями для подобного рода разысканий, так как у нес нет до сих пор полных словарей языков восточной части Европейской России. Так, например, весьма мало изучены в лексическом отношении наречия казанских татар и мишарей, также оба наречия черемисского языка, по которому, кроме словаря Рамстедта, изучавшего лишь диалект одного селения горных черемис, и словаря Силаши, имевшего под руками только печатные источники, других трудов пока не появлялось. Между тем этот язык, так широко черпавший в чувашском словаре, сохраняет в себе до сих пор некоторые чувашские речения, которые у самих чуваш, повидимому, уже исчезли из разговорноого обихода. В этом же языке мы нападаем на следы древнейшего чувашского звукостроя, на которые я уже имел случай указать раньше.

Так как до сих пор чувашская лексикография насчитывает лишь весьма немного трудов, то, конечно, ожидать от моего словаря многого нет достаточных оснований. Основательной работе в этой области должно предшествовать детальное изучение отдельных чувашских говоров, которому до сих пор не положено даже и начала. Мы даже не знаем опреде-

ленно, сколько надо считать чувашских наречий: остается или удержать старое деление на *вире-йал (вир-йал)* и *анатри* или пока принять другое, по которому чувашский язык распадается на три главнейших ветви, из которых *анатри* составляет как бы переходную ступень от *вир-йал* к *хирти?* Последнее деление имеет за собою достаточные основания, так как, помимо других этнографических признаков, чуваши *хирти,* по особым свойствам их наречия, действительно могут быть выделены в отдельно стоящую группу...

(Алçырăвĕн малалли пайĕнче чăваш диалекчĕсен фонетика уйрăмлăхĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă, словарьте усă курнă фонетика транскрипцийĕн паллисене ăнлантарнă).

*Н. И. АШМАРИН.*

## ЧĂВАШ СЛОВАРЬНЕ ПУХСА ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПРОГРАММА

1. Халăхсен ячĕсем, вĕсем пулса кайни çинчен калакан легендăсем. Чĕлхе пулса кайни, нумайчĕлхелĕх сăлтавĕсем.

2. Чăваш халăхĕн ячĕ ăçтан пулса кайнă?

3. Чăваш чĕлхинче çак ятсем евĕрлĕ сăмахсем çук-и: *угур, ухур, уйгур, унгар, мадьяр, хазар, бешенĕ, печенег, булгар, куман, орк, берендей, шаркан, босоркань, сэгень, бигер, алмас, анбал?*

4. Чăвашсен çак сăмахĕсем мĕне пĕлтереççĕ: *Вулăра выртан ырăсем, Кăвак асман, Хай пӳ(е)рен, Хай çырми, Чар пӳрен, Кепе, кирелли(ĕ), мамале (мемеле, мамаля), Киви çĕрĕ, Пӳртен, шатăн, Юхма, карман, хăрхăн, ăрăс, Искемар, Атам (турă), тала (турă тала), ахах, ĕнчĕ, мерчен, кăкар* (яп. ячĕ), *тӳрккес, шăрт* (чӳк-кĕлĕ вырăнĕ), *палкă?*

5. Чăвашсем ăçта та пулин 'свидетель' пĕлтерĕшлĕ *кӳнтелен* тата *тынă* сăмахсемпе усă кураççĕ-и?

6. Юханшывсен, кӳлĕсен, сăртсен, вăрмансен, вар-çырмасен, уйсен тата ытти вырăнсен чăвашла ячĕсем; вĕсем ăçта вырнаçнă, мĕнле легендăсемпе çыхăннă.

7. Чăвашсем урăх çĕртен куçса килни çинчен мĕнле те пулин преданисем çук-и? Вăл преданисенче мĕн каланă? Çавнашкал халап-юрăсенче Крыма асăнни çук-и (мĕншĕн тесен унта чăвашла вырăн ячĕсем пур)?

8. Хуласен, ялсен, касăсен, выççăлкăсен, урамсен т. ыт. чăвашла тата вырăсла ячĕсем. Ялсем çинчен, вĕсем пуçланса кайни çинчен калакан преданисем.

9. Хусан кĕпĕрнинчи Спасск уесĕнче (хальхи Тутар АССРĕнчи Куйбышев районĕ) чăвашсем *Булгары* (вăлах Успенское) ялне мĕнле калаççĕ? Чăвашсен ун çинчен преданисем е юрăсем çук-и?

10. *Пӳлер* тени чăвашла мĕне пĕлтерет? Чăвашсем мĕнле яла çапла калаççĕ?

11. Пасарсен, ярмăрккасен, халăх уяв тăвакан вырăнсен ячĕсем. Çавнашкал вырăнсене пухăнасси епле пуçланса кайни çинчен калакан преданисем çук-и?

12. Çын ячĕсем, хушаматсем, хушăм ятсем, тăрăхлавлă ятсем; ятсемпе çыхăннă тăрăхлавлă юрă-такмаксем, каларăшсем. Май пулсан, ятсен тупсăмне ăнлантарса памалла.

13. Çепĕçлĕх, ачашлу ячĕсем.

14. Чăвашсен тĕнĕ, вăл пулса кайнине чăвашсем епле ăнлантараççĕ? *Мочаур* тени мĕне пĕлтерет (ĕлĕк-авал чӳк пуçне çапла каланă имĕш). Ку форми пăсăкскер, ăна тĕрĕсрех мĕнле каламалла?

15. Тĕнче пуçланса кайни çинчен калакан преданисем. Тĕнчене шыв илни çинчен калаççĕ-и? Чăваш туррисен ячĕсем, вĕсен пĕлтерĕшĕ. Юмахри паттăрсемпе ытти сăнарсем. *Вупăр, арçури, вутăш, вĕре çĕлен (вĕри çĕлен), шыври, хĕртсурт, эсрелĕ, пирĕшти, вупкăн* т. ыт. çинчен çӳрекен халапсем. Турăсемпе киреметсем çинчен çӳрекен легендăсем. Киреметсен ячĕсем. Ырăсем, вĕсен вырăнĕсем. Ку ятсене мĕнле ăнлантараççĕ?

16. Христиан çветтуйĕсем çинчен çӳрекен тĕшмĕшле легендăсем. Чиркӳсемпе, вĕсенчи япаласемпе, турăшсемпе çыхăннă тĕшмĕшлĕхсем.

17. Халăхра Иисус Христос, турамăш, апостолсем ҫинчен ҫӳрекен халапсем. Чăвашсем хушшинче мусульмансенчен илнĕ тĕн легендисем ҫук-и?

18. Тĕне кĕмен чăвашсен уявĕсемпе паллă кунĕсем. Кĕлĕ-чӳк йĕркисем.

19. Юмҫă, вĕрӳҫĕ, чĕлхеҫĕ, асамҫă, ăрăмҫă, тухатмăш, пăсăмҫă; вĕсен пĕлтерĕшĕ тата вĕсем ҫинчен ҫӳрекен халапсем.

20. Чăвашсен ҫĕрĕҫпе тата пурнăҫри тĕрлĕ событисемпе ҫыхăннă мешехисем (обрядсем). Ача ҫуралнипе, ҫын вилнипе ҫыхăннă йăла-йĕрке. Авалхи йĕркепе ят мĕнле хунă? Ваттисене асăнни, виле пытарни. Тĕне кĕмен чăвашсен туй тата уйрăлу йĕрки.

21. Уявсем. Улаҫ. Ĕҫкĕ. Юрă-кĕвĕ, музыка инструменчĕсем. Вĕсен пайĕсене тĕплĕн каласа тухмалла. Юрă-кĕвĕ пуҫланса кайни, кĕвĕҫĕсем ҫинчен, вĕсен асамлă вăйĕ ҫинчен ҫӳрекен халапсем. Купăсҫă-кĕслеҫĕсем усă куракан ятарлă сăмахсем.

22. Чир-чĕрсем, вĕсен ячĕсем, сиплемелли мелсем. Чăвашсем чир-чĕр тухни ҫинчен мĕн шутлаççĕ? Вĕрӳ-суру чĕлхи. Эпи карчăксем, вĕсен мешехисемпе терминологийĕ.

23. Ача-пăча вăййисем, теттисем, вĕсен ячĕсем — тĕплĕн ҫырса кăтартмалла.

24. Юмахсемпе преданисем.

25. Сутмалли юмахсем, каларăшсем, ваттисен сăмахĕсем. Шӳтсем. Сананисем (приметăсем).

26. Тĕн сăвви-юррисем. Ыйткалакансем калакан кĕвĕсем.

27. Юрăсем. Такмаксем.

28. Ятлаҫу, ылхану сăмахĕ-пуплевĕсем. Тупа туса калакан формулăсем тата тупа тумалли йĕркесем.

29. Тăванлăх ячĕсем.

30. Тумтирсен, хĕрарăм ҫипуҫĕн, тĕрĕ-ӳкерчĕксен тата ыттисен ячĕсем. Тĕрĕ тĕрлес ĕҫре усă куракан терминсем.

31. Апат-ҫимĕҫ, ĕҫмесем. Вĕсене хатĕрлемелли мелсем. Ĕҫме-ҫимепе ҫыхăннă тĕшмĕшлĕхсем.

32. Вăрманти, уйри, йывăҫ-курăк, пахча ҫимĕҫĕсем, тырă-пулă ячĕсем; вĕсемпе халăх медицининче усă курни. Ӳсентăрансенче асамлă вăй пурри ҫинчен халапсем ҫӳремеççĕ-и?

33. Кăмпа ячĕсем.

34. Килти тата ирĕкри кайăксен ячĕсем, вĕсемпе ҫыхăннă халапсемпе тĕшмĕшлĕхсем.

35. Килти выльăхсен тата ирĕкри чĕрчунсен ячĕсем, вĕсем ҫинчен калакан легендăсем.

36. Пулăсемпе пулăҫ хатĕрĕсен ячĕсем. Пулăсемпе ҫыхăннă халапсемпе тĕшмĕшлĕхсем.

37. Ҫĕлен-калта, хурткăпшанкă ячĕсем, вĕсемпе ҫыхăннă ĕненӳсемпе легендăсем.

38. Пӳрт-ҫурт тавраш. Килти хатĕр-хĕтĕр.

39. Килхушши, унăн пайĕсем; хуралтăсем ҫинчен тĕплĕн ҫырса кăтартмалла.

40. Ут тавраш, урапа-ҫуна. Вĕсен пайĕсене тĕплĕн ҫырса кăтартмалла.

41. Арман, унăн тĕрлĕ пайĕсен ячĕсем. Кĕрпе арманĕ. Армансемпе тата мельниксемпе ҫыхăннă тĕшмĕшлĕхсем. Мельниксем хăйсен ĕҫĕнче мĕнле ятарлă сăмахсемпе, ҫаврăнăшсемпе усă кураççĕ?

42. Алăсталăхсен ячĕсем; вĕсем ҫинчен каласа пани.

43. Ҫуна тупанĕсем, урапа тукунĕсем туни, ҫав ĕҫре усă куракан хатĕрсем. Пичке хăми хатĕрлени, унпа ҫыхăннă терминсем.

44. Пушăт сӳни, курăс-мучала туни, чăпта ҫапни. Ҫак ĕҫсемпе ҫыхăннă ятарлă терминологи.

45. Йĕтĕн, кантăр, вĕсене ĕҫлени. Терминологине тĕплĕн кăтартмалла.

46. Ҫăм тапни, унăн тулли терминологийĕ.

47. Ҫип арлани, пир тĕртни. Кĕнчелеççи, пир станĕ; пайĕсен ячĕсем, вĕсем мĕн тума кирлĕ. Тĕрлĕ йышши пир-авăр тĕртсе туни, ку ĕҫпе ҫыхăннă терминсем.

48. Тала пусни, ку ĕç терминологийĕ.
49. Çĕвĕ ĕçĕ, унăн хатĕрĕ-хĕтĕрĕ, терминологийĕ.
50. Çăпата туни.
51. Платник ĕçĕ; ĕç хатĕрĕсене тата платниксен ятарлă сăмахĕсене тĕплĕн çырса кăтартмалла.
52. Тимĕрçĕ ĕçĕ, унпа çыхăннă сăмахсемпе çаврăнăшсем. Тимĕрçĕсем çинчен, вĕсен ĕçĕ çинчен çӳрекен халапсем.
53. Сунар ĕçĕ. Ҫайăк тытмалли мелсем. Сунар хатĕрĕсем, сунарçăсен чĕлхинчи хайне евĕрлĕ сăмахсем.
54. Хĕçпăшал. Ухă тата ухă йĕппи ячĕсем. Мĕн вăл *укçу?* Мĕн вăл *ухă* тата *çĕмĕрен?* Пăшалăн тĕрлĕ пайĕсене мĕнле калаççĕ? Чăвашсен пăшалпа çыхăннă халапсемпе тĕшмĕшлĕхсем çук-и?
55. Уй-хир ĕçĕсем, унта кирлĕ хатĕрсем — пурин çинчен те тĕплĕн калас памалла. Çĕрĕçĕпе çыхăннă тĕшмĕшлĕхсем тата сăнанисем. Ку ĕç терминĕсем.
56. Уй-пусă пайĕсен ячĕсем. Çĕр лаптăкĕн виçисем (тĕслĕхрен хăшпĕр çĕрте чăвашсем ăна утăмпа, авăнлăхпа, çурпилĕкпе виçеççĕ).
57. Вăрăмăш, йывăрăш, шĕвĕ тата сапăнакан япала виçисем. Вăхăт виçисем. Укçа шучĕ. Чăвашсен *пус* 'копейка' сăмахĕ ăçтан тухнă? Унăн тата урăх пĕлтерĕш çук-и?
58. Тӳпери çăлтăрсен, вĕсен ушкăнĕсен ячĕсем. Вĕсемпе çыхăннă халапюмахсем.
59. Атмосфера пулăмĕсен ячĕсем, вĕсемпе çыхăннă легендăсем, сăнанисем.
60. Çĕр, шыв, вут тата сывлăш çинчен çӳрекен легендăсем. Вутпа шыв кĕрешни çинчен çӳрекен халапсем.
61. Çут тĕнче енĕсен ячĕсем.
62. Металсемпе минералсен ячĕсем.
63. Чăвашсен çырулăх пулнă-и? Вĕсен çырăва, саспаллисене палăртмалли авалхи сăмахсем пулман-и (*çыру* сăмахсăр пуçне)?
64. Тутарсемпе кӳршĕллĕ пурăнакан чăвашсем тутар ачисем куçăхсаран-пăсăласран çыхса çӳрекен *бӧтӧй* ятлă амулетсене (кĕлĕ сăмахĕсем çырнă хут таткисене) мĕнле калаççĕ?


М. И. СКВОРЦОВ

ЧУВАШСКАЯ ЛЕКСИКОГРАФИЯ

Учебное пособие

Редактор *М. М. Федорова*

Тематический план 1985 г. поз. 835.

---

Сдано в набор 25.06.85. Подписано в печать 27.05.85. Формат 60×90/16. Бумага газетная. Высокая печать. Литературная гарнитура. Усл. п. л. 5. Уч. изд. л. 5. Тираж 500 экз. Заказ № 951. Цена 25 коп.

---

Редакционно-издательский отдел
Чувашского государственного университета им. И. Н. Ульянова.
Типография Чувашского государственного университета им. И. Н. Ульянова.
г. Чебоксары, Московский пр., 15.

25 пус